ХУММА ҪЕМЕНӖ

# АҪА ҪУХНЕХИ

ПОВӖҪ



ҪӐВАШ КӖНЕКИ УЙРӐМӖ
Шупашкар × 1931

19-мӗш стр. 21-мӗш йӗрте „Ҫӗрте итлесе выртакан вуник ҫулхи аҕа...“ тенине „...8 ҫулхи аҕа...“ тесе вуламалла.

ХУММА ÇЕМЕНĔ

# АЂА ЂУХНЕХИ

ПОВĔÇ

ЂĂВАШ КĔНЕКИ УЙРĂМĔ
Шупашкар — 1931

Отпечатано в тип. № 1
Ч у в а ш г и з а
Чувашлит № 763
Заказ № 2073
Тираж 5.000 экз. $3^1/_2$ п.

# ÇУРАЛНИ.

(*Пролок вырăнне*)

Вăрман, темшĕн, вăл ирхине иртнĕ кунсенхинђен кĕретех лайăх та илемлĕн курăнса ларнă. Йăвăç çулçисем, пурте пĕр тăрукках çав ир кăна çурăлса тухса, çав ирех калама çук пит хитрен сарăлса çитмешкĕн ĕлкĕрнĕ пек пулнă. Пурте вĕсем, çăкайуман тăррисенђен вăрттăн йăпшăнса пăхакан ирхи хĕвел çуттипе, йăлтăрка йешĕл-симĕсĕн çутăлса тăнă. Хайсем йепле савăннине пĕтĕм таврана пĕлтересшĕн пулса, çулçăсем уçă-ăшă çилпе шăппăн пăшăлтатнă. Уçă-ăшă çилĕ вара, йăвăç хушшисемпе çул çӳреме кайнă та, сĕткен кăларса ларакан тункатасем урлă, тата тĕслĕрен ђĕрĕ туратсем виттĕр таçти уçланка та çитсе çапăннă. Уçланкăсенђе çамрăк тĕмĕсемпе вĕтĕ хунавсем виттĕр çĕрелле, ђеђексемпе йешĕл курăк хушшине аннă та, çулçăсем мĕн калама хушнине пурне те кала-кала кăтартнă.

Çил каланă, тет:

— Ей, есĕр те, хитре ђеђексем, ђасрах савăнма тытăнăр! Есĕр те тата, йешĕл-симĕс курăксем, ирхи сывлăм шывĕпе шыва кĕрсе ђасрах çутăлса ларăр, тенĕ.

Çил сăмаххисене пĕтĕм вăрман тинкерсе итлет.

Пур çĕрте те, пур уçланкăсенҫе те ҫеҫексем кăвак, сарă кĕписене сарăлтарса йараççĕ те, хăйсем капăррипе, хăйсем илемлипе ыттисем умĕнҫе мухтанма тытăнаççĕ.

— Тăхтăрха пăртак мухтанмашкăн! Малтан пирĕн çинелле çаврăнса пăхăр! теççĕ те йешĕл-симĕс курăксем, çавăнтах акă хăйсен йăлтăр та йалтăр, ахаљ пĕрҫиллĕ, çап çутă кĕмĕл шăрçаллă пĕркенҫĕкĕсене пĕтĕм уçланкипех, пĕтĕм вăрманĕпех сарса хураççĕ.

— Кук-кук!.. Кук-кук! тет те куккукĕ, никамран та хăраман паттăр пек, хулăм уçă сассипеле пĕтĕм шăп ларакан ирхи вăрмана çӳçентерсе илет.

— Ахăр, пирĕн куккук пиҫҫе çурхи илемпе пĕр хăй анҫах савăнасшăн курăнаť, теççĕ хитре ҫеҫексемпе йешĕл-çутă курăксем.

— Ей, куккук тус! Сассуна ытлах ан хулăмлат. Есĕ анҫах мар, епĕр те савăнатпăр, теççĕ те вĕт кайăксем, вăрманĕпех йурлама тапратаççĕ.

Кайăксемпе пĕрле вăрман хăй те çурхи йурра ĕнертсе йараť.

Ылтăн куçлă хĕвелĕ, вăрман тăрнелле ҫылай хăпарса çитсен, тăрук вăрман ăшне пăхса илет те, суттисем унăн йăвăç хушшисемпе ташлама пуçлаççĕ...

Çак илемлĕ çурхи вăхăт сехетĕнҫе, çак епĕ асăннă вăрманваррипе, нимĕç вăрçи тухиҫҫен пĕр çирĕм çул малтан, пĕр çамрăк ҫăваш арăмĕ утса пынă. Хăй вăл, йут йалти тăван-пĕлĕшĕсем патне çимĕке кайма тухнăскер, лайăхрах та капăр-

тарах тумланнă. Кĕпи унăн—хĕрлĕпе хурарах кăвак çипрен килте тĕртсе тунăскер. Шупăрĕ—каҕҕа тухнă ҕухне тĕксĕмрех, йăрăм-йăрăмлă кăвак пасар пирĕнҕен çĕлетнĕскер. Пиçиххийĕ вăрăм, сарлака, кĕрен тĕслĕ. Сурпанĕпе пуç тутрийĕ те вĕрçĕн, пит илемлĕ тĕрĕллĕскерсем... Утаӑ-утаӑ çак арăм, анҕах, темшĕн, хăй утти ăна пĕртте малалла ӳсĕнсе пынăн туйăнмасӑ. Вăрмантан тухасси нумай та йулман ĕнтĕ. Çамрăк арăма сасартăк пилĕкĕнҕен темĕскер хыттăн тире-тире кайнă пек пулаӑ. Хăй те вара сасартăках хăраса ӳкет.

— Ах, мĕншĕн тухрăм пĕрех хут. Тем, патне çитетĕп пулĕ, тет те, çавăнтах хăйне ашшĕ йепле ирĕксĕр каҕҕа панине, малтанхи çулах упăшкипе харкашма тытăннине, малтанхи аҕине, Наçтукне, йепле хĕн-асаплă çуратнине, тата ыттисене те... ыттисене те аса илет вăл.

Тепĕр уçланкă урлă çеç каçмалла. Вара уйа тухнăпа пĕрех. Анҕах çак арăм-аран ута пуçлаӑ. Пилĕкне унне хытăран та хытă касма тапратаӑ. Утнă ҕух пĕшкĕнтерсех антараӑ. Тӳсейменнипе, пилĕкĕнҕи кĕрен çăм пиçиххине те салтса йараӑ. Тарăхнипе, ытларах та тата—тем, ҕун питĕ хурланса килнипеле, макăрса йарасси патнех çитет. Упăшкине те вăл, кутăн та усалскерне, вăрçтарма та çилентерме çеç йуратаканскерне, хăй ăшĕнҕе вăрçса-йатлаçса илет.

— Ей, мур арçынĕсем! Ним те пĕлмеççĕ вĕсем... Пирĕнех, хĕрарăмсеннех ҕăтмалла. Мĕншĕн етеммине те пĕрне асаплантармалла, теприне кулмалла туса йанăши? тет.

Çапла вăл, ђипех утса пынă çĕртех, пит асаплăн, пит хурлăхлăн çĕреллех пĕшкĕнсе ана пуçларĕ.

— Ай!.. Ай! тесе йынăшса илђĕ.

Вăл урăх тӳсеймерĕ.

Çул хĕрĕнђи тĕмсем хушшине кайса ӳкрĕ те, вăл мĕнле асапланнине, вăл мĕн тунине пĕр çутă хĕвел пайăркипе ним хуйхăсăр вĕçсе çӳрекен кайăк-кĕшĕксем анђах курђĕç. Тен, вăл ытлах асапланмарĕ те пулĕ? Тен, ахăр, телей тени пăхса-савăнса тăманши ун ђух?

Çутă тĕнђере çапла Тимуш çуралђĕ.

Амăшĕ ăна лайăх шупăрĕпех ђӳркерĕ те, йĕри тавралла çаврăнса пăхрĕ. Çын таврашĕ никам та çук! Пĕр çурхи вăрман илемĕ кăна çав çавах куçа илĕртет. Çав çавах ђĕрлĕх-сиплĕх парса тăрать. Темле çӳлелле кăвак пĕлĕтелле пăхсан çеç, Тимуш амăшĕ çакна асăрхарĕ: хĕвел пĕрре тĕксĕм çутă пĕлĕт татăкĕ айне кĕрет те, пĕлĕт татăкне хура сăн çапать. Унтан, хĕвел пĕлĕт айĕнђен тухать те, тепĕртак тăрсан, каллех пĕлĕт айне кĕрет. Çавăн пек темиçе хут та пулђĕ.

Хĕвел апла выљани Тимуш амăшне лайăх мар пек туйăнђĕ. Вăйран кайнăскер, ытти çинђен пĕтĕмпех маннă пек пулать те, хĕвел çине пăхса шухăша кайать.

— Те телейлĕ сехет тĕлне пулђĕ, те телейсĕр... Çапах та, хĕвел нумай пытанмарĕха, кунĕ лайăх, вăрманĕ илĕмлĕ, ађи те канлĕ, ђипер пек...

Куккук хăйĕн тытăнкăллă сассипе:

— Телейсĕр!.. Телейсĕр! тесе килĕшӳсĕр авăтса илет.

Анђах ытти кайăк-кĕшĕксем унта-кунтах:

— Телейлĕ! Телейлĕ! тесе ђĕвĕлтетеççĕ.

Амăшĕ пĕтĕм вăйне пухса Тимуша алла тытрĕ те, вăрман çулĕпе малаллах уттарђĕ.

Хĕвел çутти шупăрпа ђўркенĕ ађа питне пĕр тĕлтен вăрттăн та пулин ђуп туса йулђĕ.

Хитре ђеђексемпе йешĕл çутă куръксем, тата йалтăрка симĕс йăвăç çулçисем те Тимуша хăйсен çуркуннехи тутлă шăршипе çемçен ађашласа йађĕç.

Ăна пĕтĕм вăрман пиллесе йађĕ.

— Кунçулу сан вăрăм пултăр! Пурнăç çулĕ çине паттăрăн йарса пус, терĕ те çурхи вăрман,—тен; Тимушшăнах пулĕ çав,—хăйĕн илемĕпе татах хытă, татах ђаплăн савăнса, хĕпĕртесе йулђĕ.

# АӞА ӞУХНЕХИ

I.

Ӟукунҫул хӗрринӟен инҫе те мар, хула ҫулӗпе кӑнтӑралла виҫ-тӑват ҫухрӑм утса кайсассӑн, сирӗн куҫа тем пысӑккӗш, тем вӑрӑмӗш йал курӑнах кайаӗ. Ӟи малтанах есӗр, йалӗ патне ҫитсе пынӑ ӟух, ҫул хӗррин͡ӟе пӗр ҫӗртех виҫӗ ҫил арманӗ кивелсе, хултӑртатса ларнине куратӑр.

— Хӑш йал пулаӗ ку? тесе ыйтсассӑн, тӗл пулан сынӗ кашнийех, хӑй ҫав йалсемех пулмасан, тӳрех ҫапла каласа хураӗ:

— Н. йалӗ пулаӗ. Ӗлӗкренпех вӑрӑ йалӗ; халӑхӗ усал, кутӑн, тет.

Сирӗн ӑшӑрсем ҫавӑнтах сӑр-р! сӑрлатса илнӗ пек пулаҫҫӗ. Есӗр, анкартисем патне ҫитнӗ ҫитменех, ҫак пысӑк йал ҫине сиввӗн пӑхма тытӑнатӑр.

Н. йалӗ, хӑй пекех, тем пысӑккӗш уй варрин͡ӟе ларaӗ. Таврари вӑрмансем пурте пекех виҫшер те тӑватшар километтӑрта. Вӑрманӗсен͡ӟе ӟӑрӑшпа хыр таврашӗ ҫукпа пӗрех. Пур ҫӗрте те ҫӑка, йуман, вӗрене, йӗлме, хурама, шӗшкӗ, катӑркаҫ ӳсет. Пӗр хӗвеланӑҫ йен͡ӟи вӑрманӗн͡ӟе ҫеҫ, ҫурта пек шурӑ ӳтлӗ, кӑтра пуҫлӑ хурӑнсем ытларах ӳснипе, ытти йӑвӑҫсем питех палӑрмаҫҫӗ. Йал ҫыннисем вӑл йен͡ӟи вӑрмана «Хурӑн рахӟи» тесе йат панӑ.

Хурăн рахђинђен пуçласа йала пĕр пĕђĕк шыв йухса кĕрет. Йалтан тухса тата малалла ик-виç çухрăм йухса кайсассăн, Н. шывĕ урăх йĕрпе, хĕвелтухăç йенђи вăрман çумĕпе йухса анакан тепĕр, каллех хăй пекех пĕђĕк, йулташĕпе пĕрлешет те, анаталла вара ђылай вăйлăн йухса выртаť.

Çуртйĕр йенђен ку йал пит ђаплă мар. Шурăкăвак сăнлă йăвăç ђиркӳ пур та, унтан инçе те мар, аслă çул йалтан тухса кайнă çĕрте, пĕр хутлă, тимĕр витнĕ тăп тăваткăл шкул лараť. Ђиркӳпе шкул хушшинђе, пĕђĕк урлă урама тăрăх, пуппа тийеђукăн халăх лартса панă çурђĕсем хăйсен хитрелĕхĕпе кăшт куçа илĕртеççĕ. Ђиркӳрен йал ăшнерех ик-виç ĕрет пасар лапкисем ларса тухнă. Лапкисене тĕлме тĕл, йарт ђăсăлса выртакан аслă урам айăккинђе, нумай пулмасť çĕнĕ хупах çурђĕ туса лартнă. Хĕрлĕ сăрпа сăрланăскер, кашни кунах вара, урам йенђи алăкĕсене икĕ йеннелле уçса пăрахаť те, иртен çынсене:

— Çутти кирлĕ мари? Хăватли?.. Хăватли? тесе, хăй патнелле ђĕнсе илĕртнĕ пекех туйăнаť.

Хупах çурђĕпе ĕретĕм тепĕр ик-виç вырăс лапкаç пурăнаççĕ. Вĕсен çурђĕсем те йалти ђăвашсеннинђен хӳхĕм. Ђăвашсем çурђĕсене нумайĕшĕ улăмпа витнĕ. Тĕренђе тăрăллисем кивĕ çуртсем кăна. Тимĕр виттернисем сахал. Пуррисем те—пуйаннисем, хăшĕ вăрман, теђанккăсем илсе йӳнеçтернипе, хăшĕ ваккăн суту-илӳ тунипе, хăшĕ çĕрсем нумай акнипе, хăшĕ тата армансем тытнипе çурђĕсене ђаплăрах туса лартнă.

Ҫапах та, йăвăҫ пахҕисем кашни килĕнпе пĕрех. Урам хушшисенҕе йăмрасем, хурăнсем пур. Ҫырминҕе, ҫăл кутĕнҕе ҫӳҫе нумай.

Халăх йăвăҫ таврашне йуратни сире, иртен ҫӳрекенсене, хаваслантарса йарат̆. Есĕр вара, йал виттĕр тухсассăн, пĕр-пĕр тĕлте ҕарăнатăр та, ку йал ҫине ăшшăн пăхса илетĕр.

— Ёлĕкрех пуйан йал пулнă пулĕ ку, тесе шухăша кайатăр.

Шухăшлăрах, шухăшлăр. Епĕ халĕ хамăн повĕҫри пĕр аҕа ҫинҕен ҫырма тытăнатăп. Хăт̆ те кам та тӳрех пысăк ҫын пулмаст̆. Пысăк ҫын пĕҕĕккĕрен ҫитĕнет. Малтанхи кĕнеке—Тимушăн ҕи пирвайхи ӳсĕмĕ. Ку—ҕăн-ҕăн повĕҫ те мар. «Аса килнисем» тесессĕн тĕрĕсрех пулат̆ пуҕ, анҕах «повĕҫ» тенине те епĕ аплипех хăваратăп.

II.

Хупах ҫуртĕнҕен шутласа виҫ-тăват тăваткăл хăварсассăн, аслă урампа пынă ҕух, пĕр кивĕ, лутра пӳрт ҫумĕпе иртсе каймалла. Пӳрҕĕ, улăмпа витнĕскер, урамалла ҕалăша пуҫланă. Пурĕ виҫĕ ҕӳреҕеллĕ. Хăлтăр-халтăр курăнса ларат̆.

Ҫав пӳртре акă мĕн иртенпех майсăр киҕем тăрат̆. Тĕпелти сак ҫинҕе хуҫи арăмĕ кивĕ кĕрĕкпе витĕннĕ те, икĕ ҫулхи хĕр аҕине ыталаса, ҫывăрас килмен ҫĕртенех ҫывăрнă пек выртат̆. Ҕас-ҕасах пĕр айăккинҕен тепĕр айăккинелле ҫаврăна-ҫаврăна илет. Кашни хут ҫаврăнса выртмассеренех:

— Ай-ай-й-й!.. Ех, пурăнă-ă-ă-ҫ-ҫ!!! тесе вăрăммăн сывласа йăнăша-йăнăша йарат̆.

Пит-куçĕ кăн кăвак кăвакарса кайнă. Хăш çĕрте çăмах пек мăкăҕсем сике-сике тухнă. Ури вĕçĕнҕе вуник çулхи ывăл аҕи, сĕтел çине ҕавсаланнă та, уçăлса выртакан кĕнеки çинелле хурлăхлăн пăхса, пысăк çын майлах тĕлĕрсе ларат̆.

Хĕр аҕи, темскертен хăраса, шарт сиксе вăранат̆ те:

— Анне-е-е! тесе хыттăн çухăрса илет.

— Çывăр, хĕрĕм, ан хăра... Аçу çук халĕ, текелесе, амăшĕ ăна аҕашлат̆, каллех çывăрттарса йарат̆.

Кăнтăрла çитнĕ. Пӳртре нимле пуçтару-тăву çук. Кăмакине ывăл аҕи пaçăртарахах хутса кăларнă. Унтанпа вăл тула тухса выҕăхсене апатланă. Пĕр çĕклем шыва кайса килҕĕ. Йур хырҕĕ. Тата ытти вак ĕçсем те турĕ. Тултан ĕçлесе кĕрсессĕнех, сак çинҕе выртакан амăшне пăхса-а илҕĕ. Куçĕсем шывланҕĕç. Сассине кăлармасăр макăрма тытăнҕĕ. Çамрăкскер, шурă кĕпе çаннипе куççулĕсене шăлса типĕтрĕ. Унтан сентре[1]) çинҕен пĕр вырăсла йурă кĕнеки—«Песенник»—илсе, сĕтел хушшинҕе тек тĕлĕрсе ларма тапратрĕ.

Халĕ те вăл, йурă кĕнеки çине пăхса, çав çавах, паçăрхин пекех тĕлĕрсе ларат̆. Урайĕ шăлăнман. Турҕкипе ухваҕĕ хăйсен вырăнҕе мар. Тумтирĕсем те, кăнтăрлахи пек, пĕр çĕрелле пуçтарăнман. Сĕтел çинҕе каçхи апат йулашки çаплипех тăрат̆.

Çывăракан пĕҕĕк хĕр аҕи каллех, никам хăратман-тивмен çĕртенех, те тĕлĕкре аташнипе:

— Анне! Анне! тесе, темле тăрук-тăруккăн çухăрса илет.

---

1) Çӳлĕк.

Амăшĕ çаплах йăпатать, аҫашлать.

— Çывăр, çывăр... Пÿртре аçу çук халĕ, ан хăра! Хĕр аҫи каллех çывăрса кайать.

Сĕтел хушшинҫе пĕҫĕк ывăлĕ салхуллăн тĕлĕрсе ларнине амăшĕ курах карĕ. Хытă çытарĕ çинҫен пуçне хĕн-асаплăн хăпартса тăрса ларҫĕ.

— Ах, ывăлăм... Тимуш! Есĕ те çамрăклах хуйхăрма ан вĕренха. Ку ухмах аçу тем те кăтартĕ ĕнтĕ. Кас çаплах ман çине уха-уха сикрĕ. Вĕлерет пуҫ терĕм. Тÿсмелле мар. Пур çĕртен те сураççĕ, ыратаççĕ... Ех, турри! Ăçталла тартăнши есĕ ман тĕлтен? Ним айăпсăр, таса çĕртенех мĕншĕн асаплантаратăнши мана-а... Ним тума, нимле ҫарма çук. Кашни ÿсĕрĕлмессеренех çапла хĕне-хĕнех ватăлтарать-çке ĕнтĕ усал аçу-у... Ех, çутă кунăм! Есĕ те маншăн хуралтăн пулать. Пĕтрĕм епĕ. Пĕтертĕм çамрăк ҫухнехи сăн-сăпатăма, тем тĕрлĕ хитре кĕлеткеме çак киле килсе пĕтертĕм-çке-е-е...

Амăшĕ ĕсĕклесех макăрса йарать.

Тимушĕ ҫарма хăтланать.

— Анне! Ан макăр, тет.

Амăшĕ ҫарăнмасть. Сăмахне калать те макăрать. Калать те макăрать.

— Ах, ывăлăм! Пит йăвăр мана пурăнма, пит йăвăр. Пĕрех хут, аçуна пăрахса кайăттăмăрҫҫĕ. Уйăрăлтармаççĕ вĕт.—Пĕр çынна кайнă-тăк, çавăнпах пурăнса иртер, теççĕ... Ех, пĕтрĕм епĕ. Аттеанне ирĕкех тĕп турĕ мана-а-а...

Амăшне кура, пĕҫĕк ывăлĕ те тÿссе тăраймарĕ: куççулĕсене шăпăр-р йухтарса антарҫĕ. Анҫах çапах йĕрсе йамарĕ хăй.

Хěр аҫи ак вăраннă. Амăшě ăна ҫаплах аҫашлат. Анҫах нихҫан та вăл, ытти аҫа амăшěсем пек, пěҫěк хěрне: ой-ой, аҫине, паппине! тесе аҫашламаст. Пěрмайах ҫакăн пекле каласа ҫывăрттарат:

— Ан макăр, Матěрне хěрěм... пěҫěк хěрěм! Пӳртре никам та тивекен ҫук. Аҫу таҫта кайнă. Ан макăр, ҫывăр, тет.

Пěрмай ěҫсе килсе амăшне хěненине пěле пуҫланăранпа, пěҫěк Матěрне ашшěнҫен пит хăракан пулҫě. Ун пек шуйхашнă каҫ хыҫҫăнхи кăнтăрласем вăл нихҫан та канлě ҫывăрмаст: сасартăк шарт-шарт сиксе вăрана-вăрана кайат.

Йěрсе ывăннă амăшě те, хěр аҫи те ҫěнěрен айхăласа карěҫ.

Пӳртре ҫав ҫавах киҫем.

Тимуш амăшě вырăнне ěҫлеме тапратрě: урай шăлҫě, тумтирсене пуҫтарҫě, сěтел ҫинҫен тасатрě.

Пӳрт ăшне тин илем кěҫě.

III.

Амăшěпе пěҫěкки вăрансассăн:

— Анне! Иртри халҫ ыратни? тесе ыйтрě аҫа сасси.

Амăшě вара ҫемҫен кăна кулса кăтартрě.

— Ах-тур есě, ывăлăм... Хăвăн аннӳне ҫамрăклах хěрхенме пěлетěн ҫак, терě.

Ҫапла ҫитěннě пирěн Тимуш. Пěҫěк ҫухнехинҫен вăл нумай, пит нумай астăват. Пěҫěк ҫухнехи кунсем ăна, пуринҫен ытла, ҫавăн пек лайăх мар ирсенҫе, амăшě пурнăҫ пирки ӳпкелешнě сехетсенҫе аса килеҫҫě. Ахалҫ ҫухне, хăй пек ҫамрăк йулта-

шĕсемпе ђипер выљаса-хавасланса çӳренĕ ђух, питех те аса килмеççĕ.

Пиллĕкре ђухне Тимуш, ăнсăртран [1]) кăмака çинђен мăшкăлтăк шыв хуранĕ çине ӳке парса, пуç ђашкине амантнă. Аманнă йĕр палли хаљ те пытанман. Хаљ те вара, суран вырăнне тытса пăхсан, Тимуш хăйне хăй хĕрхенсе илет. Ӳке панă ђух йепле уласа макăрнине те лайăх астуса илнĕ пек пулаť. Çапах та, ун çинђен вăл нумай шухăшласа тăмасť. Ђасрах урăх шухăша кайаť. Сакăртăхăр çула çитсен, Тимуш вунă пус пăхăр укçалла сысна кĕтĕвне кĕрĕшсе кайнă. Сысна кĕтĕвĕнђе çӳренисене аса илсенех, ăна вара тем те шухăша килет: хура пусăра тислĕк куписем çинђе выртса çӳренисем; курăксем хушшинђе, хĕрӳ кунта шăрђăксем: ђĕрик-ђĕрик-ђĕр-ђĕр-р-р! ђĕриклетсе йурланисем; çарансемпе шыв хĕррисенђе, ахаљ тăрасран, çĕçĕпе çерем касса ватнисем; вăрăм пушăпа, выљамалла, шарт! шартлаттарса пĕтĕм вăрмана йанăраттарнисем; хунав çăкапа курăк кĕпçисенђен тунă шăхлиђăсемпе ташă-йурă кĕввисем каланисем,—пурте, пурте аса килеççĕ çав. Тимуша хĕпĕртеттерсе йараççĕ. Унăн шухăшĕ, ун пек ђух, уйаллах, ирĕкеллех вĕçме тапратаť. Çамрăкскере тахăш пĕри, куçпа пăхса та курăнманскер, çапла каланă пекех туйăнаť:

— Тем лайăх мар килте пурăниђђен, уй-хиртех лайăх çӳреме. Сывлăш та уçă унта. Ахаљ те ирĕк!.. Ирĕк! тенĕ пек пулаť.

Тимуш çавăнтах иртнĕ çулхипе висĕм çулхи çу кунĕсене аса илет. Каллех ăна: хăй пек йулта-

[1]) Астумасăр, сисĕнкĕсĕр.

шĕссемпе хурăн çырлине çӳренисем; пухнă пек çырлисене пасартан пасара çӳрекен тутарсене çул çинчех вуншар, вунçиччшер пуса сута-сута йанисем; укçипе амăшĕ хĕрлĕ хăмачч кĕпе туса пани; унтан татах, хурăн çырли пĕтерехпе, çĕр çырлипе хăмла çырлине çӳренисем; çĕмĕрт çинисем; çырларан таврăннă ччух, вăрман çумĕпе йухса выртакан шыв авăрĕсенчче пулăсем пекех ччăмпăлтатнисем; кĕтӳ-кĕтӳпе таракан пулăсене ним ахалех, выччамалла хăваласа çӳренисем аса килеççĕ. Пуçра каллех «ирĕк», «ирĕк» тенĕ йеверлĕ сăмахсем туха-туха тăраççĕ.

Ах... Аппăшĕ йунлă вар-виттипе асапланса вилнине те Тимуш пит çирĕп астуса тăрать. Наçтук ун ччухне вуннăра пулнă. Пĕр ерне хушши пĕрмай йунлă-хутăш йухтарса пурăнччĕ вăл. Апат тавраш çимесччĕ. Лупас айне кайаччĕ те: Анне, ан кай! тесе макăра-макăра йаратччĕ.

Сыватас тесе, Наçтука амăшĕпе Хĕветле кумми тем те туса пăхрĕç. Пилеш хупписем çитерччĕç. Кăмака шăлмалли мелкепе алăк йанахне çуса илнĕ шыва ĕçтерччĕç. Темле курăк та вĕретсе паччĕç. Наçтук çапах ччĕрĕлеймерĕ. Вăл пĕтнĕçем пĕтсе пыччĕ. Тĕпелти сак çинчче ччипер выртнă çĕртех, авкаланса хуçланма тапратрĕ.

— Йепле те пулсан ччĕртеймĕрши? Ччĕртеймĕрши? тенĕ пек, пурин çине те йăваш-тулли куçĕсемпе тилмĕре-тилмĕре пăхрĕ. Пĕтĕм вăйне пухса йулашки хут çӳлелле авкаланса илччĕ. Аллисене ччăмăртаса кăкри çине çапăнтара-çапăнтара, вирлĕн иккĕ-виççĕ сулса йаччĕ те, урисене ччăсса пăрах-

рĕ, шăпăрт пулђĕ: сасси çĕтрĕ, сывлăшĕ тухрĕ... Наçтук вилђĕ.

## IV.

Ђирĕ йерекенскер пулнă. Тĕлĕнмелле: Тимуш ђип-ђиперех çăлăнса йулнă унтан! Усал есрелĕ Наçтук ђунне кăна илсе кайрĕ. Ии! Пĕлесђĕ ăна: мĕнле пулса тăђĕха вăл—ђипер калаçакан-тăвакан-скерех шăпăрт вилсе выртасси? Çыннăн ђунĕ ђăнах пур-ши унăн, е? Мĕн пек-ши вăл?.. Ађа пуçне çавăн пек пысăк шухăшсем аптăратса çитернĕ пулнă. Анђах ун пирки ăна пӳртри çынсенђен нихăш те лайăххăн каласа парайман. Хăлхана пĕр çакнашкал сăмахсем кăна илтĕне-илтĕне кĕнĕ: ђун вăл шăши йеверлĕ пулса, виле патĕнђех ђупкаласа çӳрет. Ăна урăхла «пырăшти» теççĕ. Пырăштийе куракансем те нумай. Çырма хĕрринђи Иван хĕлле, вăрмантан вутă турттарса тавăрăннă ђух, лаши мĕнĕпех вар тĕпне кайса вилсессĕн, çав вырăнта пĕрмай шăши йăкăртатса çӳретђĕ, тет.

Йĕрсе ывăннă амăшĕ, темшĕн, Наçтук ђунне шăши йеверлĕ пултарасшăн мар.

— Кай, пысăккисен анђах апла пулаť вăл. Çылăх пуррисен анђах... Ађапăђа ђунĕ тӳрех райа кайаť, тет.

— Ађапăђа çылăхлисенђенех çуралмасťим вара? тесе хыттăн хушса хураť Тимуш ашшĕ.—Мĕн лăпăртататăн есĕ тата, тет.—Вилсессĕнех пурин ђунĕ те малтан, хĕрĕх кун хушшинђе, пырăшти пулса çӳрет. Усалĕ те, хура йытă пек курăнса, ун хыççăн инçете йулмасť.

— Атте! Кĕçĕр кичме пултарайи апла хăрах йытă?

— Пултарать.

— Уй! Хăратăп епĕ çĕрте çывăрма.

Пӳртре, ђăнах та, вăл самантра пит хăрушă пекле туйăнса кайать. Сăмах-йумахсем илтĕнми пулаççĕ. Çĕр ирттерме пынă Униççе аппăшĕ çăм ђулхине çыхмашкăн пăрахать. Тимуш амăшĕ, Наçтук ђунĕ ваљљи турăран çăмăллăх ыйтса, çĕре ӳке-ӳке пуççапать. Турăш умĕнђе çунакан çуртана пырса тӳрлетет. Унтан каллех сăхсăхса илет... Ку тĕнђерен уйăрălса кайнăскерĕн урăх вăранасси-мĕнĕ çук: çавăн пекех лăпкă вăл, çавăн пекех канлĕ... канлĕ çывăрать. Ăна, тĕпел кукринђе, йури ăрасна вырăн туса панă. Çийелтен шурă пирпе витнĕ. Амăшĕ акă, çав пире пуç çинђен сирсе, сӳннĕ куççене пăха-пăха ĕсĕклет. Ĕмĕрлĕхе çывăрма выртнăскере сăмахсем те каласа ђĕнет вăл. Анђах сӳннĕ куççем урăх никама та курмаççĕ çав. Тепĕр хут уçăлса кăтартмаççĕ вĕсем. Амăшĕ вара ирĕксĕрех пăрахса кайать вăл вырăнтан. Уçăп, Тимуш ашшĕ, пысăк алтуйи тытса, тула тухать. Хура йытă пӳртӳмĕнђеи йе карташĕнђе ларать пулсан, тӳрех çапса хуçать ăна. Уй! Пушшех хăрамалла та-çке! Урайĕнђе шăши хаљ-хаљ ђупса çӳрессĕнех туйăнать. Таçта, вырăн çине пырса, аçам айнех шăтарса кĕрĕ вăл. Çĕрте выртакан ађа çапла, пырăштирен шикленсе лартса, аçам аркине шалалла, хăй айнелле лайăххах хĕстерсе ђикет. Пуççинђенех те витĕнсе пăхать. Анђах, сывлама аван мар пирки, каллех уçса пăрахать ăна. Сак çинђе ђулха йĕпписемпе ларакан скере хыттăнах аптăратма пуçлать.

— Униççе аппа! Йарса кăтартха йумах.

— Ай, ађам, йурамасť кĕçĕр йумах йама.

— Мĕншĕн... мĕншĕн йурамасť пултăр?

— Ав, Наçтук аппу вилсе выртаť. Макăрас килмести сан уншăн?

— Ну, нумай ан йар есĕ.

— Аннӳрен ыйт. Вăл ђармасť пулсан...

— Анне! Ђармастăн вĕт?

— Ах, йарса кăтартçке çавна пĕр-иккĕшне.

Униççе аппăшĕ пуçлаť каламашкăн. Тĕлĕнмелле, шутсăр та тĕлĕнмелле йумахсем пĕлет вăл. Хăй куçран пăртак йăвашрахскер, çип ункисене пĕр йĕп çинђен тепринпе çеклете-çеклете илсе, сăмахха ним тақăнмасăр, шыв пек кăна йухтарса пыраť. Пĕркеленђĕк пит-куçĕ вăл вăхăтра калама çук пит килĕшӳллĕ выљаť. Униççе—кађђа кайман ватă хĕр. Шутсăр ђухăн çемйерен. Тимушсенђен те нађартарах пурăнаççĕ. Анђах йумах йарас тĕлĕшрен вара кам çитетши Униççе аппăшне? Йалта урăх никам та çитеймĕ çав. Йумахран вăл вĕçĕ-хĕррисĕр пуйан. Çĕрте итлесе выртакан вуник çулхи ађа ăна, хăй пысăк çын пулсассăн, пурнăçпала кĕнекесем вуласа та, тата ахаљ те нумай паллашса çитсессĕн тин, ђăннипе пĕлсе хак пама пултарнă.

## V.

— Куç-пуçлă та илемлĕ хĕр пулас-тăк, Униççе аппа Шахрасатăран [1]) пĕртте кайа йулас çук. Фан-

---

[1]) Арапсен „Пин те пĕр кас“ йатлă ђаплă йумах кĕнекинђи хĕр йађĕ. Шахрасатă, пин те пĕр каç хушшинђе тĕрлĕ илемлĕ йумахсем каласа, усал патша кăмăлне çавăрнă пулаť.

ҭаçи[1]) йенӗпе ђӑваш ӑсӗ ытти халӑхӑннинђен пӗрт-те кайа мар. Мӗн пур уйрӑмӗ те акӑ ӑçта кунта: ытти халӑхсен йумах-халапӗсем тахçанах кӗнеке-сем пулса тухнӑ, нумай çын хушшине сарӑлнӑ; пирӗн кӗнекесем пулса сарӑлма мар, пӗр çӗре йӗр-келлӗ пухӑнса пыни çук. Хамӑрӑнне пурӑннӑçем ма-натпӑр епӗр, тенӗ ак Тимуш, пӗр вӑтӑралла çитсе, хӑйӗн ӑсне-вӑйне халӑха усӑллӑ ӗçе парса ӗçлеме пуçласассӑн.

Анђах, çамрӑк вулакан, епӗр ытлах малалла сик-се ӳкмӗпӗр. Пысӑклансассӑн вӑл, пирӗн Тимуш, ун пек татах та нумай шухӑшланӑ пулӗ. Сӑмах-ран, çыннӑн ђунӗ пуррипе çуккине пӗђӗк ђухне ыйтса пӗлесшӗн пулнӑскер, пысӑклансассӑн вара никама та аптӑратман ун пирки. Мӗншӗн тесессӗн, пӗр йенђен, хӑйех те ђухла пуçланӑ, хӑйех сиснӗ вӑл, тата кӗнекере пит аван кӑтартса панӑ çав: ете-мӗн нимле ӑрасна ђун та çук! Ӑшра ђӗре йалан тапса тӑраҭ. Йун-тымарӗсем тӑрӑх йун саланаҭ. Пуç мими, çурӑм шӑмми мими, ӳпкесем, нервӑсем хӑйсен ӗçне тӑваççӗ. Вилсессӗн нимӗнле пырӑшти те пулма кир-лӗ мар. Нимле хура йытӑ та.

Сӑмахран, калӑпӑр, пысӑк çын пулсассӑн Тимуш çав хӑйӗн пӗђӗк ђухнехи тӗшмӗшӗсенђен кулнӑ кӑна. Анђах пӗр йапала пирки хӑйне хӑй хытӑ ӳп-келенӗ: ђӑваш Шахрасатин хитре йумахӗсене пӗрне те хут çине ӳкерсе йулман вӑл. Ку тӗлӗшрен тӑнӗ те тата улталанӑ ӑна: пӗр йумахне те лайӑххӑн астуса илме пулман. Пысӑк çын пулнӑскер вара тахçанах вилнӗ Униççе сӑнне çӗнӗрен ђӗртсе тӑ-

---

[1]) Фантаçи—ӑс-пуç выђанн, шухӑшпа тунӑ йапала.

ратма хăтланнă. Анҫах, темĕншĕн, урăхла майлă ăна лайăхрах нимле те ҫĕртме пултарайман: йалан тăван аппăшĕ тĕпел кукринҫе выртнă ҫухнехине курнă, умма йалан ҫав вăхăт ҫеҫ таҫтан сике-сике тухнă.

Наҫтука акă, тĕпел кукринҫе, йури ăрасна вырăн туса панă. Ҫийелтен шурă пирпе витнĕ. Амăшĕ, ҫав пире пуҫ ҫинҫен сирсе, сӳннĕ куҫсене пăха-пăха ĕсĕклет. Ашшĕ, алтуйи тытса, тула тухать. Пӳртре ытла та хăрамаллаҫке!—«Униҫҫе аппа! Йарса кăтартха йумах».—«Аннӳрен ыйт. Вăл ҫармасть пулсан...» Униҫҫе аппăшĕ пуҫлать каламашкăн. Тĕлĕнмелле, шутсăр та тĕлĕнмелле йумахсем пĕлет вăл. Вуник ҫулхи аҫа ăна итлет-итлет те, ҫывăрах кайать. Малтан уҫăла-уҫăла пăхакан куҫсем уҫăлма пăрахаҫҫĕ. Пĕр сывлани анҫах илтĕнме пуҫлать.

## VI.

Амăшĕ калакаланине хăлхана ҫиксе лартса:

— Атте! Аппана ма лекĕр патне илсе каймарăн? тесе ыйтнă пĕҫĕкскер.

Ашшĕ ҫавăнтах, ҫиленнĕ пек пулнă та, мăн сасăпа:

— Мĕн пĕлет вăл лекĕр тавраш? Туррийех ҫапла вилме пӳрнĕ-тĕк, ним те тăваймăн унта, тенĕ.

Амăшĕ ӳпкелешме ҫарăнман.

—Тен, пĕлес ҫук ăна, хамăр аппаланнийех те, пĕр йенҫен, йурамарĕ пулĕ ҫав. Ех, хĕрĕ пит лайăхҫĕ, хĕрĕ пит лайăх!. тесе, пайан кун та хурланать хăйĕн Наҫтукĕшĕн.

Тимуш пуҫӗнҙе тата, ӳссе пысӑклансассӑн та манмалламарскер, ҫав хӑй вуниккӗ тултараҙҙенхи вӑхӑтран тепӗр самант пит ҫирӗппӗн ларса йулнӑ. Тӗрӗссипе, вуник ҫул тултаресан кайран та вӑл самант нумайа, пит нумайа пынӑ. Ун ҫинҙен есӗр, йуратнӑ шӑллӑмсем, ҫак повӗҫ пуҫламӗшӗнҙе вуларӑр та ӗнтӗ.

— Ах, ҫав... Тимуш амӑшӗн ҫӑмах пек сике-сике тухнӑ мӑкӑлҙсем ҫинҙени? Пӗҙӗк Матӗрне шарт-шарт siксе ӑйхинҙен вӑранса кайнисем... Ҫавсеми, е?

Пит тӗрӗс туйса илтӗр есӗр.

— Ҫавсем, ҫавсем.

Килне вил ӳсӗр таврӑнакан ашшӗ акӑ арӑмӗпе ним сӑлтавсӑрах йатлаҫма, ӑна хӗнеме тапратаҭ. Уй-й! Ун пек ырӑ мар каҫсенҙе Тимуш ӑмӑшӗ хӑвӑртрах аҙисене пуҫтараҭ те, пӳртрен тухса тарса урӑх ҫӗрте ҫӗр каҫаҭ. Пӗҙӗк Тимуш ҫулла ҫапла кил пахҙинҙех, хӑмла вырӑнҙе ҫывӑраҭ. Хӗлле амӑшӗпе пӗрле кӳрше мӗн кайаҭ. Йе тата, пӳртре ашшӗ лӑпланса ҫывӑрса кайаҙҙен, тулта лупас айӗнҙех нумай вӑхӑт шӑнса-ҙӗтресе тӑраҭ. Пӗрреҙҙен вӑл, амӑшӗ ҫук ҙух, ӳсӗр ашшӗнҙен хӑранипе ҫаппа ҫарамас, ҫара уранӑн йур ҫинҙенех Хӗветле кумма амӑшӗ патне тухса тарнӑ. Ӑна халҙ те манман.

— Пит хытӑ шӑнтӑм ҫавӑн ҙух! тесе каласа кӑтартаҭ хӑйӗн ытарайми амӑшне.

— Пысӑкланха, ывӑлӑм. Пысӑклансан мӗн пулӗ... Аҫунтанах хӑрамӑпӑр ун ҙух, тет ывӑлне хирӗҫ амӑшӗ.

Апла каласан, ывăлĕ тăрук вăй илсе, çӳлелле хăпартланса кайнă пек пулаť. Хăйне хăй никамран та хăраман паттăр вырăнне шутлама тытăнаť.

— Ӳсем... Вăйланам... Вĕренем... Çын пулам, тесе калассăнах туйăнаť хăйĕн çамрăк та хĕрӳ шухăшĕпе. Аҫа куçĕсем йăлтăртата-йăлтăртата илеççĕ.

Хăй йепле, ăçта çурални çинҫен пĕҫĕккĕскер çапах ним те пĕлмен.

— Анне, калаха: епĕ ăçтан çуралнă? тесе ыйтсан, амăшĕ çапла тыттарнă ăна:

— Сана çăлран туртса кăларнă, тенĕ.

Пысăкланарахпа тин Тимуш ĕç йепле пулнине тăнăшса çите пуçланă. Ахаљ татах та пĕлес çук. Пĕрре амăшĕ ăна, шуйхашнă каç хыççăнхи ир макăрса ларнă ҫух, хăйех çав систернĕ.

— Сана та çак, ывăлăм, вăрмантах çуратса пăрахрăм. Ун ҫухне епĕ куккусем патне çимĕке кайма тухнăҫҫĕ. Аçу пымарĕ.—Епĕр килтех праçник тăватпăр. Кайах, кай! тесе мăшкăласа йулҫĕ сан усал аçу, тенĕ.

Çимĕк тĕлĕнҫе вăрманта çуралнă тесен, Тимуш йалан хавасланнă пек пулаť. Ăна çавăнтах вăрман пурăнăçĕ аса килет. Хăй мĕн çинҫен шухăшланине лайăххăн тăна илмесĕрех, çамрăк аҫа çапла каласа йараť:

— Вăрманта пурăнма пит аван пулмалла. Мĕн тĕрлĕ савăнăç çук унта. Йалтинҫен çĕр хут та лайăх, тет.

Пуçĕнҫе тĕрлĕрен çавăн йышши шухăшсем вĕçме тапратаççĕ.

— Пысăклансассăн хамах вăрмана пӳрт кайса лартатăп. Пурнатпăр унта аннепе... йăмăкпа. Атте кунтах йултăр. Ĕçтĕр. Кӳпĕнтĕр. Питех кирлĕ мар вăл пире. Мĕншĕн епĕ халех пысăк пулманха? Халех куçаттăмăр вăрмана. Лайăх пулĕ унта пурăнма? Пит лайăх пулĕ?..

Ку шухăшсене Тимуш пĕрре амăшне те пĕлтернĕ. Анђах амăшĕ, ђăтаймасăр, çавăнтах кулса йанă.

— Вăрманĕ пирĕн мар-çке. Мĕн тăвасха апла? Тата упа-кашкăртан, вăрă-хурахсенђен хăрамастăним есĕ?

— Хăрамастăп. Пăшал çуким вĕсем ваљљи

— Пеме пĕлетниха?

— Вĕренетĕп.

Анђах вăрманĕ ђăнах вĕсен аллинђе мар пирки пĕђĕк паттăр пăртак шухăша кайнă.

## VII.

— Çăварни!.. Çăварни!

Ађапăђа урамра кăшкăрашаť.

Кăнтăрла иртнĕ-иртменех, аслă урам хĕллехи праçнике ђислама тытăнђĕ.. Унтан та кунтан Тимушсен пӳрђĕ çумĕпе тĕрлĕрен хура, сарă, ђăпар кутлă лайăх çунасем тек каллĕ-маллĕ вăштăн та вăштăн ирте пуçларĕç.

— Çăварни çунисем... Пăхăрха: йепле лайăх çунасем!

Ађапăђа, çунасене ђупса çитсе, хыçалтан усăнма хăтланаť, анђах çавăнтах кайалла тапа-тапа сикет.

Кунĕ уйар, ăшă. Хĕвел пăхать. Тумла йухма тăрасшăн. Йалти халăх, çурри те ытла пулĕ, аслă урама тăрăх ушкăнăн-ушкăнăн сырăнса илнĕ. Çитĕннисем, ватăраххисем, арçынĕ-хĕрарăмĕ мĕнĕпех, пўрт çумĕсенђе, урам кĕтессисенђе хăмасенђен тунă лармаллисемпе пĕренесем çине лара-лара тухнă. Хăш çĕрте, ларма вырăн çуккипе, йур çинех улăм сарнă та, аслă урампа çăварни ђупакансене пăха-пăха илхĕреççĕ. Нумайĕшĕ урасем çинђех пĕр-пĕринпе сăмахласа, савăнса, ахăлтатса тăраççĕ. Хушăран-хушăран вĕсем хыттăн ахăра-ахăра йани илтĕнет. Нумайĕшĕ вăрăсем çийеççĕ. Мăйăрсем катаççĕ.

Катађђи ђупман çамрăк йашсемпе ђипер хĕрĕсем ваттисемпе питех хутшăнмаççĕ. Вĕсем, çул хĕррисенђе кĕретех уйрăм-уйрăмăн ушкăнланса, хăйсене кирлĕ пек савăнаççĕ. Пысăк çара çунасем çине пилĕкĕн-улттăн купаланаççĕ те, пĕђĕк урамсем тăрăх, сассисемпе йанратса анаталла йарăна-йарăна кайаççĕ. Йарăнма йуратманнисем йе çăпаталла, йе пасарла выляççĕ, йе тата пĕр-пĕрне йĕпе йур ђăмаккисемпе перкелесе илеççĕ. Хĕрĕсене йур айне вараççĕ. Хăшне çилентерсе, тарăхтарсах çитереççĕ. Хăшне макăртаççĕ те. Тăрăхлаççĕ. Кулаççĕ...

Пирĕн Тимуш, темшĕн, çав çамрăксен ушкăнĕсенђе пĕринђе те çук. Темшĕн, çулталăкра пĕрре анђах пулакан çак тем тĕрлĕ савăнмалли çăварни кунĕнђе те вăл пўртрех ларать. Урама тухмасть. Тантăшсемпе выљамасть.

— Тухсам урама, Тимуш! Йепле ав çăварни ђупаççĕ. Пĕтĕм çын урамра савăнать. Есĕ мĕн çамрăк-

лах пӳртре ларатăн? тесен те, ывăлĕ çапах амăшне итлемест.

— Тухас килмест манăн! тет.—Выђанă çĕре пушшех кайас килмест. Лайăх мар унта. Пĕрне пĕри ђышаççĕ, çапаççĕ, вăрçаççĕ, тет.

Хăй акă йурă кĕнекине тытаŤ те, ђӳређе тĕлĕнђе тӳшек çумне тĕршĕнсе ларса, пĕрре урамалла пăхаŤ, тепре—кĕнеки çине.

## VIII.

Шкула тăххăрта кайа пуçланă. Шкула йарас ђухне пĕр ашшĕ кăна урлăрах пулнă.

— Мĕнле, кăçал ывăла вĕренме йамаллаи, йарас çуки? Йарас пулсан, кайса çыртармалла пулĕ. Çынсем çыртараççĕ вĕт! тесен, амăшне хирĕç ашшĕ çаплах каласа хунă çав:

— ХăŤ те мĕн ĕçле ывăлупа. Епĕ пĕлместĕп. Йарас пулсан—йар. Йамастăк—ан йар. Маншăн пĕрех. Епĕ вĕренмен—пурăнатăп. Атти те, асатти те шкул алăкне уçса хупман—çапах пурăннă, вилмен. Пĕлместĕп. ХăŤ мĕн ĕçле, тенĕ.

Тимуш ашшĕ çине çавăнтах хытă çиленсе кайнă.

— Çынсен ашшĕсем йараççĕ. Манăн йарасшăн мар. Епĕ те пур пĕр кайатăп... Кайатăп! тесе, пĕђĕк паттăр пекех, вăл хăйне хăй сăмах панă.

Амăшĕ,—ой, ырă та-çке амăшĕ!—пĕђĕк ывăлĕ майлă пулнă. Упăшки йепле çынне аса илнĕ те вăл:

— Мĕн пулаŤ—çав пулĕ. Каллех ашшĕ пек усал ан пултăрах. Ађана шкула йаратăп. Ашшĕ хăŤ

мĕн калатăр. Килти ĕçсене хамах тукаласа çитерĕп, тенĕ.

Тимуш ĕнтĕ виççĕмĕш çул вĕренет. Вырăсла сыр-нине аванах тăнăшать. Хăйĕн йурă кĕнекине уçка-ламассеренех вара, пуринҫен ытла, çаксене йур-лама йуратать:

Ей, дубинушка, ухнем!
Ей, зеленая сама пойдет, идет, нейдет,
Подернем, подернем да ухнем!..

Йе тата:

Идет, гудет зеленый шум,
Зеленый шум, весенний шум...

Йе татах:

По диким степям Забайкалья,
Где золото роют в горах,
Бродяга, судьбу проклиная,
Тащится с сумой на плечах...

«Песенник»-не çĕнĕ çулта хăйсем патне хăнана килнĕ куккăшĕсем панă укçапала илнĕ. Пушă вă-хăтсенҫе ăна аларан пăрахмасть. Пĕрмай хăй йу-ратнă сыпăксене йурласа çӳрет. Кĕввисене те вăл хăйех шухăшласа кăларать.

## IX.

Халĕ те ав, хушăран-хушăран çăварни урамнел-ле пăхса илет те, ăшĕнҫе тек ĕнĕркелесе, хăйне хăй савăнăç тупать. Пĕтĕм таврари çут тĕнҫе вăл вăхăтра таçта çухалнă пек... çук пекех пулса тă-рать. Аҫа вара пĕр хăйĕн ăшри пурнăçĕпе кăна, пĕр çав йуратса лартнă йурри-кĕввисемпе, йутран çын пĕлме пултарайман илемлĕ шухăш-тĕлĕксемпе кă-на пурăнма тытăнать.

Çак кун пӳртре каллех, мӗн иртенпех, майсăр киҫем тăнă. Ҫас-ҫасрахах пулакан истори, нумай кĕттермен, çĕнĕрен çавăрăнса килнĕ. Кас-кас тем çитмен пирки, темпеле кăмăлсăр, такама ытлашши çиленнĕ пирки ура-ура кайакан вăй пурне те çĕнĕрен сехĕрлентерсе хăварнă. Сĕтелли, тенкелĕ, ухваҫĕ таврашĕ те хăтăлса йулайман унтан. Тĕлĕнмелли-ха çакăн хыççăн—çамрăк аҫа урама тухасшăн пулманнинҫен? Аслă урам çыннисем умĕнҫе вăл хăйне хăй вăтанҫăкла тытнинҫен? Амăшĕ кăларасшăн пулсассăн та—ывăлĕ çапах итлеменнинҫен? Ой, аҫапăҫа тени пысăккисен пурнăçне пĕтĕмпех ҫĕри çумне хурат çав вăл!..

X.

Ир ирех таçта тухса кайнă ашшĕ кăнтăрла умĕн киле таврăнсассăн:

— Атте! Мĕншĕн есĕ ӳсĕр ҫух аннене пĕрмайах хĕнетĕн? тесе ыйтнă пĕрре ывăл аҫи.

— Çук, курман... Епĕ хĕнемен пулĕ ăна... Тен, пĕлместĕп... Ӳсĕрпе пулнă пулинех... Çук, курман. Ним те астумастăп, тенĕ ăна хирĕç ашшĕ.

Хăй каллех килтен тухса кайнă.

Йалан çавăн пек пулат. Уçăп, хăт те хăçан та ӳсĕрпе аташнисене, урнисене ирхине тунма йуратат. Маннă пек пулат вăл. Арăмĕ ҫирлĕ пек выртнине курсассăн та, хăвăртрах пĕр-пĕр сăлтав, пăрăнăç тупса пӳртрен тухса тарма пăхат.

— Тӳрĕ каласан тăванне йурамаст теççĕ. Хăй мĕн тунине лайăхах астăватха та... Ах, ман ҫуна илекен! тесе, Тимуш амăшĕ вара çавăнтах макăрса йарат.

Анђах çак çăварни кунĕ вăл нумай макăрмарĕ. Çи-пуçне тӳрлеткелесе, васкаса сак çине тăрса ларђĕ. Матĕрнине пăтă йулашкине çитерђĕ. Кăнђала тытса арлама тапратрĕ. Арланă хушăрах, Тимушпа пĕрле, çăварни çыннисене те пăхкалаť. Мĕскĕн! Упăшки кăвакартса пĕтернĕ пит-куçне хăй çапах та урамалла кăтартасшăн мар. Пăхаť пулсан та, инçетрен кăна, хăйне урамри çын курмалла мар анђах пăха-пăха илет. Арлассине хăй хытă арлаť. Йĕкине вăр-р! вăр-р! çех çавăрттараť. Арланă майпа пур хуйхи-суйхисене, çан-çурăм сурнисене те тӳйман пек пулаť.

XI.

Каç умĕн урам хушши тата хытă кĕрлеме тапратрĕ. Катађђи ђупакансем те, куракансем те шутсăр нумайланђĕç.

— Ђăнкăл-ђăнкăл! Ђăн-ђăн-н! ђăнкăлтатса та ташласа пыраççĕ йăнкăл-шăнкăрав сассисем.

— Хăнкăр-хăнкăр! хăнкăртатаççĕ хулăн-уçă саслă хăнкăрмасем.

— Ихик!.. Айук!.. Кай, ан тив!.. Ђипер лар! тесе кулаççĕ шурă, кăвак, кĕрен тутăрлă, хура-сарă кĕрĕклĕ çăварни хĕрĕсем.

— Ей, Вађук, йара пар! Ђуптар лайăхрах, теççĕ те кађђисем, çунисем çинђех хĕрсемпе выљама тапратаççĕ.

Акă пĕр кайри çуни çинђи хитре хĕрĕсем, хăйсем умĕнђе ђăпар çуналлă та лайăх лашаллă çамрăк йĕкĕтсем пынине курсан, çуна айккисенелле пăха-пăхах йурлама тапратрĕç. Ытти çунасем те

вара хуллентерех шума пуçларĕç. Çăварни лаши сем, мăн кăмăлланнă пек пулса, пуçĕсене тек сулла сулла пыраççĕ. Шăнкăрав сассисем, паçăрхи кĕвв пăрахса, урăх кĕвĕпе ташша йаҕĕç.

Йурлакан хĕрсене пĕтĕм аслă урам тăрса итлет

Лашисене пăхăрха,
Пĕкрен çӳлте пуçĕсем!
Аҕисене пăхăрха,
Хĕрсем çинҕе куçĕсем!..

Анатран хăпараҭ ик хуркайăк, ик хуркайăк,
Тухса тулă сапсамăр! Сапсамăр!
Анатран хăпараҭ ик сар аҕа, ик сар аҕа,
Тухса алăк уçсамăр! Уçсамăр!..

Атăл çинҕе хăмăш кашлаҭ,
Мамăк вĕçет, мамăк вĕçет,—
Ҕун хурланаҭ, куççуҕ йухаҭ!
Шăпăр-шăпăр çăмăр çăваҭ, çăмăр çăваҭ,
Ҕӳреҕе витĕр курăнаҭ! Курăнаҭ!
Пирĕн ĕмĕр иртесси, иртесси
Витĕр пăхсан курăнаҭ! Курăнаҭ!

Хĕрсем çапла йурлани урамран пӳрте уççăнах илтĕнсе кĕҕĕ. Тимуш амăшне хăпартлантарса йаҕĕ.

— Тухса пăхха, Тимуш! Урама тухса пăх!..

Анҕах ывăлĕ халĕ те амăшне итлемерĕ. Урамалла сиввĕн кăна пăхса илҕĕ. Ăшĕнҕе тата каларĕ

— Тем парсан та тухмастăп. Çулла акă пулла кайатăп. Вăрманта çӳретĕп. Çулла пултăрха, çулла... терĕ.

Амăшĕ те, аҕин шухăшне пĕлнĕ пек пулса, урăх шарламарĕ.

— Хăй çавăн пек ĕнтĕ манăн ывăл. Халăх выҕаннă, ҕӳхеннĕ çĕре тухма йуратмасҭ. Çынсен аҕи-

сем пек нихçан ашкăнса çӳремест. Кĕнекипе пӳртрех ларат... Те ашшĕ ырă маррийех ăна çынтан йутшăнма вĕрентрĕ. Пĕлместĕп. Ӳссе çитĕнсен мĕнлескер пулĕши тата? тесе шухăшлат амăшĕ хăй ађи çинђен.

XII.

Аслă урам хайхи пушшех асса, выљанса карĕ. Çăварни ђупакансем пĕр йĕрпе çеç те мар, икĕ йĕрпе харăс, йунашар ăмăртмалла ђупа пуçларĕç. Пĕр-пĕринђен аран-аран пăрăнса çитерессĕ. Çăварни хĕрĕсемпе пĕрле ӳсĕрсем те, халиђђен урамра курăнманскерсем, таçтан сиксе тухса, хăйсем майлă йурлама та кăшкăрма тапратрĕç.

— Ей! Йай-й! Ĕçери?.. Йурлари?.. Савнари?.. Ех-х! тет пĕр ӳсĕрĕ.

Тепри тата, çаппа çара пуçăн çул варринех тухса тăнă та, пĕтĕм иртен çунасене кăшкăрса хăратма тапратнă.

— Епĕр ка-а-а-м-м?.. Ђукмар Йаку ывăлĕ Иван, теççĕ пире. Пăрăнăр унтан! Çул парăр ăна!.. Çул парăр! тесе **çула урлă кармакланса-хăлаçланса** тăрат.

Кай йенђен пĕр лайăх пар пĕрĕхтерсе килет. Лашисем, çутă тимĕр кăваксем, тытса ђармалла мар,—çунатлă çĕлен пекех йавăнаççĕ. Пĕккисем çине лайăх йышши ђакăр-симĕс тутăрсем çакса йанă. Шăнкăравĕсем вĕрçĕн пек,—айакранах çутăлса пыраççĕ.

Халăх хушшинђен:

— Пуйан Миҭук хĕрĕсем килеҫҫĕ. Курăр лайăхрах! тенĕ сасăсем илтĕнсе карĕҫ.

Унтан та пулмин, вăрăм пушă: шарт! шартлатрĕ те, тахăш пĕри:

— Пăрăн! Пăрăн! Таптаса кайаҭ вĕт! ҭесе кăшкăрса йаҙĕ.

Ӳсĕр паттăр йăн-йан пăхкаларĕ. Пăрăнма мар, ҫаплипех лашасем айне таптанса кĕҙĕ. Лашисем ҙарăнмарĕҫ. Мĕнле ҙупса килнĕ аплипех ҫын урлă каҫса карĕҫ.

Урам варринҙе ҙĕп-ҙĕрĕ хĕрлĕ йун сапаланса кайса, шурă йура хĕретсех пăрахрĕ ҫав. Йунлă вырăнта хайхи ӳсĕр ури-аллисемпе тапаҫланма хăтланаҭ. Нумай та иртмест, йăнăшса ахлатни, усал сăмахсемпе вăрҫа-вăрҫа ылханни ҫын ăшĕнҙеп асаплăн хирĕлсе тухаҭ.

— Ай!.. Ай-й! Мурсе-ем!.. Халерсе-е-м! тесе пит хăрушла сасăпа ҫухăраҭ паҫăрхи паттăр.

Халăх ҫавăнтах йĕри-тавра хупăрласа илет.

— Ей, Ҙукмар ывăлĕ, ҙутах вилеттĕн вĕт!

— Ҙукмарпа та хăратаймарăн курăнаҭ.

— Ара, вилет анҙах. Ан кулăр унтан.

Йăнăшакан-ҫухăракан ҫыннăн сасси те, халăх шавлани те ҙасах лăпланҙĕҫ. Пит йăвăр аманнăскере, пĕрин ҫуни ҫине илсе вырттарса, килне турттарса карĕҫ.

Ҙӳреҙе патĕнҙе хăйĕн йурă кĕнекипе ларакан аҙа, малтанах, тем пирки ара, темле... хĕпĕртенĕ пек пулҙĕ. Йунланса пĕтнĕ ӳсĕре курсанах вăл:

— Анне, пăх-халĕ!! Урамра мĕн хăтланаҫҫĕ? Есĕ тата мана унта кăларасшăн, терĕ.

Амăшне апла каласан тата малтан хĕпĕртенĕ пек пулни çавăнтах таçта çухалђĕ. Тимуш каллех паçăрхи ађа пулса тăђĕ.

— Ех, пуйан тавраш! Мĕнлеха лашисене ђармалла мар. Лаша вĕсен çеç мар вĕт. Ђармасан, ыттисен те таптама пултарать, терĕ йулашкинђен ним каласа йама пĕлмен амăшĕ.

Ывăлĕ ăна хăлхана ђикнĕ пек турĕ.

Анђах аслă урам йепле çĕмĕрĕлни, шуйхашни çине урăх çавăрănса та пăхмарĕ. Аслă урам мыскарине вăл тахçантанпах курнă пек, пĕлнĕ пек пулђĕ.

## XIII.

Ђукмар Йаку Иванĕ виçĕ кунтан «çўлти патшалăха» кайнă. Унăн ўтне çăва çине турттарса кайнине пирĕн Тимуш урама тухса тăрсах пăхнă. Тупăк хыççăн халăх пит сахал пынă. Хĕрарăмсенђен пĕр арăмĕ кăна ĕсĕкле-ĕсĕкле утнă. Тимушсен килĕ çумĕпе анакан урлă урама çитсе тухсан, çав тăлăха йулнă хĕрарăм, сасартăк çырма йеннелле çаврăнса тăнă та, такамсене шутсăр хытă, макăра-макăра ылханма тапратнă.

— Ман упăшкана пĕтерекенсем, тенĕ вăл.—Çаратса та çынсене лартса пуйнипе иртĕхсе кайнăскерсем!.. Мăйракаллă шуйттансем! Мана макăртнăшăн хăçан та пулсан хăвăрăн макăрмалла пултăр. Туррăн хайар çилли ўктĕрех сирĕн çине. Ман ылханни хăçан та пулсан çиттĕрех. Çаратнипе ĕмĕр пуйан пулаймăр... ĕмĕр кулаймăр çынсенђен! тенĕ Иван арăмĕ.

Вара каллех, тупăк лавĕнђен йулас мар тесе, хăвăрт-хăвăрт уттара панă. Ĕсĕклемешкĕн, такамсене ылханмашкăн çав çавах ђарăнман хăй.

Ăна куçпа курса иртерсе йама çамрăк ађашăн темле, пит йăвăр пек туйăнса кайнă. Çăварнире урамра пысăк трамă пулнă иккенне ђи малтанхи хут лайăххăн ђухласа илнĕ вăл. Тăлăха йулнă Иван арăмĕ пуйан Миťук килне ылханнине те çавăнтах пĕлсе илнĕ.

Мĕнлеха апла? Амăшĕ те çавнашкалах каламасти вара: Миťук вăрттăн-вăрттăн çаратса, йўнĕ хакпа çуксенђен çĕр тара илсе, кантуртисене кўптерсе пуйнă, тесе? Хăш ђух, çырма хĕрринђи пуйан çинђен сăмах-йумах тапрансан, амăшĕ те çавăн пекех калаť çав. Çавăн пекех!..

Ђукмар Йаку Иванĕ арăмĕн çав тем-те-пĕр сунакан ылханлă сăмаххисем ђăнах тĕрĕс пулсассăн... Ой, вĕсем тĕрĕсси пирки хапха умĕнђе тăракан ађа урăх иккĕленмест ĕнтĕ! Вăл сăмахсем ăна сасартăк хăратса, çўçентерсе йараççĕ. Çавăнтах пуйан Миťук сăнĕ таçтан тухса тăраť. Тимуш вăл сăна пит лайăх кураť: ытла пысăках мар, çи-пуçĕ йака, куçĕсем хĕсĕкрех те ђейен çутăла-çутăла илеççĕ. Ăçтан хăватлă пултăрха ку çын! Кĕрешсессĕн такам та çĕнмелле ăна. Арăмĕпе ађисене илестĕк, вĕсем те ытлашши вăйлăскерсем пулас çук. Çапах та, çынсем тем пирки, теме кура пит хăраççĕ вĕсенђен. Хирĕç мĕн пулсан, ырă йатпа ђĕнсе, çĕлĕк илеççĕ. Пуç тайаççĕ. Тем пек йăпăлтатаççĕ. Анђах, калаçнă çĕрте Миťук килĕнђисем пĕри те пулман вăхăтра, çав ыррăн пуç тайакан

çынсемех лешсенђен тăрăхласа кулма, вĕсене çиме-кăшлама тытăнаççĕ. Хăйсем йуратманнине хытах палăртаççĕ вара. Çамрăк ађа ăна та асăрханă. Мĕн пирки апла пулса тăнине вăл нумайђђен ним те ăнланайман.

Ун шухăшĕпе çапла тухнă: çынсем куç умĕнђе нихçан пĕр-пĕрне тĕрĕссине каламаççĕ. Йалан суйма та тĕрĕссине пытарма тăрăшаççĕ. Куç хыçĕнђе тин тĕрĕсрех каланăн туйăнаҭ.

## XIV.

Çынсем мĕн пирки апла хăтланаççĕха? Сăмахран, Миҭук çинех акă мĕншĕн тĕрлĕ ђух тĕрлĕ пăхаççĕ?

«Пуйан... Пуйан Миҭук... Пуйса кайнă... Çукка ăçтан хисеплетђĕр ара вĕсем?»

Ку сăмахсене çамрăк ађа илткеленĕ. Акă ĕнтĕ пĕлмен йапаласене карса тăракан ђаршав хайхи тинех уçăлнă пек пулаҭ. Тимуш тинех хăйне хăй ним йăнăшмасăр тавăрса калама пултараҭ: çав «пуйан» тенипе «çук» тени çынсене хирĕçтерет иккен! Çавăн пирки ара пуртараххисемпе çуккисем пĕр-пĕринпе нихçан ђĕререн калаçмаççĕ. Çавăн пиркийех акă хăй мулĕпе иртĕнекен-мухтанакан Миҭукăн çутă, тимĕр-кăвак лашисем Ђукмар Йаку Иванне ним хисеплемесĕр таптаса, ун урлă каçса кайрĕç.

Тимуш тата хытăрах çўçенсе илет.

— Йепле аттене таптаса кайман вĕсем? тесе ыйтаҭ хăй ăшĕнђе.

Ахаљ ђух ашшĕне йуратмасҭ пулсассăн та, хаљ

ăна хĕрхеннĕ пек пулаЎ. Пуçа пĕрре пырса кĕнĕ ырă мар шухăш çаплах пĕр вырăнта çавăрăнса тăраЎ унăн.

— Пуйан лашисем пур çуксене те çавăн пек таптаса, каçса кайастăк... мĕн тума пулаЎха вара?

Тăнлă ађа çавăнтах пур пуйансем çине тарăхса кайаЎ. Çынсем хушшинђе ун пек тĕрĕс мар йĕрке пуррине хăй тĕллĕнех ђухласа-циссе илет те, ун пирки акă такама хытах çиленме пуçлаЎ. Анђах çапах та, пĕтĕм ăс вăйне, кĕлеткине йăвăрлатакан йапала çинђе çамрăк пуç ытла нумай ђарăнса тăмасЎ. Ђасрах хăтăласшăн унтан...

Карташĕнђен çунашка туртса кăлараЎ те, Тимуш сырмана йарăнма вĕçтерет. Каçпала ађапăђа темĕн ђухлĕ йарăнакан. Тантăшсемпе пĕрле пит лайăх çке кунта! Ђăн-ђăн ирĕк çав, ђăн-ђăн савăнăç!

## XV.

Çăварни тахçанах иртнĕ. Çанталăк çуркунне йене кайнă. Хĕвел хĕрӳллĕрех пăхаЎ. Вăрман хĕррисемпе сăрт çиййĕсем хуралнă. Хĕллехи тĕтрелле пăтранђăк пĕлĕт тавраш̆ĕ те ав йар уçăлса тăраЎ.

Çутçанталăк хĕллехи ăйхăран вăранаЎ.

Çутçанталăк хăй сăнне улăшаЎ.

Çавна кура шкул ађисем те ытларах хĕпĕртесе выљама пуçлаççĕ. Ирхине вĕсене, йе уроксем хушшинђе, тултан класалла аран-аран кĕртетĕр: пĕр пĕр çĕрте çаплах ашкăнаççĕ, выљаççĕ, кĕрешеççĕ.

Тимуш вăл ушкăна йермен. Вăл, хăй пеккисемпе пĕрле, пĕр хĕрринђе çав ушкăн хăтланнисем çине пăхса тăраЎ.

Тăхăнасса хура тăла сăкман, хура путек тирĕнђен çĕлетнĕ калпак тăхăннă. Класра хĕрлĕпе кăвак çипрен тĕртсе тунă кĕпепе те кăвак йĕмпе ларать. Хăш ђух тата улађа кĕпе тăхăнать. Хура çўçне нихçан та çитĕнме памасть. Ўснĕ пеккине амăшне хађăпа кастарать.

Хăйне тирпейлĕ тытнăшăн, тата вĕренессе те лайăх, тăрăшса вĕреннĕшĕн, Тимуша уђитлĕсем йуратаççĕ. Йекор Павăлђ йатлă вĕрентекенĕ пĕрмайах вара, ађасене çиленсе çитнĕ хушăра, ăна ыттисем умĕнђе мухтаса илет.

— Акă Тимушах курăрха: нихçан сирĕн пек йапăх çўремест. Вĕренессе те лайăх вĕренет, тет.

Вĕрентекен апла каласан, класри ађасем хăйсен тантăшне сиввĕн пăхса виçеççĕ. Малти парттă хушшинђе ларакан хĕр ађасем те, шурă-кăвак тутăрлă пуçĕсене кайалла пăрса, Тимуш çинелле йăл-л кулса пăхаççĕ. Вĕсем апла пăхсан Тимуш, вăтанса, хĕрелнĕ пек пулать. Çавăнтах тата, вĕрентекен ăна ытти ађасем умĕнђе мухтанă-мухтаманах, хăйĕн ырă амăшне аса илет.

Амăшĕ ывăлне кашни ирех, çунакан кăмакара паранкă пăрахса илсе тăварланă купăстапа тăрантать те, шкула тухса кайас умĕн çапла каласа вĕрентсе йарать:

— Асту, ђипер çўре. Кĕпе аркисене лайăхрах хĕстер. Пуçна тураса кай. Пыршиххине аванрах çых. Çынсем: çавăн ађи те ашшĕ хăраххийех, тесе ан калађђăр... Асту, ан ман вара, тет.

Амăшĕ вĕрентсе йанине аса илсен Тимуш, класра ђипер ларнă çĕртех, сасартăк хĕпĕртесе ўкет. Ку-

ҫӗсене выљатса-ҫутӑлтарса илет. Ҫавӑнтах амӑшӗн: пысӑкланха, ывӑлӑм!.. Аҫунтанах хӑрамӑпӑр, тенӗ сӑмахӗсене те таҫтан, маннӑ ҫӗртенех шухӑшласа кӑларать. Хӑй те сисмест, ирӗксӗрех ун пуҫӗнҽе ҫакнашкал шухӑшсем сике-сике тухаҫҫӗ:

— Пысӑкланамха. Вӗренем... Вӑйланам. Ҫын пулам, теме тытӑнать ҫак пӗҽӗк ҫын.

Класри аҽасем, вӗрентекен мухтанипе кӑмӑлсӑр пулсассӑн та, Тимуша хӑйне пӗр сӑмах та шарламаҫҫӗ. Хӑйсене хӑйсем ҫав ӑслӑ аҽаран хӑранӑ пекле тытаҫҫӗ. Тата пӗҽӗк тилӗсем йевӗрлех йӑпӑлтатаҫҫӗ ӑна.

— Тимуш, калаха: ман сатаҽ тӗрӗси?.. Ман мӗнле?... Мана туса пар-ха, теҫҫӗ.

Хӑшӗ парттӑ айӗнҽен пӗр-пӗр ҫимелли йапала: кукӑљ, пиремеҽ йе пулӑ мӗн тыттарать.

— Ан шарла. Хӑвӑртрах кала, тет вӑрттӑн сассипе.

Тимуш хӑш пӗр аҽине вӗрентекен пекех тӑнлантарса парать ҫав.

— Пӗҽӗк вӗрентекен, тесе калӑр ун ҫинҽен.

Уншӑн ӑна аҽасем йуратаҫҫӗ.

## XVI.

— Шӑнкӑр-шӑнкӑр-р-р! шӑнкӑртаттарать шӑнкӑрав.

Тулти вӗт-шакӑр халӑх шӑнкӑрав сассине илтмӗш пулать. Ирхи хӗвел ӑшшинҽен пӑҽӑ, тусанлӑ ҫӗре никамӑн та кӗресси килмест.

Тимуш, аҽасем кӗрессе кӗтсе, шкул умӗн карлӑк ҫинҽе ларать. Ун патӗнҽех, хӳмме ҫумӗнҽе, хӗрсем

йур ҫӑмаккисемпе перкелешсе-кулкаласа илеҫҫӗ. Пӗр-иккӗшӗ кӑна, тантӑшӗсен вӑййине хутшӑнмасӑр, кӑшт леререхре хӗвел ҫуттипе хӗрӗнсе тӑраҫҫӗ.

Ҫав иккӗшӗнҫен пӗри, хура ермеклӗ те шурӑ тутӑр ҫыхнӑскер, темшӗн, ӑраснах илемлӗ хӗр аҫа пек кӑтартса тӑраӗ. Пӗвӗ унӑн кӗске. Сӑнӗ-пуҫӗ ҫӑнах та пит тӑп-тӑп. Ҫивӗт вӗҫӗ тӗксӗмрех йӗс тӗслӗ. Те хӑй лутраран, кӗлетки сарлакарах кӑтартаӗ.

— Санкка! Кайӑр унтан, хӑмме ҫумӗнҫен! терӗҫ те выҫакан хӗрӗсем, астумасӑр Санккан шурӑ тӑтӑрлӑ пуҫ тӳпине йӗпе йур ҫӑмаккипе ҫат! лектерҫӗҫ.

Карлӑк ҫинҫе ларакан Тимуш Санккана ҫавӑнтах хӗрхенсе илҫӗ. Выҫакан хӗрӗсем ҫинелле кӑмӑлсӑрла пӑхрӗ. Ӑна Санккан кӑвак куҫӗсем ҫасах курса йаҫӗҫ. Тимуша ӑшшӑн пӑхса-ҫутӑлса илҫӗҫ ҫав.

Санкка куҫӗсем курни карлӑк ҫинҫе ларакана лайӑх мар пек туйӑнҫӗ. Хӑвӑртрах тепӗр йеннелле ҫавӑрӑнса ларса шухӑша карӗ. Санккан ашшӗпе хӑйӗн ашшӗне, Санккан амӑшӗпе хӑйӗн амӑшне, Санккасен килти пурнӑҫӗпе хӑйсен килти пурнӑҫне танлаштарҫӗ. Мӗншӗн апла танлаштарма кирлӗ пулнине Тимуш хӑй те калама пултараймасӗ, ыттисем те пӗлеймеҫҫӗ ӑна.

Санккасем Тимушсем пурнакан урам тӑваткалӗн ту йенҫе, сылтӑм кӗтессинҫе пурӑнаҫҫӗ. Ҫавӑнпа пӗрне пӗри аван пӗлеҫҫӗ.

Аҫа шухӑшӗсем, вӗлвӗҫҫи пекех, пит хӑвӑрт вӗҫме тапратрӗҫ.

Тимуш шухӑшлаҫ:

— Унӑн ашшӗ те, амӑшӗ те лайӑхскерсем. Ӳсӗрпе шуйӑхмаҫҫӗ. Вӑрҫмаҫҫӗ. Пӳрҫӗпе хапхи те лайӑх вӗсен. Пирӗн анне анҫах лайӑх. Атте...

«Атте» тенӗрен, Тимуша Санкка патӗнҫе татах темле, аван мар туйӑнса кайаҫ. Санккаран вӑтаннӑ пек пулаҫ. Санкка майӑн ытти аҫасем умӗнҫе те сасартӑк йутшӑнса илет... Шкул алӑкӗ уҫӑлҫӗ те, шӑнкӑрав сасси аҫасене паҫӑрхинҫен те хыттӑнтарах ҫӗнсе илҫӗ.

— Кӗрӗр ҫасрах! Илтместӗрим тата? тесе ҫухӑраҫ шӑнкӑртаттараканӗ, Иван йатлӑскер.

Аҫасем тин уҫӑ алӑк умнелле кӗпӗрлене пуҫлаҫҫӗ.

## XVII.

Малтан турӑ саккунне вӗрентмелли урок пулаҫ. Аҫасем, урокӗнҫен ытла, вӑрӑм ҫӳҫлӗ, вӑрӑм тумтирлӗ, каҫака сухаллӗ, хайар-ҫакӑр куҫлӑ, пӗрӗнҫӗк ҫамкаллӑ, ҫӑсланка, хыткан паҫӑшкӑран питӗ хӑраҫҫӗ. Унтан хӑранипе пурте малтанах ҫӗтресе тӑраҫҫӗ.

Акӑ клас алӑкӗ уҫӑлҫӗ.

— Хайхи усал... каҫака сухалӗ кӗрет, терӗ пӗри шӑппӑн, Тимуш хыҫӗнҫех тӑраканскер.

Аҫасем пурте кӑпӑртатса ура ҫине тӑҫӗҫ.

— Тешурнӑй! Ҫиттай ҫарӳ непеснӑй. Кто ҫекоҫнӑ тешурнӑй? тет паҫӑшкӑн ҫиллӗ сасси.

Тешурнăй, хайхи Иван, ђи хыçалта ларакан кĕçĕллĕ, шатраллă вăрăм ађа, çĕре ӳкернĕ кранташне илмешкĕн парттă айнелле пуçне ђикнĕ те, йерипен мĕшĕлтеткелесе ура çине тăрат̆.

— Ђарӳ непеснăй уттешит... уттеш... тесе, пĕр ик-виç вырăнта аташкаласа, аран ирхи кĕлле вуласа парат̆. Вуланă хушăра сахалтан пĕр вăтăр-вăтăрпиллĕк хут хĕрес хывса илет.

Пађăшкă тешурнăй çине пăхса тăрса, çилленсе карĕ. Пит çăмартисене хĕретсе йађĕ. Сĕтел хушшинђен тăрук ура çине сиксе тăђĕ те, ним сăмах мĕн ђĕнмесĕр, ађасене сивĕ куçĕсемпе шăтара-шăтара, шăртлана пуçланă çӳçне шăм турипе йакаткаласа, урай тăрăх тек каллĕ-маллĕ уткалама тапратрĕ.

Класри ађасем пурте ăшĕсенђе:

— Мантан ыйтмасан йурĕђђĕ... Ах, мантан ан ыйттăрђђĕ, тесе ђĕтресе лараççĕ.

Класра кам пуррипе çуккине тĕрĕслесе пĕтерсен, пађăшкă тапратрĕ кам иртнĕ вырсарни кун ђиркĕве пыманнисене айăплама.

— Ваççилйĕв Крикори, мĕншĕн ђиркӳре пулман?

— Атте сывмар пулнă. Килте кирлĕ пулнă.

— На колени, некот̆ай! Аçуна сансăр пуçне те пăхакан пулнă. Таса ђиркӳрен йулмалла мар. Турăран хăраса пурăнма вĕренмелле. Макçимăв Çемйон, мĕншĕн пулман?

— Аттесем вăрмана вутă турттарма кайнă. Мана килтен пăрахса кайма хушман.

— Тошĕ на колени. Каврилăвă Алексантрă, мĕншĕн ђиркĕве пыман?

— Анне йамарĕ. Пăртак ирĕкрех кун çип çума кайса килер, терĕ.

Санкка йађĕ тухсан, Тимуш, темшĕн, пађăшкă çине хытă тарăхса карĕ. Ой, тăшманах мĕн пирĕн пађăшкă! Ађасене каласа пĕтерме те памасť çав.

— Оççиппăв Тимофей! Мĕншĕн ĕлĕкхи вырсарни кун, пăлхавăшни праçникĕнђе, ђиркўре пулман?

Тимуш, пăлхавăшни иртсен тепĕр кунне, шкула кайман. Çавăнпа та вăл халĕ: ăна манса тăкайнă пулĕха, тесе шухăшланă.

— Пыма май килмен, терĕ вăл ытла та хăйуллăн. Ун пек халиђђен нихçан каламан.

Ађасем ăна тĕлĕнсе пăхса илђĕç. Пађăшкă мал танах ним тавăрса калама аптăрарĕ. Хăйнех темле лайăх мар пулђĕ пулас. Çутă-хура сăнлă ађа ăна пăртак хытăрахах каларĕ çав. Пĕтĕм клас çаплçурри ытла пађăшкăн хайар суђĕ аллине кĕрсӳкрĕ. Хăшне ђĕркуççи çине лартнă. Хăшĕ тата, са халтарах «çылăхлисем», ура çинђех тăраççĕ.

Тимуш ђĕркуççи çинђе ларать. Ун патĕнђех, çтена çумĕнђе, Санккан пански ђулхаллă, шурă пи тăлаллă хитре урисем çамрăк, çăмăл кĕлеткине тўп тўрĕ тытса тăраççĕ.

## XVIII.

Ку—ађасемшĕн ђи асаплă сехет хушши шутлана. Турă çынни—пађăшкă мĕн пирки çав терийе хытă асаплантарать-ши вăл? Çав тери хытă кулать мăшкăлать ара? Ађасем кун çинђен шухăшласах мĕ

ӑман. Вӗсен тӗлӗнҫен паҫӑшкӑ темле, сирсе йама пултармалла мар вӑйхӑватӑнах курӑнса тӑнӑ.

— Петров Иван! Ну-кӑ «Ҫару непеснӑй» каласа пар.

Паҫӑшкӑ хӑйне хӑй ирӗксӗрлекелесе тулашӗнҫен ҫемҫе кӑмӑллӑ пек пулҫӗ те, йури сӑнамаллах, вӗренекен аҫасенҫен тешурнӑй лайӑххӑн каласа парайман ирхи кӗлле ыйтма тытӑнҫӗ. Парттӑ хушшисенҫен халҫ пӗр аҫи, халҫ тепри, халҫ тата тепри, тӑваттӑмӑшӗ, пиллӗкӗмӗшӗ,—и-и! пурте ура ҫине тӑрса пуҫӗсене уса-уса йаҫӗҫ. Пӗри те пӗлекен ҫук!

«Айӑпланнисем» те паҫӑшкӑна хирӗҫ ним ҫӗнмеҫҫӗ. Класра шӑпӑрт... Паҫӑшкӑ аҫасене питрен ҫупа-ҫупа йарас патнех ҫитрӗ. Ним тӑваймасӑ. Атӑ кӗллисене пӗтӗм вӑйӗпе шат-шат! шатлаттарса утса ҫӳрет. Аҫасене хӑтӑрса та, кӑшкӑрса та пӑхаӑ.— Пӗри те пулсан каламӗҫши? тесе, кӑшт йӑвашланнӑ пек пулаӑ. Ҫуллӑ ҫӑвар тутисемпе йӑпӑлтатма тапратаӑ.

— Тӑр, Тимофей! Каласа пар ҫав тӑманасене.

Тимуш, ҫӑнах та, паҫӑшкӑна ытлашши уртарас мар тесе, ирхи кӗлле пӗр йӑнӑшмасӑр каласа параӑ.

— Каврилӑвӑ Алексантрӑ! Тепӗр хут вуласа пар. Есӗр (ытти аҫасене калаӑ ӗнтӗ) лайӑхрах итлӗр! тет.

Санкка та лайӑх каласа панине курсан Тимуш, тем пирки ара, хӗпӗртенӗ пек пулҫӗ. Хӑмаҫ кӗпеллӗ те шурӑ тутӑрлӑскер ӑна пуринҫен те лайӑх хӗр аҫа пек туйӑна пуҫларӗ.

Паҫӑшкӑ, татах йури сӑнамалла, ыттисенҫен те

тепĕр хут ыйтма тытăнҫĕ. Аҫасем ҫаплах пĕри те ҫĕнмеҫҫĕ. Ҫав ҫавах, паҫăрхин пекех тăраҫҫĕ.

Паҫăшкăн кайалла ҫакма пуҫланă ҫилли ҫасах ҫĕнĕрен капланса, тулса ҫитрĕ. Тапратрĕ вăл аҫасене хирмешкĕн. Кайри парттă патне пырса тăҫĕ те, пĕр вунтăват ҫулхи пысăк аҫанах ҫӳҫрен йарса тытса лăскама пуҫларĕ. Аҫан пуҫне ҫиперех парттă ҫине ҫатлаттара-ҫатлаттара илет.

— Сăмсуна тасатаймастăн, ӳсессĕн те ҫав ҫавах... ҫ ă в а ш а х пулаӗ ĕнтĕ санран, тесе хирет хайхи аҫана[1]).

Унтан куҫĕсене хĕскелесе витлеме тытăнаӗ.

— Ҫапах та, каҫхине Йекор Павăлҫ вĕрентнине итлеме ҫӳретĕн пулĕха, хлыҥ! Найан!.. тата тем те каласа хăртса тăкаӗ. Сăмаххисем тăрăх пĕре те ҫиркӳ ҫынни, турра ҫывăх тăраканскер тесе каламалла мар хăйне.

Пĕтĕм клас ҫĕнĕрен ҫĕтреме пуҫларĕ.

Тимуш та сасартăк хăрана йерҫĕ. Аҫасене, пуринҫен ытла, паҫăшкă Йекор Павăлҫ йаҫĕпе теме систерсе, теме тĕртсе калани пит аван мар туйăнҫĕ.

## XIX.

— Ҫăнкăр-ҫăнкăр-р-р! ҫăнкăртаттарса илет коритортра.

---

[1]) Хăшĕсем калаҫҫĕ: ун пек усал пупах ҫук, пулман, теҫҫĕ Анҫах вăл пупа (паҫăшкăна) ман пуҫ шухăшласа кăларман, ăна епĕ хам пурнăҫран илнĕ. Вăл пуп пайан кун та пурнаӗ. Анҫах халҫ ĕлĕкхи пек мар ĕнтĕ: ҫылай йăвашланнă, ҫăвашсенҫен йĕрĕнмест, тăрăхламасӗ. Вĕсемпе килĕштерсе, ҫулланса пурăнма тăрăшаӗ халҫ.

Урок пĕтрĕ. Аҫасем пурте ҫăмăллăн сывласа йаҫĕҫ. Хăшĕ пĕри, куҫсене ҫĕрелле ҫалăштарса, пĕрпĕринпе вăрттăн кула-кула илме те хăтланаҫҫĕ. У-у! Урса ҫитнĕ паҫăшкă татах лăпланмасӗ. Тимушпа Санккасăр пуҫне, пĕтĕм класри аҫана пурне те, салтаксене стройа тăратнă пек, ҫи хыҫалти парттăсем хушшинҫен пуҫласа алăк патне ҫитиҫҫенех, пĕр ĕрет тăратса тухрĕ те, клас алăкне йари-и уҫса пăрахрĕ.

— Марш!.. Марш-ш! тесе аҫасене сылтăм аллипе сулла-сулла, хăмсара-хăмсара алăкран кăларса йаҫĕ.

Класра Тимушпа Санкка иккĕшех тăрса йулҫĕҫ. Хайар паҫăшкă клас алăкне коритор йенҫен шалт! хупса лартрĕ. Шала йулнисем, тĕлĕнсе хытса кайнăскерсем, пĕр-пĕрне куҫран тĕллесерех пăхса илҫĕҫ. Апла пăхни иккĕшне те темле, лайăх мар пек пулҫĕ. Ҫавăнтах тата иккĕшĕ те, вăйлă аслатиллĕ ҫăмăр хыҫҫăн ҫамрăкланса йулакан хĕвел пек, кăмăллăн кулса йаҫĕҫ.

## XX.

...Каҫхине Йекор Павăлҫ вĕрентнине итлеме килетĕн пулĕха? тесе, йури такама тĕртсе, тăрăхларĕ паҫăшкă.

— Мĕншĕн вăл апла тăрăхларĕ? Ку вăхăтра каҫхине вĕрентме пăрахтарнă вĕт!.. Мĕншĕн апла каларĕ?

Ун ҫинҫен класри аҫасем пĕлмеҫҫĕ. Ун ҫинҫен Тимуш анҫах пĕлет. Ҫавăнпа та вăл, паҫăшкă апла каласанах, сасартăк хăрана йерҫĕ... Ҫапла. Ун ҫин-

ђен урăх никам та пĕлмест. Йекор Павăлђ пĕлтерме хушман.

Аптăранипе ађасем Тимушран ыйтаççĕ.

— Тимуш, калаха: есĕ пĕлетĕн пулĕ? теççĕ.

Тимуш каламасť. Йури айаккалла пăрăнаť те:

— Пĕлместĕп, тет.

Йекор Павăлђ Тимуша хăй ађи пек йуратаť çав. Ăна вăл пĕђĕкреннех пĕлет. Тимуш ун куçĕ умĕнђе çуралса ӳснĕ. Тимушăн амăшĕ ырă çын, лăпкă, ăслă хĕрарăм. Упăшки пӳтсĕр çын, пурнăçа ĕçсе йараť... Çамрăк Тимуш çавнашкал çемйере ӳсет. Çамрăк Тимуш пĕђĕкреннех ырăпа усала кураť. Çамрăк Тимуш çавăнпа та йалан шухăшлă, тата пĕђђенрех уйăрăлса çӳреме йуратаť. Е-ей, Йекор Павăлђ пĕтĕмпех пĕлет-çке ун çинђен. Тимуша виттĕр пăхса кураť.

— Хĕрхенес килет ăна манăн. Ăслă ађа. Унтан çын тухма пултараť, тесе калаť вĕрентекен хăш ђух. Тимуша вара пушшех хытă йуратма пуçлаť. Шанасса та ăна хăй ађине шаннă пек шанаť.

Тимуш çавна пĕлет. Çамрăк ђĕре пурне те сисет. Çав сисĕмлĕ ђĕрийех ĕнтĕ вĕрентекене хытă йуратма хушаť. Вĕрентекен хушнине тăвасси—вĕренекен ађашăн калама çук пысăк ĕç. Вăл Тимуша çунатлантарса йараť. Вăл ăна пысăк çын... ĕçлĕ çын туса хураť. Ађа хăйне хăй паттăр выраннех шутлаť вара. Çамрăк паттăра тантăшĕсем те ирĕксĕрех хисеплеççĕ.

— Тимуш, калаха: есĕ пĕлетĕн пулђ? теççĕ.

Тимуш каламасť. Вĕрентекен калама хушман.

Мĕншĕн тесен, тантăшĕсем Тимуша çитекенĕ сахал. Çукпа пĕрех.

Çавăн пек пулнă пирĕн Тимуш.

Çавăн пек унăн вĕрентекенĕ.

Иккĕшĕ те пĕр-пĕрне хытă йуратнă, пĕр-пĕрне шаннă...

## XXI.

Шкул аҕисем киле саланнă ҕух, Йекор Павăлҕ вăл кун Тимуша хăй пӳлĕмне ҕĕнсе илҕĕ те каларĕ:

— Çавна, çавна пĕлтер есĕ. Каçхине шкула килҕҕĕр вĕсем. Ытти çынна никама та ан шарла, асту, терĕ.

Тимуш вĕрентекене хирĕç пĕр сăмах кăна уçрĕ:

— Йурат.

Шкул хутаççине хул айне хĕстерҕĕ те, пĕҕҕенех килелле уттарҕĕ. Ытти аҕасем таçта малта çĕмĕрĕлсе пыраççĕ. Вĕсем вĕрентекен шухăшне те, Тимушăнне те пĕлмеççĕ. Вĕсем ытла çамрăк халĕ. Пĕр Тимуша çеç темле, пысăк çын шухăшĕсем çавăрса илнĕ пек. Пĕр вăл кăна çамрăклах пĕлекенскер пулма тăрăшаţ... Шкул хапхинҕен тухнă-тухманах, хайхи каҕака сухалне курах йаҕĕ. Пахҕинҕе мăнтăр майрипе улмуççи куҕĕсене пăхкалаţ. Унтах кашталанса кайнă хĕрĕсем йурпа выҕаççĕ.

— Оççиппăв Тимофей! Мĕншĕн ыттисенҕен кайа йултăнха? Аљ Йекор Павăлҕ пĕр-пĕр ĕç хушрĕим?

— Çу-ук... ахаљ, терĕ аҕа пахҕари сасса хирĕç.

Каларĕ те, килелле васкарах сĕнклеттерҕĕ. Па-

ђăшкă ăна хысалтан çемйи мĕнĕпех сиввĕн пăхса йулђĕ.

— Ђейе ађа мĕн! терĕ çӳпçе пекех мăнтăр майри.

— Мошшеннĕк! терĕ хыткан, вăрăм пађăшки.

Пахђара вырăсла каланисем айакранах илтĕнђĕç. Тимуш кайалла çавăрăнса пăхрĕ. Пађăшкă ăна хаљ темле ĕç пирки вăрттăн тĕпђесе ыйтнă пекех туйăнса карĕ. Пађăшкă шкула та вăрттăн сыхласа пурăннă пек туйăна пуçларĕ. Ой, усал мĕн вăл пађăшкă тавраш... шкула вăрттăн сыхлаканскер!

Санккасен урамне çитиђђенех, Тимуш çав хайар пађăшкă килĕ çине тарăхса пыђĕ. Санккасен урамне тухсан, шурă тутăрлă, хура ермеклĕ пĕр лутра хĕр ађа урампа хăпарса кайнине курах йађĕ.

— Санкка пыраť ав!.. Хăйсен хапхи патне çитсе тăраť мĕн.

## XXII.

Класра вăл кун Тимушпа Санкка иккĕшех çийеле тухнă: иккĕшĕ анђах каласа панă «Ђарӳ непеснăйне». Ыттисем пĕри те лайăх калайман. Ахăр, Санкка та Тимуш пекех пултараť-тăр çак! Каврилăвă (Санккана çапла ђĕнеççĕ шкул ађисем) тăрăшса вĕреннине Тимуш халиђђен те сăнанă. Анђах çак кун татах пит паллă пулђĕ вăл. Тата, хăйсем кĕтмен çĕртенех, иккĕшĕ те пĕр пек тăнли, пĕрне-пĕри çывăхрах пĕле пуçлани палăрђĕ вĕсен. Ку—ађапăђа хушшинђи пĕђĕк çеç йурату пулнă мĕн. Тимуш акă Санккана хăй пекех аван вĕреннĕшĕн йураťаť.

Хăйне таса та тăп-тăп тытнăшăн ытараймасҭ ăна. Тата ашшĕ! Мĕнле аван çын унăн ашшĕ! Хирĕç пулмассеренех Левентей пиҭҭи: Ăçта кайанха, Тимуш! тесе ыйтаҭи, йе урăх мĕн те пулсан ăшă сăмах ҭĕнетех çав. Тимушăн хăйĕн ашшĕ йалан такам çине çиленнĕ пек çӳрет...

— Е-й, вĕренетпĕр малашне Санккапалан. Пĕрпĕринҭен ăмăртса вĕренетпĕр. Пур аҭа та куртăр ак пире, йепле вĕреннине. Пĕтĕм класĕпе—Тимуш та Санкка, тетҭĕр. Мĕнле лайăх пулаҭ ку апла!..

Çапла шухăшсемпе пысăк çынла утса пыраҭ Тимуш хăйсен кил хапхи патнелле. Пăртак паттăрланасси, хăйне, тата Санккана та ыттисенҭен кĕретех уйрăм палăртасси килсе кайнă ку хут вĕренекен аҭан. Килне те çав шухăшсемпех вĕçтерсе кĕҭĕ.

## XXIII.

Каç пулсассăн каллех шкула ҭуптарҭĕ. Алăка хуллен уçса вĕрентекен пӳлĕмне кĕҭĕ. Йекор Павăлҭ шалта тĕттĕмрех ҭей ĕçсе лараҭ. Шилетпеле. Шилет айĕнҭе—шурă пасар кĕпи. Атă тăхăннă урисене сĕтел айнелле ҭăсса йанă. Вĕренекен аҭа алăк çумĕнҭен хăпса малалла пĕр утăм йарса пуссассăн тин Йекор Павăлҭ, ҭейне ĕçме пăрахса, çак тултан кĕрсе тăнă пĕҭĕк çын патнелле васкаса утса пыҭĕ.

— А-а, Тимофей килнĕ-çке, терĕ.—Ирт тĕпеле. Ак, ҭей тултарса парам сана... Ну, систертĕни?

— Систертĕм. Анҭах, Йекор Павăлҭ...

— Мĕн тата?

— Паҫӑшкӑ пайан, сирӗн йата асӑнса, темске тӗртсе каларӗ.

— Пӗлетӗн... Пирӗн паҫӑшкӑ—тӑшман вӑл.

Вӗрентекенпе вӗренекен аҫан малтанхи сӑмахӗ сем ҫавсем пулҫӗҫ. Йекор Павӑлҫ вӑйлӑ ҫутатака лamppине ҫутса йаҫӗ. Кантӑксене карса лартрӗ Алӑк ҫеклетмеллине те ҫеклетрӗ. Унтан, пӗҫӗк ҫын пӑн ӗҫес килмен ҫӗртенех, ӑна пысӑк сахӑр катӑк йарса ҫей тултарса паҫӗ. Унашкал амӑш те нихҫа ӗҫтермен. Тата вӗсен килте сӑмавар та ҫук. Мунҫ хыҫҫӑн йе шӑнсассӑн сайра хутра хуранпа вӗрет келеҫҫӗ. Хамиљнӑй ҫей вырӑнне сарӑ тӑрӑллӑ маї рӳшке курӑк йараҫҫӗ. Сахӑра амӑшӗ вара йала пӗҫӗккӗн-пӗҫӗккӗн катса ӗҫме вӗрентет... Тимуш ҫей ҫашкине, хӗррисенҫен ик алӑпа та пит асӑр ханса тытса, тути патнелле илсе пыҫӗ. Ытла вӗр пирки, кӑшт активсе пӑхсассӑнах, кайалла лартрӗ

Йекор Павӑлҫ ҫав хушӑра кӗнекесемпе тулн етташеркки патӗнҫе темскер пӑтраштарма тапрат рӗ. Хыт хупӑллӑ пысӑк тетраӗ туртса кӑларс страниtсисене уҫкаласа хупаӗ. Сарлака та мӑн пуҫ пе хӑй ҫӗрӗлле пӗшкӗртнӗ. Куҫ хупанкисем, йалан хи пекех, васкамасӑр сиккелесе тӑраҫҫӗ. Вӗсен айӗ пе вӗрентекенӗн таса, ҫырӑ куҫӗсем калама ҫук пи ӑслӑн пӑхаҫҫӗ ҫав. Тимуш ӑна ҫӗр хут та асӑрханӑ Вӗрентекенӗн куҫӗсене те шутсӑр хытӑ йуратс лартнӑ вӑл! Хаххулла усӑнтарса йанӑ хура усс тата Йекор Павӑлҫ сӑнне пӑртак сиввӗн пекл кӑтартаӗ. Анҫах Тимуш ӑна та тахҫанах хӑнӑхс ҫитнӗ: хӑй ҫав тери савнӑ ҫынра килӗшмелле ма йапала ним те тупман вӑл. Ним те.

Ђей ђашкине ак çĕнĕрен тути патне илсе пыђĕ. Вĕрискере, хуллен кăна вĕре-вĕре сивĕтсе, тинех ĕçме тытăнђĕ. Ĕçнĕ хушăра сасартăк çапла шухăш кĕрсе карĕ ун пуçне: мĕнле кунта ларатăп-ха епĕ? тесе тĕлĕне пуçларĕ пирĕн Тимуш.—Мĕншĕн Йекор Павăлђ ăна ытти ађасенђен ытларах йуратаŤ-ха? Ăçти çын-ши вăл хăй? Кунтан хĕрĕхпилĕк çухрăмрисем теççĕ. Анђах мĕнле йалне Тимуш пĕлеймест. Ун пирки вĕрентекенрен хăйĕнђен ыйтма халиђђен те хăйайман вăл. Хăйса ыйтас тесе темиçе хут хатĕрленсен те, çаплах иртерсе йанă. Уншăн вара хăйне хăй тарăхма, хăйне нађара хума тытăнаŤ. Йекор Павăлђ, калăпăр, ăна тем пек йуратнă. Тимуш хăй те лайăх вĕренекен шутĕнђе хисепленнĕ. Анђах хăйуллăх çитменни, çынтан именесси унăн ђылайа, пит ђылайа пынă. Килти çемйе пурнăçĕ пĕртте илемлĕ марри, ђăваш ĕç халăхĕ йăвăр пусмăрта тăни ађа ӳсессинђе те хытах палăрнă çав... Ей, тарса кайасђĕ ак ирĕк çĕре! Вăрмантах ав пит ирĕк пулмалла.—Анђах вăрманĕ пирĕн алăра мар-çке,—тесе калаŤ тата амăшĕ.

Кун çинђе те Тимуш, çав хăй хăйаймасăр тăнине çĕнтерес шутпа, вĕрентекенĕн йалĕ пирки ыйтса пĕлме хатĕрленсех çитнĕђђĕ ĕнтĕ. Сăмах ђĕлхе вĕçнех тухса тăнăђђĕ. Çук. Пулаймарĕ вĕт. Хăйса çитни ађана, хăй шухăшланине мар, урăххине тутарђĕ: сăмавар кранне пăрђĕ те, Тимуш хăйех хăйне ваљљи тепĕр курка вĕри шыв тултарђĕ. Çавăнтах вара çăмăллăн сывласа илђĕ.

— Тимофей! Есĕ лар-ха. Ыйтмасăр никама та

ан кӳрт, терӗ те вӗрентекен, хӑй ҫывӑракан йунашар тӗттӗм пӳлӗме кӗрсе ҫухалҫӗ.

— Йурат, терӗ ӑна хирӗҫ Тимуш.

Хӑйне, ҫавӑнтах тата, вӗрентекен йунашар пӳлӗмрен темскер илсе тухассӑнах туйӑнса кайат. Ҫав «темскер» пит хӑватлӑ йапала пулмалла. Анҫах мӗн-ши вӑл? Ах, пӗлесҫӗ ӑна... Ун ҫинҫен Йекор Павӑлҫ хӑй ҫӗнтернӗ ҫыннисем пухӑнса ҫитсен пӗлтерет пулӗ. Кунашкал пухура Тимуш пурӗ виҫҫӗмӗш хут пулат ӗнтӗ. Халиҫҫен пулнисенҫе вӑл хӑй пуҫӗнҫе тӑрса йулмалли ытлашши нимех те илтмен-ха. Ҫавӑнпа та ку ҫӗр ӑна темскер илтсе йулассӑнах туйӑннӑ.

— Ҫӑнах, мӗнле ҫын-ши пирӗн вӗрентекен? тесе йарат каллех хӑй ӑшӗнҫе.

Ун умне ҫавӑнтах шутсӑр нумай пӗлекен ҫын сӑнӗ тухса тӑрат. Вӑл—вӗрентекен ӗнтӗ. Вӑрттӑн пухусем пуҫтарса тем тума, пурнӑҫа та ӳлӑштарса йама шутлаканскер. Униҫҫе аппӑшӗ калакан йумахсенҫи паттӑрсем пекех. Асамӑҫсенҫен те ытларах пултарат-тӑр... Тӗлӗнмелле! Тимуша вӑл вӑрттӑн пухусенҫе пулмашкӑн йепле ҫармасӗ-ха? Йепле киле хӑваласа йамасӗ? Ах, шанат те ҫав ӑна. Тата, пысӑк ҫынсем хушшинҫе пулсассӑн та, Тимуш мӗн пӗлет вӗсен ӗҫне? Вӗрентекен каласа ҫӳреме хушманнине вӑл пур пӗр никама та каламасӗ.

## XXIV.

Вӗрентекен пурнакан хваттер алӑкне тахӑшӗ шаккат.

— Кам?

— Уксак салтак.

Туйаланса Хĕветĕр кĕрет. Вăрăм, çамрăк çын. Йаппун вăрçинҫе аманнă. Алăкран кĕнĕ ҫух такăнма тăҫĕ.

— Ех, çĕр çăтман влаçĕсем! Урасăр турĕç мурсем.

— Тĕрĕс калатăн, терĕ ăна хирĕç Йекор Павăлҫ.

— Çавăнпа та кĕрĕс-с! тутармалла вĕсене, тет шутник Хĕветĕр.

Тимуш сĕтел вĕçĕнҫе «Хыпар» хаçат тытнă та, Палтти тинĕсĕ патĕнҫи халăхсем—латтышсем, естонсем, литвасем улпутсен çĕрне туртса илесшĕн пăлханни çинҫен вуласа ларать.

— Пусарса çӳрекен салтаксем 25 çын персе вĕлернĕ, тет ҫĕтĕрекен çамрăк сассипе.

— Молотетс, Тимуш! Аван вулатăн.

— Йекор Павăлҫ! Тимуша сан ху патăнтах усрас пулать. Тăнлă аҫа вĕт!.. Йепле пулăшать вăл пире, тет уксак салтак.

— Тивес мар. Ун ашшĕ-амĕш пур, тет каллех вĕрентекен.

Алăкран тата икĕ çын кĕреççĕ. Вăй питтискерсем, уссиллĕскерсем.

— Пурне те ырă каç тума сунатпăр.

— Страшникĕ майри çумĕнҫех выртмалла пултăр! тет шутник Хĕветĕр.

Ыттисем кулаççĕ.

— Майри çумĕнҫе выртмасть вăл. Кĕçĕр пуйан Митук патне ĕçме кĕрсе карĕ, тесе сăмах хушать халҫ кĕнĕ пĕр арçынĕ.

Алăкран татах иккĕн кĕреççĕ. Ҫылай çула çитнĕ

хресҫенсем. Тăла пиншаксемпе, пир туллă алсасемпе.

— Ну, пурте пухăнҫĕç пулас.

— Пурте... Кала, Йекор Павăлҫ: епĕр итлекенĕсем пулăпăр.

— Мĕн ҫĕнĕ хыпар тавраш илтĕнет-ха Раççей ҫĕрĕнҫе? тесе ыйтрĕ ак кайран кĕнĕ пĕр арçынĕ.

Тимуш аллинҫи хаçата пăрахрĕ. Вăл вĕрентекен каланине итлеме хатĕрленет. Вăл кунта пухăннă çынсене пурне те пĕлет. Лешсем те ăна пĕлеççĕ. Ыттисем калаçнă ҫухне Тимуш сăмах мĕн хушмасӑ. Хăйне хăй çапах аҫа пекех тытаӑ çав. Аҫан ĕçĕ—вĕренесси, çитĕннийĕн—вĕрентесси. Тимуш пысăккисене итлесе, ăс пухса кăна лараӑ. Çамрăкскер, апла пулсан та, вĕрентекене ăçта май килнĕ унтах пулăшасшăн. Вĕрентекен пĕр-пĕр ĕç хушсан, сăмахран, çак каçах акă страшник йе урăх йут çын тăрук килсе кĕнипе кĕменнине пăхма тула тухса тăмашкăн каласан, Тимуш пĕр сăмахсăрах, ним хăрамасăр-тумасăр шкул умне тухса тăраӑ. Ытла та кулăшла-çке! Аллинҫе ун алтуйи пур. Такама çапса хăратасшăн унпала. Çапла, уйăх çутипеле, шкул тавра пĕҫĕк паттăр пек уткаласа çаврăнаӑ. Уйра шурă йур тĕксĕм сăнлăн çутăлса выртаӑ. Çырмара çӳçе-йăмрасем шухăша кайнă майлă пит шăппăн лараççĕ. Тимуш та акă шухăша кайаӑ. Анҫах мĕн çинҫен шухăшлаӑ-ши çав пĕҫĕк çын? Ой, шухăшсем нумай унăн.

— Атте кĕçĕр каллех таçтан ӳсĕр таврăнмасӑ-ши? тет вăл ҫас-ҫасах.—Аннене хĕнемест-ши?.. Вĕрентекен калаӑ: çĕрпе ирĕкшĕн... халăх пурнăçне

аванлатассишĕн пурин те хытă тăмалла, тет. Темле пĕлмелле мар сăмахсем асăнаť çав: револђутси... сотсиал-револђутсионер... респуплĕк... пăлхав. Вĕрентекен каланине лайăхрах итлесђĕ. Ахăр, шутсăр нумай пĕлет-тăр вăл... Ўсесђĕ те, ман та ун пек пуласђĕ, тет.

## XXV.

— Пирĕн крушок уçăлнăранпа, тесе калама таппатрĕ вĕрентекен,—ђылай пысăк ĕçсем пулса иртрĕç, терĕ.—Мускавра пулнă востанийе пусарса лартрĕç. Унта тем ђухлĕ çын вĕлерђĕç. Ирĕклĕх пулмалли çинђен кăларнă манифеста тўрешара хăйех таптаса пыраť. Патша ăна кайалла илђĕ. Пур çĕрте те хытă хĕстереççĕ. Ирĕклĕх мар, ун çинђен пухăнса калаçма та памаççĕ. Акă епĕр те ĕнтĕ, çакăнта ларакансем, ирĕклĕх пирки вăрттăн пуçтарăнса анђах калаçма пултаратпăр, тесе илђĕ пĕр ăстăрк вĕрентекенĕн пит çыпăçуллă витерекен сасси.

Ђăвашсем Шĕнерпуçĕнђе страшниксене пăсăлантарни çинђен каласа пырсан, пурте пĕр тăрук çунатланса карĕç.

— Вот аван тунă мĕн! Пур çĕрте те, çавăн пек, халăхпа пĕрлешсе тухсан, пĕтеретпĕр вĕсене... ђортсене! тесе хайаррăн та çиллĕн йунаса илђĕç.

Тимуш çавăнтах вĕрентекен хваттерĕнђе темле пысăк вăй çитĕннине курса йађĕ. Малтанах çав вăйран хăраса ўкнĕ пек пулђĕ. Унтан тата, çав ахаљ хăрани иртсессĕнех, тем пирки пит хытă хĕпĕртеме тытăнђĕ.

Вӗрентекен итлекенсене хуллентерех пулма ыйтать.

— Пуп пит кураймасть пире. Тен ҫын йарса итлеттерӗ. Елеклесе кӑтартӗ. Хамӑра тытса хуптарнипе ҫитмӗ, шкула хуптармалла тӑвӗ тата. Тӑшманах вӑл, тет Йекор Павӑлӗ.

Уссиллӗ ӗӑваш кантӑкран пуп ҫурӗӗ йеннелле аллипе йунаса кӑтартрӗ.

— Мур, вӑрӑм ҫӳҫ... Ҫавсем те пире пӗтереҫҫӗ, терӗ.

— Тимуш, тухса тӑр-ха тула.

Тимуш тула тухрӗ. Уйӑх курӑнмасть. Ҫӑлтӑр кусӗсем анӗах ҫап-ҫутӑ йӑлтӑртатаҫҫӗ. Ӑшӑ. Ҫур шӑрши ҫаплах сӑмсана перет.

Лайӑх-ҫке ҫавӑн пек ҫӗр тулта ҫӳреме!

Лайӑх-ҫке ҫавӑн пек ҫӗр тӑшмана сыхлама!

Пуп ҫуртӗнӗе хӑй ҫути ҫап ҫутӑ. Умӗнӗи ӗӳреӗисене карнӑ. Шкул йенӗине карман. Тимуш ҫав карман ӗӳреӗи ҫинелле куҫа пӗр сиктермесӗр пӑхма тытӑнӗӗ...

Вӑл хушӑра вӗрентекен крушок ӗленӗсене патшалӑхӑн 1-мӗш пухӑвӗ (тумӑ) ҫинӗен калама пуҫларӗ. Тумӑна мӗнле парттисем ытларах лекнине, мӗнле парттисем хирӗҫ тӑнине, тумӑ (ӗҫӗ ӑнас пулсан) халӑха мӗнле усӑ пама пултарнине, халӑхӑн хӑйӗн тумӑран мӗн-мӗн ыйтма кирлине пурне те... пурне те хытӑ тӑнлантарӗӗ.

Йулашкинӗен, тулта тӑракан Тимуша:

— Шанса пӑхарха, кӗтер, тенӗ сасӑсем алӑк хушшипе пӳртренех илтӗнӗӗҫ.

Йекор Павӑлӗ каласа пӗтерӗӗ. Киле саланма ха-

тĕрленеççĕ. Пуп ан куртăр тесе, килсене урампа каймарĕç. Шкул хыçĕпе, çырмапалан, пĕђђен-иккĕн туха-туха утрĕç.

— Ђипер кай, Тимофей! терĕ те вĕрентекен, йуратнă Тимушне алă парсах уйăрăлђĕ çав. Ĕмĕрлĕхе мар, ыранђђен кăна. Анђах ăçтан пĕлен? Тен нумайлăха...

Тимуш ун пирки шухăшласа мĕн тăмарĕ. Шкул карташне тухсассăнах, ăна акă Санкка,—шурă тутăрлă, хура ермеклĕ пĕр лутра хĕр ађа аса килђĕ.

— Санкка... Санкка мантан малтан сатађсем тăваť пуљ ĕнтĕ килте, тесе шухăшларĕ ăшĕнђе.

Халăх хушшине çутă саракан шкул çĕрлехи тĕттĕм ăшĕнђе инçетре пек пытанса йулђĕ.

## XXVI.

Хĕвел вăрман тăрне пысăк хĕрлĕ çăмха пек кусса тухрĕ. Çутă пайăркисем тӳрех шкул çине, шкул хӳмми çине ӳкрĕç. Çерçисем ирхи хĕвеле хӳмме çинђе ташласа хапăл тăваççĕ. Шкул ађисем те ирхи хĕвел ăшшинђе иртнĕ кунхи пекех выљаççĕ, ним хуйхăсăр, ним шухăшсăр савăнаççĕ. Анђах, çапах та, вĕсен савăнасси ку кун нумайа пымарĕ. Ађасенђен тахăш пĕри, шăппăнтарах каласа, усал хыпар систерђĕ:

— Ей, аťсĕмĕр... аťсĕмĕр! страшниксем... пăшаллă, хĕçлĕ страшниксем килеççĕ, терĕ.

Страшниксем, ђăнах та, йал старăстипеле шкул патне вĕçтерсе те çитрĕç. Тӳрех шкула кĕрсе карĕç. Вĕсем хыççăн ађасем те кĕмешкĕн хатĕрленсе пынăђђĕ. Лешсем йамарĕç. Ађасем вара пĕр çĕре

пуçтаранса кăн-и! хытса тăҫёç. Çулпала ак Тимуш килет.

— Тимуш, Тимуш!.. Шкулта страшниксем.

— Ҫăнах-и?

— Ҫăнах. Пире кўртмеççĕ унта.

Тимуш çавăнтах пуçне усрĕ. Мĕн иккенне туйса илҫĕ вăл. Вĕрентекене путех тытма килнĕ пулĕ, ахăр. Анҫах кам каланă-ши? Тимуш пуп çурҫĕ йеннелле çавранса тăҫĕ. Пахҫана тухмалли пĕҫĕк калитни уçах. Пуп хĕрĕ çав калиткерен тек шкул йенелле туха-туха пăхаҫ. Мĕн кирлĕ ăна? Ех, ку ĕçе никам та мар, çавсемех тунă-тăр...

Страшниксем—пурĕ вĕсем виççĕн—вĕрентекене шкултан илсе тухрĕç.

— Ша-а-кăм марш-ш! терĕç те, ăна вулăса илсе карĕç.

Тимуш лайăххăн курса та йулаймарĕ.

Вĕрентекен те, аҫасем çинелле пăхса, пĕр сăмах каламарĕ. Вĕт халăх, хăраса лартса, ним пĕлмесĕрех тăрса йулҫĕ. Анҫах пуп çемйи мĕнĕпех, пахҫана тухса, вĕрентекене усал куççемпе ăсатса йанине Тимуш пит аван асăрхарĕ.

— Попался! терĕ мăнтăр майри.

Ку çухăрашка-çинçе сасă урам урлă лайăххăнах илтĕнҫĕ.

— Мошенник! терĕ хыткан, вăрăм пупĕ.

Аҫасем ăна ытла лайăххăн илтеймерĕç. Вĕсем вĕрентекене страшниксем илсе кайнине хыçалтан нумайҫҫен пăхса йулҫĕç. Нумайĕшĕ уй хапхи патне çитех карĕç... Усал куççем хайар суннине пĕр Тимуш кăна пит аван курҫĕ.

## XXVII.

Тепĕр ирхине, кантăкран кăвак çутă кĕрсенех, Тимуш сасартăк вăранса вырăн çине тăрса ларђĕ.

Амăшĕ:

— Мĕн пулђĕ, Тимуш? Мĕншĕн ирех тăрса лартăн? Çывăр! терĕ ăйхине çĕненçи пек туса.

Ывăлĕ амăшне хирĕç васкалă-хăранă сасăпа каласа йађĕ:

— Тĕлĕк... Анне, тĕлĕк куртăм, терĕ.

Амăшĕ ăна илтмĕш пулђĕ. Вăл ђасах тепĕр хут çывăрса карĕ.

Çемйипех урайĕнђе çывăраççĕ.

Ашшĕ пĕр хĕрринђе:

— Хар-р-р! Хар-р-р! Харлаттарса çывăрать.

Апла харлаттарнине ывăлĕ йуратмасть. Харлаттарса çывăракан çынна курсан, Тимуш йаланах ӳсĕр ашшĕне аса илет. Ӳсĕр ашшĕ! Ăйхинђе те вăл ӳсрипе аташать пулĕ?—Хар-р-р! Хар-р-р! харлаттарать...

Вăранса ларнă Тимушăн шухăшсем пĕр вырăнта тăмаççĕ. Шухăшсем икĕ çулпа саланса кайасшăн. Урлă сак айĕнђи тĕттĕм çĕре пăхать те, Тимуш хăй тĕлĕкне çĕнĕрен курма хăтланать. Ашшĕ харлаттарнине итлеме тăрать те, тĕлĕк çавăнтах ун куçĕ умĕнђен тарса çухалать.. Ăна хăваласа та тытмалла мар. Анђах пĕр-пĕр хӳри тăрса йулать йулатех. Çав хӳререн йарса тытсан, таракан тĕлĕке тинех тытса ђаратăн.

Тимуш ку çĕр интереслă тĕлĕк курнă. Санккапа иккĕшĕ кантур йалне кайнă пек çав. Унта вĕсем

вĕрентекене хупса лартнă вырăна шыраса тупаççĕ. Йекор Павăлĕ мунĕа ĕӳреĕи йевĕрлĕ пĕĕĕк шăтăкран, темшĕн, вĕсем çинелле пит хĕпĕртесе пăхаТ. И-и! Мĕнле-ха апла! Вĕрентекен акă шкултах... хăй хваттерĕнĕех... Шилетпеле. Шилет айĕнĕе—шурă пасар кĕпи. Атăпа. Тем, пит тарăн шухăша кайса, пӳлĕмĕнĕе тек каллĕ-маллĕ уткаласа çӳрет. Санкка та унтах акă. Анĕах, тем çинĕен... тем шутсăр пысăк ĕç çинĕен хытă шухăшласа, пуçне хытă çĕмĕрсе утакан Йекор Павăлĕ малтанах Тимуша та, Санккана та курмасТ çав. Утнă ĕух куçĕсем... таса, пит ăслă куçĕсем унăн çĕрелле пăхса пыраççĕ. Ахаĕ те илемлĕ пĕтĕрсе лартнă хура уссине сылтăм алли пӳрнисем татах пит хитрелентерсе пĕтĕре-пĕтĕре илеççĕ. Пĕр сарлака пысăк çамки кăна ăраснах сиввĕн кăтартаТ мĕн. Çамкине кура Тимушпа Санкка çавăнтах вĕрентекенрен хăрама тапратаççĕ. Анĕах куçĕсем çав çавах ырă, çав çавах ытармалла мар... çынна хĕрхенерех паракан ăшă куçсем. Тимуш вĕсенĕен пĕртте хăрамасТ.

— Йекор Павăлĕ! тесе ĕĕнет вăл, тăрук хăйуллanса кайса.

— А-а, Тимофей... Каврилăвă Алексантрă! тесе, тинех сасă параТ хайхи тĕлĕкри çын.

Хăй урай варринĕе тăп ĕарăнса тăрса, темле, ытла та кулăшла карăнкаласа илет. Пĕртте ахаĕ ĕухнехи пек тыткаламасТ хăйне хăй. Калаçасса та аĕасемпе пысăккисемпе калаçнă майлă калаçаТ.

— Иртĕр, иртĕр тĕпеле. Мĕн алăк патĕнĕе тăратăр? Акă епĕ сире «Хыпар» хаçат вуласа паратăп, кĕнекесем... тет.

Аҫасем сётел умнелле пыраççĕ. Йекор Павăлҫ ҫăнах та вулама тытăнаť. «Раççей çĕрĕнҫе самана лăпкă мар, тесе илтĕнет акă унăн уçă кăна та йаланхи пекех кăмăллă сасси:—хапрăкри ĕçлекенсем... çĕр ĕçпе пурнакан хура халăх, ирĕклĕ пурнăç тăвас тесе, унта кунтах пăлханаççĕ... Хура халăх тăшманĕсем—çĕрулпуҫĕсем, хуçасем, ҫинавникпÿрократсем... страшник, шантармери таврашĕсем пăшалҫ пулҫккисене хĕрхенмеççĕ... Хура халăха йун айне таптасшăн... Пĕтĕм Раççей çĕрĕпе хĕрлĕ йун йавăнаť».

Çапла сăмахсем тухаççĕ вĕрентекенĕн çăварĕнҫен. Ахалҫ ҫух вĕсене пирĕн Тимуш «вăрттăн пухура» анҫах илтме пултарнă. Тĕлĕкре те çав сăмахсенех илтнинҫен шутсăр та тĕлĕнмелле-çке ара! Тата, пуринҫен ытла, Йекор Павăлҫ вăл сăмахсене пĕр Тимушпа Санккана иккĕшне çех вуласа пани пушшех хытă шухăшлаттарнă... Вĕрентекен пÿлĕмĕ вырăнне тĕлĕкре акă тем аслăш, вĕçĕ-хĕрри пăхса курăнман Раççей çĕрĕ пулаť-тăраť. Йекор Павăлҫ, Тимуш, тата Санкка—виççĕшĕ пĕрле—сасартăк йалтан йала, хуларан хулана, вăрмансене, сăрт-тусене, йухан шывсене хыçа тăрата-тăрата хăварса, кайăксем пекех вĕçме пуçлаççĕ. Хăш çĕрте шыври пулăсем йевĕрлĕ йарăна-йарăна илеççĕ. Хăш çĕрте тата, тусем урлă каçнă ҫух, тăват уран та утса пăхаççĕ, хырăмпа та шăваççĕ... упаленеççĕ. Хăш çĕрте калама çук хăвăрт пĕр вырăнтан тепĕр вырăна сике-сике ÿкеççĕ, хăш çĕрте вара пит асаплланма, вăй нумай хума тивет.. Раççей хулисем, хапрăк-савăҫĕсем, ҫаплă тăвĕсем кĕнекере ÿкере-

ӳкере кăтартнă манерлех иккен. Пур çĕрте те, ăçта çитнĕ унтах, хура халăх пурнăç наҫар пирки хытă пăлханса тăрат. Хăйĕн тăшманĕсемпе паттăрăн тытăççах çапăçат... Акă хирти аслă çул тăрăх, таçтан çав терийех пухăнма пултарса, хĕрлĕ шыв йевĕрлĕ йапала кĕрлесе килет. Вăйлă çăмăр хыççăн капланса йухакан çăра шыв майлă уçса пыраӳ малалли çулне.

## XXVIII.

— Ку шыв мар, ку—Раççей çĕрĕнҫе йавăнакан йун! тесе ăнлантараӳ вĕрентекен. Хăй ним те хăрамасӳ çав.

— Йун!.. Йун!.. тесе йараӳ Тимуш та хăй ăшĕнҫе.

— Ай, пирĕн йала йухса ан çиттĕрҫҫех ку йапала! тет Санкка сасси.

— Çитет!.. Сирĕн йала та çитет! тет каллех вĕрентекен.

— Ой, пирĕн вĕрентекенех калаӳ-ши кăна?.. Ытла та хăрушла калаӳ-çке вăл! тесе, Тимуш Йекор Павăлҫ сăнĕ пирки те иккĕленме пуçлаӳ. Санккапа иккĕшĕ вара сасартăк шутсăр хытă хăраса ӳкеççĕ. Пĕтĕм тĕнҫе тепĕр майлă çавăрăнса кайассăнах туйăнаӳ вĕсемшĕн. Хăйсемпе пĕрлехи пысăк çын акă—ҫăн вĕрентекен мар, таçта те вĕлерме, те йури çамрăклах асапсем курма йертсе кайакан асаймăçла арçын пек пулса тăраӳ. Тимуш çавăнтах вара çапла кăшкăрса йараӳ:

— Тĕлĕкре вĕт ку! тет.

— Тĕлĕкре! тет Санкка та,

Апла тесенех, вĕсем курни-туни пĕҫĕккĕн-пĕҫĕккĕн йалт ҫухалма тытăнаҫ. «Асаймăҫла арҫынтан» хайхи пуҫĕ кăна тăрса йулаҫ: вĕрентекенĕн пуҫех ĕнтĕ, пĕр куҫĕсем кăна хаҫ урăх ҫыннăнни пек — пит витлекен куҫĕсем!.. Усал куҫсем! Тем пирки пĕрмай кулаҫҫĕ, кулаҫҫĕ...

— Епех тĕрĕс пултăм, епех тĕрĕс, тесе каласшăн пулас ҫав етем пуҫĕ. Куҫĕсемпе кула-кулах таҫта кайса кĕрет... ҫухалаҫ. Тимушпа Санкка каллех кантур йаленҫе. Вĕрентекен те унтах лараҫ мĕн. Мунҫа ҫӳреҫи йевĕрлĕ пĕҫĕк шăтăкран, темшĕн, кусем ҫинелле ҫав-ҫавах, паҫăрхи майлах пит хĕпĕртесе пăхаҫ.

— Хăйне хупса лартнă. Анҫах мĕншĕн хĕпĕртетха вăл?

— Ирĕке кăларассине сиссе пулĕ!

— Ҫук. Уншăн мар. Вĕрентекенсен ушкăнĕ ҫĕнтерет пулĕ!

— Камсене? тесе ыйтаҫ Санкка тĕлĕкре.

Кантур хапхи умĕнҫе усал сăнлă страшниксем ҫӳреҫҫĕ. Кашниннех шашкă пур. Умĕсене хĕрлĕсарă кантрасемпе йаваласа пĕтернĕ. Хăраса каймалла та ҫав! Тимуш Санккана хирĕҫ хуллен те ҫăссарах тавăрса калаҫ:

— Страшник-се-не, тет.

Тĕлĕкре курăнни йулашки хут вара тепĕр тĕрлĕ ҫавăрăнса ӳкет. Тимушпа Санкка кайалла хăйсен йалне пĕр самантра пырса ҫитеҫҫĕ. Кантур йалĕ, кантур ҫурҫĕ, страшниксем, тата вĕрентекен пĕҫĕк шăтăкран хĕпĕртесе пăхни те таҫта айакка, вăрман хыҫнелле курăнми пулса йулаҫҫĕ.

Ҭимушпа Санкка акӑ хӑйсен йалӗнҭех. Вӑл кун вӗрентмен пулин те, шкултан килелле таврӑнаҫҫӗ пек. Шкул хутаҫҫисем те таҫтан тупӑннӑ вӗсен. Ҭиркӳ хурал-пӳрҭӗ тӗлне ҫитсен, хурал пӳрҭӗнҭен кусем патне пуппа пуйан Миҭук вӗҫтерсе тухаҫҫӗ. Ним сӑмах мӗн каламасӑр, хӑйхискерсем, Тимуша тӳрех тытса хӗнеме тапратаҫҫӗ.

Санкка Тимуш хутне кӗрсе сӑмах калаҭ:

— Ма тиветтӗр ӑна? тет.

Лешсем Тимушпа пӗрле Санккана та хӗнеме тытӑнаҫҫӗ.

— Акӑ сире вӗрентекен!.. Акӑ Йекор Павӑлҭ! Акӑ!.

Тимуш вара хытӑ ҫухӑрса йаҭӗ. Ҫухӑрсах вӑранҭӗ те.

## XXIX.

Вӗри паранкӑпа ирхи апат тунӑ ҫӗре кӳршӗ арӑмӗ пырса кӗҭӗ.

— Килех, Крахйан! Паранкӑ ҫиме лар, тесе ҭӗнҭӗ ӑна Тимуш амӑшӗ.

Ашшӗ пӗр сӑмах та ҭӗнмерӗ. Вӑл сӗтел хушшинҭе тем пирки кӗвӗлсе лараҭ.

— Кама ҫилентӗн, Уҫӑп? Мӗн-ха ним те ҭӗнместӗн?

Кӳршӗ арӑмӗ апла ыйтни Уҫӑпа хӑйне йури йӗкӗлтенӗ пек туйӑнҭӗ. Иртенпе тулса тӑракан ҫилли унӑн виҫинҭен тухса карӗ.

— Пирӗн ҫумра санӑн ӗҫ ҫук! терӗ Уҫӑп Крахйана хирӗҫ.

— Ара, ҫынна тӳрех ҫапла калама йураҭи? Ех, ку усала-а...

— Йурĕ-çке, Хĕветле. Епĕ уншăн çиленместĕп, терĕ Крахйан.

Уçăп ăш-ђикки вара пушшех тулса çитрĕ. Ђашкăран саланса тăракан вĕри паранкă йарса тытрĕ те, арăмне пуçран çат! çатлаттарђĕ.

— Ай!.. Ай-й! тесе çухăрса илђĕ Тимуш амăшĕ.

— Анне-е-е! тесе, сĕтел хушшинђе ларакан пĕђĕк Матĕрни те, хăранипе, макăрма пуçларĕ.

— Ех, уса-а-а-л! Пĕтерет вăл пирех....

Уçăп хăй арăмне хирĕç урăх ним те вăрçса мĕн каламарĕ. Пăтаран тăла пиншакпа калпакне илсе таçта тухса утрĕ. Çĕрме пуçланă кивĕ, саплăклă алăк кăна, ђун кĕнĕскер пек, йынăшса йулђĕ.

Тимуш çав пулса иртнинђен тĕлĕнмерĕ. Ун пеккисем ђас та ђас пулаççĕ вĕсен пӳртĕнђе. Апат хушшинђен тухрĕ те, хăйĕн «Песенник»-не алла тытса, кантăк çумне ларђĕ. Вĕренме ĕнтĕ каймалла мар. Шкула вăхăтлăха хупнă. «Урăх уђђитлĕ тупăнмасăр та вĕрентме пуçламаççĕ. Сирĕн шкулта патшалăха хирĕç пыракан усал йапаласем çинђен вĕрентме тытăннă» тесе кантуртан килнĕ хута çав кунах халăх çинђе вуласа кăтартнă. Вуланă çĕре икĕ страшник йанă.

## XXX.

— Мĕн пулнă-ха сире пайан, Хĕветле?

— Ех, Крахйан аппа! Пирĕн пурнăç пирки мĕн каламалли пур ĕнтĕ. Пирĕн пурнăç—йытă пурнăçĕ вăл. Мĕн ĕçленине, мĕн тунине пĕтĕмпех арçынĕ ĕçсе йараť. Тепĕр-ик кăвас хумалăх çăнăх пур. Вара тем çитерет ĕнтĕ. Миťукран кивçен кайса

илессипе аптăратрĕ пайан ир. Кивçенне татаймасан, пĕр-пĕр ĕçлесе парăпăр Миŭука тесе йăпăлтатма тытăннă мана. Ђăтаймарăм... хытă йатласа каларăм: пĕтĕм пурнăçа есĕ пĕтерен, терĕм. Ђипер пурăнма пĕлсен, çав пуйан Миŭука та пуççапас çук епĕр, терĕм. Миŭук сана нихăçан та ырă тăвас çук. Вăл пуйан вĕт! Пуйан çынăн куç выçă, теççĕ. Унăн йытти тилĕ тытаŭ, теççĕ. Мĕн çыхланмалли пур унпала!..

— Çапла ара, çапла, терĕ Крахйан.—Уçăп та мĕншĕн ђарăнмасŭши çак пăртак? Çемйене манса пурăнни мĕн майĕ пултăр вара вăл?

Крахйанпа Тимуш амăшĕ сăмахланăçем сăмахха йараççĕ. Акă вĕсем хăйсен вăхăтĕнђи пурнăç çинђен халаплама тытăнђĕç.

— Самани те çав халĕ, терĕ Крахйан,—пăсăлса карĕ. Выçлăх çулсем ђас та ђас пулма пуçларĕç. Йураŭ тата ку вăрçи [1]) нумайа каймарĕ. Ђипер çынсемех пĕтсе килђĕç унтан... Халĕ тата халăх хушшинђе темскер стутентсăсем патшана хирĕç вĕрентсе çŭрет, теççĕ.

— Стутентсă мар, стутент теççĕ вĕсене.

— Йураŭ пире, терĕ Крахйан Тимуша хирĕç.— Пĕлмен сăмаха ăçтан тĕрĕс калан? Картне лартсан та йурĕ пире... Пĕлтĕртенпе ĕнтĕ унта-кунтах халăх пăлханнисем çинђен калаçаççĕ. Страшниксене вĕлеркеленисем çинђен те илтĕнет. Кантурсенђе ларакансене улăштаркалană теççĕ вулăсĕвулăсĕпе.

---

[1]) Йаппун вăрçи.

— Ара, мĕн пĕлетпĕр епĕр пӳртре ларса? терĕ Тимуш амăшĕ.—Пĕрех хут, арçынĕ те çавăн пеккисене пĕлсе çӳремест. Ĕçме анҫах маçтăр... Халăхĕ те ахалех пăлханмасть пулĕ çав. Ырă йĕрке тăвасшăн пăлханать пулĕ. Ăçтан пĕлетпĕр епĕр? Акă ĕнер аҫасене вĕрентекене тытса кайнă, тет. Тимуш каламан пулсан, ăна та пĕлес çук.

«Вĕрентекен» тенĕрен, Тимуш хăй курнă тĕлĕкне аса илҫĕ. Темшĕн, тĕлĕкĕ çинҫен унăн амăшне каласа кăтартасси килҫĕ.

— Анне! Епĕ кĕçĕр пĕр усал тĕлĕк куртăм.

— Мĕнле тĕлĕк вара?

— Епĕ пайан çав тĕлĕк пирки хăраса вăрантăм.

— Ах, каллех ырра мар пулĕ...

Тимуш хăй курнă тĕлĕкне каласа паҫĕ. Анҫах, темшĕн, Санкка йатне пытарса хăварҫĕ. Санкка çинҫен йурийех ним те шарламарĕ.

— Ҫышкисемпех кӳпкерĕç вĕсем, тесе пĕтерҫĕ вăл.

— Ырра мар ун пек тĕлĕк, терĕ Крахйан аппăшĕ.

— Паҫăшкăпа Миттука çилентернĕ пулĕ-ха есĕ? тесе ыйтрĕ амăшĕ.

— Çук. Пуйан Миттукпа епĕ нихçан та калаçман, терĕ Тимуш.

— Тĕлĕк курнакан вăл, анҫах ахалтенех курăнмасть теççĕ, тесе каларĕ татах амăшĕ.

Çавăнпа вара пӳртри халап-йумах пĕтрĕ. Кӳршĕ арăмĕ килне карĕ. Тимуш амăшĕ тула кантăр вăрри тӳме тухрĕ. Тимуш пӳртре пĕҫĕк йăмăкĕпе йулҫĕ.

## XXXI

Ашшĕ киле каçхине, хăй çутсан тин таврăнҫĕ. Ăçта çӳренĕ вăл таранах? Мĕн туса çӳренĕ?—Никам та пĕлмест. Таврăнасса каллех ăшҫиккине тултарса таврăнҫĕ. Сăнне-питне тем пирки пушшех усаллантарса лартнă. Кăшт тупса сыпкаланă пулас. Анҫах нумай сыпман. Мĕншĕнха хытах çиленнĕ апла?.. Ăна малтанах амăшĕ те, ывăлĕ те пĕлмерĕç.

Уçăп сĕтел патĕнҫе ҫылайҫҫен ҫĕнмесĕр ларҫĕ. Арăмĕ сăмах ҫĕнсен те, упăшки куççене çавăрса сиввĕн кăна пăхкаласа илет. Çиленсессĕн пит çăмартисем йаланах хĕрелеççĕ унăн. Хĕретнĕ пĕремĕк тĕслĕрех пулаççĕ.

Тимуш амăшĕ тӳсеймерĕ.

— Мĕн ҫĕнмесĕр ларатăн есĕ, тарăхтармĕш! тесе хыттăн çухăрса ыйтрĕ Уçăпĕнҫен.

Пӳрт ăшĕ çавăнтах тепĕр майлă çавăрăнса ӳкрĕ. Уçăп арăмне аçа çапнă пек вăрçса тăкрĕ. Пĕр усал сăмах та асăнманни йулмарĕ. Пĕҫĕк Матĕрне, хăранипе, каçса кайса макăрать.

— Сире-е... сире-е-е епĕ!... Ывăлĕ мĕнĕпе иртсе кайма пуçланă есĕр! тесе çĕмĕрлет Уçăп.

— Ах!... Тимуш! Сана та хĕнесшĕн, тухса тар ҫасрах, ывăлăм! тесе çухăрнă хушăра, Тимуш, хăй те сисмен, урам хушшине тухнă тăнă.

Çĕр тĕттĕм. Хăй-çутисем кăна курăнкалаççĕ. Сутă тăвакан тутарсем лавсемпе таçта иртсе кайаççĕ. Ашшĕ çĕмĕрĕлни, çĕрле майĕпе, инçетех илтĕнет. Тăрса йури итлекен çынсем çапах сахал. Камах

итлетӗр ӗнтӗ? Итлесе йалӑхтарнӑ та пулӗ нумайӗшне!.. Тимуш, ашшӗ ҫӗмӗрӗлнине итлемешкӗн, хӑракаласа, кантӑк ҫумне пырса тӑђӗ. Пӳртре пасӑрхинђен пӑртак лӑпланнӑ. Ашшӗ пӗђђен кӑна ҫӗмӗрлет. Амӑшӗ хирӗҫ ђӗнме пӑрахнӑ. Вӑл пӗђӗк Матӗрнене йӑпатаҫ.

— Ан хӑра, хӗрӗм, ан хӑра, тет.

— Сирӗн пирки пайан пађӑшкӑпа Миҫук умӗнђе намӑс курмалла пулђӗ манӑн, тет ашшӗн хайар сасси.— Ађуна ђармастӑн, уђђитлӗ патне каҫхине ҫӳрететӗн... пӗђӗклех љутсионер, антихрист ҫынни пулма вӗрентетӗн, тесе йатларӗҫ вӗсем мана пайан. Сире-е-е!!!.. Вӗлеретӗп пурне те! терӗ те, саплӑклӑ алӑк хыттӑн йӑнӑшса йађӗ. Ашшӗ тула тухрӗ. Ывӑлӗ сасартӑк хӑрама тытӑнђӗ. Шӑннӑскер пек сиксе ђӗтрет. Шӑлсем шарт-шарт-шарт шартлатаҫҫӗ. Мӗн тӑвас?! тесе ыйтаҫ Тимуш ҫавӑнтах хӑйӗнђен хӑй. Урама тухсан, ашшӗ тӳрех йарса тытма пултараҫ. Тарас!.. Тарас! тенӗ шухӑш кӗрех карӗ ađа пуҫне. Вӑл вара Крахйан аппӑшӗсем патне тарса кӗђӗ.

Крахйан аппӑшӗ ӑна улӑмран вырӑн сарса пађӗ.

— Выртса ҫывӑрах, Тимуш! Ан хӑра. Ытла хӑрасан ухмаха йерет, теҫҫӗ. Ыранђђен тӳрленӗха аҫу. Ҫывӑр, терӗ.

— Ҫук, ҫук... пирӗн атте вӑл нихҫан та тӳрленес ҫук, терӗ ӑна хирӗҫ ađа сасси. Тем пирки ара, ашшӗ нихҫан та тӳрленес ҫуккине, Тимуш ку самантра хӑйне кура мар хытӑ ӗненсе лартнӑ. Вӑл ҫав тӗрлӗ татса каланинђен Крахйан аппӑшӗ те

хăраса карĕ. Çавăнпа Тимуша хирĕç шарламалли çĕнĕ сăмах пĕртте тупаймарĕ.

Пÿрте тарса кĕнĕскер, улăм вырăн çине пысăк çынла хуллен ҫăсăлса, майланса выртрĕ. Выртсассăн та ăйхи ҫасах килмерĕ хăйĕн. Çамрăк Тимуш вăл хушăра нумай йапала çинҫен шухăшласа выртрĕ. Пуринҫен ытла ăна пуппа пуйан Миҫук—ҫиркÿ старăсти курайманни хытах тĕлĕнтерҫĕ. Мĕн тунăха вăл вĕсене? Мĕншĕн вĕсем ăна, çав çамрăк аҫана та курайманççĕ?.. Тимуш ун пирки хăйне хăй тĕплĕн тавăрса калаймасҫ. Шухăшласан, шухăшласан, вĕрентекен пуп пирки каланă сăмаха астуса илет. «Тăшман вăл» тенĕҫҫĕ ак вĕрентекен. Йекор Павăлҫ калани çумне Тимуш халĕ хăйĕнҫен хушса хураҫ.

— Тăшмансем вĕсем! тесе йараҫ ăшĕнҫе. Анҫах апла хак пани мĕне пĕлтернине Тимуш хăй те лайăххăн пĕлеймест. Çапах та: «Тăшман!»... «Тăшман!» тенĕ сăмаха мĕн çывăрса кайаҫҫенех асăнса выртрĕ.

## XXXII.

— Пирĕн атте мĕншĕн пĕрмай ĕçет-ши çак? тесе ыйтрĕ пĕрре хăйĕн ытарайми амăшĕнҫен.

— Ах, аҫам, ăçтан пĕлес ăна... мĕн пирки пăсăлса кайнине, терĕ ывăлне хирĕç амăшĕ.

— Ĕçмен ҫухне çапах лайăх пирĕн атте! тесе каларĕ вара ывăлĕ.

Амăшĕ ку тĕлте шухăша кайнă пек.пулҫĕ. Пиҫĕсем çинҫи пĕрĕнҫĕксем темле, хăйсем пит нумай хурлăх... куççулҫ пытарса тăнине кăтартса, ăрас-

нах илемлĕн хутлана-хутлана илтĕç. «Пирĕн аннен пĕр çылăх та çук пулмалла, пĕр çылăх та... Таса тунлă хĕрарăм пулĕ вăл» тесе илтĕ çавăнтах хăй ăшĕнте Тимуш, амăшин питне авантарах пăхса хак парсассăн. Çав таса амăшне вара кĕнекере калакан сăваплă хĕрарăмсемпе танлаштартĕ. Таçта çӳлти, çит хут пĕлĕт тăрринти илемлĕ рай пахтинех те хăпартса лартрĕ... Çапла, пăртак тарăнса тăрсан, ассăн сывласа йатĕ те, çылăхсăр амăшĕ каларĕ ăна:

— Тухăн пурăнатпăр епĕр. Аçу çампах та, çук пурнăç çине тарăхса, ĕçме вĕрентĕ пулĕ çав. Антах апла пурнăç тума пулмасӑ та-ха ăна, терĕ.

Ку сăмахсене илтсен, Тимуш хăй амăшне тата хытă йуратса йатĕ. Ашшĕне нихçан та хĕрхенмен, нихçан та ун майлă пулманскер, хал вăл акă ăна та шеллеме тапратрĕ. Хăйсем тухăн пурăннăшăн такама айăплама, тахшин çине хытах тарăхма тăте те, тахăшне тĕлли-паллипе шыраса тупма пуç вăйĕ çитеймен пирки, çавăнтах тата хăйне хăй пусарса хутĕ. Никам çине те çиленме пăрахрĕ. Антах, ун вырăнне, çамрăк Тимушăн çак латсăр пурнăçран каллех таçта тарса пытанас шухăш килсе карĕ. Ой, пĕртте аван мар, усал шухăш! Ăçтан килсе кĕме пултарнă вăл ата пуçне? Паллах, çав шухăш ун пуçĕнте нихçан та пит уççăн палăрман. Апла пулин те, Тимуша пур пĕрех хыттăн систернĕ, пур пĕр урăхла майлă туртăнма ирĕк паман, хăй йенеллех туртнă. Ытарайми амăшĕ, тата хăшпĕр йуратнă çынсем, тантăшсем пулмасассăн, тăнахах та, Тимуш пӳртрех лармалла мĕн. Нихçан

ниçта тухмасăр пурăнмалла. Анђах çавсем пур пирки халĕ пĕр пĕђђен питĕрĕнсе пурăнма пултараймасҁ вăл. Ахаљ... пурнăç ăна, хăй ађа пулсан та, пĕртте аван, пĕртте пулса çитнĕн туйăнман.

Çылăхсăр амăшĕ татах каларĕ акă:

— Тур-папайах пўрнĕ пулĕ çав пире... нађар пурнăçпа пурăнма, терĕ.

Ку сăмахсем вара пĕђĕк ывăлне пĕртте килĕшмерĕç. Амăшĕ патĕнђен çавăнтах таçта, айаккалла пăрăнса карĕ вăл...

## XXXIII.

Ашшĕ çинђе пăртак ђарăнсах тăрар.

Макçăм Уçăпĕ вунçиђђĕре тăлăха йулнă. Вунтăххăрта авланнă. Çак хаљ асăнакан вăхăтра пĕр вăтăр виççĕ таврашĕнђе пулмалла. Йаш ђухне ним те ĕçмен. Лăпкă ађа пулнă. Ашшĕ-амăшне ĕçре пулăшнă. Пĕр-икĕ хут Мелекес йенне те ĕçлеме кайса килнĕ çамрăк ђух, мĕншĕн тесен, Тимуш аслашшĕ те ђухăн пурăннă.

— Çын пурнăçĕ пĕр пек килмест, тенĕ ваттисем.

Уçăпшăн та пурнăç пĕр пек килмен. Сахал пурăнсах нумай курмалла пулнă. Хăйсен йалĕ ађисемпе Мелекесрен йулашки хут ĕçлесе таврăннă ђух, Уçăпсен çулĕ урлă пĕр хура-ула кушак каçса кайнă. Вăл тахăш йалăн çĕртме пуссинђе пулнă. Шăрăх вăхăт. Пур çĕрте те тусан măкăрланса тăнă. Çавра çил, тем пысăккăш капан пек капланса, çўлелле йавăна-йавăна çўренĕ. Ĕçес килни аптăранă. Уçăпăн йулташĕсем кушака айакран кăшкăрнипе

çул хĕрринђен хăваласа йама хăтланнă. Кушак вĕсене ним те итлемен. Усал куçĕсене çутăлтарса кăна ларнă. Вара тăпра мăклашкипе персе пăхнă. Кушак хайхи çул урлă ђупсах каçса кайнă.

— Çук пирĕн телей! тесе кăшкăрса йанă Михаља Кирли.

Тимуш ашшĕ ăна лайăх астăваť.

Халĕ ун пек кушаксене, усалсене, суйа паллăсене, çамрăксем мар, ваттисем те ĕненсех каймаççĕ. Епĕ те ĕнентересшĕн мар сире. Анђах халапĕ çавăн пек пыраť. Пурнăçĕ мĕнле, халапĕ те çавăн пек ĕнтĕ...

Çул урлă кушак каçса кайсанах, Уçăпсен сыпасси пит килнĕ. Хĕвел калама çук хытă çунтарнă. Кăсйара тата укçа та пăртак пулнă.

— Ĕçес ара, ĕçес! тенĕ Хĕветĕр.

— Ун ђул айакка кайса ĕçлесе те ĕçмесĕр таврăнатпăр. Мĕн икĕ ĕмĕр пурăнас пурим? Ĕçес! тенĕ Михаља Кирли.

Улпут патĕнђе ĕçлесе пурăннă ђух Уçăпсем ăраснарах çӳренĕ. Ĕçесси çинђен шухăшламан. Пăртак та пулин киле илсе килмеллĕх укçа тупма ĕмĕтленнĕ. Ытти йулташĕсем хупахалла ђĕнсен те, кусем вĕсенђен айăккалла пăраннă.

— Хытă ђăваш! тенĕ вĕсем çинђен вырăссем. Анђах çакăн ђух вĕсене ĕçес шухăш кĕнĕ.

— Епĕр çынсенђен мĕнтен кайа вара? Тавай пăртак сыпса пăхăпăр! тесе кăшкăрнă пĕтĕм ертел.

Пĕр хупаха кĕнĕ те, ĕçлесе тупнă укçисене нумай та хăварман, ĕçсе йанă. Кайран хуйхăрнă, хуйхăрнă, ним тума та пулман. «Пӳрмен çăкăр çă-

вартан тухса ӳкет», йе «Пуйма кайнӑ, пӗтсе килнӗ» тенӗ пек пулнӑ вӗсенӗн.

Киле таврӑнсан, пуринҫен ытла, Тимуш аслашшӗпе асламӑшӗ хӑйсен ывӑлне нумайҫҫен вӑрҫнӑ ҫав. Асламӑшӗ макӑрнӑ.

— Йал кулли... йал кулли, тенӗ вӑл.

— Ырӑ ҫыннӑн ырлӑх тивет, усаллӑн шырлӑхӗ, тенӗ аслашшӗ. Тимуш хӑҫ аслашшӗне те, асламӑшне те курман. Вӗсене ашшӗ каланипе кӑна пӗлет.

Тимуш ашшӗ вара, килтисем вӑрҫнине тӳсеймесӗр, пӗр вӑхӑтра кунӗ-кунӗпе курӑнмасӑр ҫӳренӗ. Ӗҫме вӗрене пуҫланӑ. Ҫавӑнтан тинех телейсӗр кунсем пуҫланаҫҫӗ. Ҫавӑнтан тинех хура-ула кушак ҫул урлӑ каҫса кайни те пӗтӗмпех пулса пыма тытӑнаҫ.

— Ҫук пирӗн телей! тенӗ ун ҫух Михаҫа Кирли.

Ҫӑнах та, ун ҫухне ҫамрӑк аҫаскер, Михаҫа Кирли 1904-мӗш ҫулта Йаппун вӑрҫинҫе вилҫӗ. Хӗветӗр хӑрах урапа таврӑнҫӗ. Уҫӑпӑн пурнӑҫӗ такӑннӑҫем такӑнса пыраҫ.

## XXXIV.

Ашшӗ пурнӑҫӗнҫенех Тимуш тата тепӗр истори пит лайӑх пӗлет. Ӑна вӑл, пысӑккисем пӗр-пӗринпе калаҫнине итле-итле, хӑй ӑшӗнҫе тытса йулнӑ ҫав. Тен, сайра хутра хаҫ ашшӗне шеллес килтерекенӗ те, ҫак историйех пулса тӑмасҫ-ши? Кирек мӗнле пулсан та, ку—интереслӑ, трамӑллӑ истори.

Макҫӑм Уҫӑпӗ пӗрре, хӑй Тимуш амӑшне каҫҫа илсессӗнех, Ишеке ҫурта ҫутма кайнӑ. Ишек ҫулӗ—

вăрăм çул. Ђасах çавăрăнса килмелле мар. Çул çинђе ђарăнмаллисем те пулаççĕ. Кайалла таврăннă ђух, Уçăп пĕр аслă йала кĕрсе çĕр выртма шутланă. Çула майăн ăна пĕр манахла майра тĕл пулнă. Шурă тутăрне тутарла туса çыхнăскер. Сăнĕ-пуçĕ илемлĕ. Куçĕсем выђаса тăраççĕ.

— Ларт мана.

— Ăçтисем пулатăн? тесе ыйтнă унтан Уçăп.

— Саласем, тенĕ лешĕ.

— Мĕн ĕçре?

— Праçвер пĕçерсе пурăнатăп... Хваттере те пĕрлех кĕретпĕр пулĕ?

— Кĕрес ара. Çĕр хута каймалла мар, тенĕ Тимуш ашшĕ.

Утă çулнă вăхăт. Хĕвел анасси нумай йулман. Вирйал çыннисем улăхран таврăннă. Майра лартнă Уçăп урапи çине пăха-пăха иртнĕ.

— Мĕнле манашкă лартнă ку ђăваш?

— Ђиперскер мĕн! тесе тĕлĕннĕ вĕсем çав майрараи.

Хваттере пĕр килех кĕнĕ. Хуçи—шурала пуçланă старик. Карђăккипе иккĕшех пурăннă. Пит шанђăклă, турра пит ĕненекен çынсем. Çывăрма выртас умĕн иккĕшĕ те нумайђђен сăхсăхнă, çĕре ўкеўке пуççапнă, ăшра темскер сăмахсем каласа мăкăрмăкăр мăкăртатса илнĕ. Хăш каçсем, ашшĕ килте пулман вăхăтра, Тимуш амăшĕ те çавнашкалах кĕл тăваť вара. Анђах, пĕр турра кăна асăнас вырăнне, пит нумай йатсем асăнса тухаť çав! Вăл шутра ывăл ађи çаксене ăшра тытса йулма ĕлкĕ-

рет: çӳлти атте турра, çĕр çинҫи ырă турра, хайарриме, инкек-синкекрен, ҫир-ҫĕртен упраса усраканнине, вилĕм-çĕтĕм йараканнине, тата урăххисене те пĕр-иккĕшне... Ашшĕн пĕр турăран ытла пулман, мĕншĕн тесен, нумай йат асăнса кĕл тунине нихçан та курман ăна. Сăхсăхассине те вăл пит васкаса сăхсăхать, йăлашăн кăна туса илет темелле, ҫĕркуççи çине ларса пĕрре те пуççапмасть. Ҫиркĕве вара, çав авлансассăнах Ишек туррине çурта çутма кайса тĕп пулса килнĕренпе, урăх хăçан та пулсан ура йарса пуснă-ши? Пуснă пулсан та, ывăлĕ лайăххăн астăваймасть ăна. Пĕр сăмахпа каласан, ашшĕ унăн турăсем çине çиленсе çӳренĕ. Çавăнпа вăл вĕсене йатран асăнма пĕртте йуратман. Йатран асăнакансенҫен кулкалама анҫах пăхнă... Çак историри старикпе карҫăкран та акă миçе хут тăрăхламан-ши пурĕ?

— Вĕсене çапах айăпламастăп епĕ. Вĕсем аван çынсемех пулнă мĕн, тесе калать ашшĕ, хăйпе пулни çинҫен тапратмассеренех.—Лашана, çапла, сарайне урапа çумнех кăкарса хутăм, тет:—хам, хуçасемпе пĕрле, пӳртре выртрăм. Хĕрарăм манаха кĕлет умне сарса паҫĕç. Ырă мар пулассине ҫĕре малтанах сисрĕ манăн: темскерле, васкасах, карт-карт! тапнă пек çав. Пĕртте лăпкă мар ăшăмра... Ĕненмерĕм ăна-кăна: ахаљ пуљ, терĕм. Ҫас çывăрса карăм хам. Ирхине хайхи, каçхине шиклентерсе илни, ҫăнахах та пулса тăҫĕ вĕт: кĕлет умне выртнă хĕрарăм манах таçта çухалнă, ман лаша та çук... Çапла кăтартрĕ вара Ишек турри! тесе пĕтерет Макçăм Уçăпĕ.

## XXXV.

— Хамăр çылăхăмăрсемшĕн кăтартрĕ пулĕ çав, тесе, сăмах хушса хурат҄ Тимуш амăшĕ.

Каласа кăтартаканĕ акă çавăнтах тарăхса кайат҄:

— Мĕн шуйтанне вăл терийех пысăк çылăх тунă пулĕ епĕр? Пĕр лашасăр тăратса хăвармаллăхах, тет.

— Çурта лартни килĕшмен пулĕ апла, тесе, пушшех ђĕрре кĕртсе йарат҄ ăна Хĕветле аппи.

— Мĕншĕн ху каймарăн тата еппин... епĕ пĕлместĕп пулсассăн? тесе хирĕçет Уçăпĕ.

— Кам пĕлет вăл инкек-шар килессине, тет:— те хамăр çылăхлă пирки куратпăр ăна, те ахаљ те тата...

— Хĕрарăм манах вăрă пулнă еппин. Ах, шуйтанĕ! тесе çухăрса йарат҄ çĕнĕ сасă.

— Хуçа аçамне тăхăнса утланса кайнă иккен йĕксĕк.

— Шырарăр-и хăт҄ кайран?

— Ăçтан тупатăн ăна... вăрра? Пĕђђен хĕрарăм пуçпех хăтланман ĕнтĕ вăл. Шайккăра тăнă-тăр, ахăр. Çам пек шутлатăп хам... Çаплах пулĕ тетĕп.

— Хĕрарăмах пулнă-ши вăл манах? Тен, арçын пулман-ши...

— А кам мур пĕлет ăна. Хĕрарăмах пулнă пуљ тетĕп. Сăнĕ хĕрарăмăннах хăй... Çухатрăм лашана çавăн ђух. Пĕтĕм пурнăçа хуçса хăварђĕ вăл. Пĕђĕк ађа пек уласа макăратăп çав. Курăк çинђе сывлăм шывĕ йăлтăртатат҄: те манăн куççуљ йухса тăкăннă вăл сехетре, те сывлăм шывех пулнă? Пă-

хатăп та, куçсем лайăххăн уйăрса илейместĕ... Çавăнтан кайран, ђăнахах та, ĕçме вĕренсе карăм. Тӳрех калап кăна. Унђђен халђхи пек ĕçмен.

— Ара, ырă пирки çын хăй пуçне ĕçкĕ ăшне ђикмест ĕнтĕ.

— Çавăн пек кăтартрĕ мана Ишек турри! тесе каллех ӳпкелешсе илет Макçăм Уçăпĕ.

Кăсене итленĕ вăхăтра Тимуш пĕтĕмпех ашшĕ майлă пулса тăрат̆. Ой, халђђен ăнланса çитерейменнисене те çамрăк ађа вара пĕтĕмпех ăнланса çитерет çав! Ашшĕ турăсем çине мĕн пирки çиленсе пурăннине те пит лайăх пĕлсе тăракан пулат̆. Çавăн пекех, амăшĕ мĕншĕн пĕђђен ђухне анђах тăрăшса кĕл тунине, ашшĕ пур ђух умне пĕр ик-виç хут хĕрес хунипех иртерсе йанине те ним йăнăшмасăрах ђухласа илет.

Ашшĕ урă çӳренĕ тапхăрсем пулаççĕ. Калăпăр: килти, пахђари, уй-хирти, анкартинђи ĕçсене тунă вăхăтра Макçăм Уçăпĕ ĕçмест. Анђах вăл тапхăрсем нумайа пымаççĕ. Ашшĕ сăнĕ ђасах улшăнма тытăнат̆: тем çитмен пирки пит кăмăлсăр вăл, темскер кирлĕ ăна. Çапах та, хăйне кирлĕ йапала çинђен тӳрех пĕлтермест-ха. Малтан ăшра тытса çӳрет. Тимуш амăшĕ йалан мăкăртатнине, йатлаçнине итлесси килмест унăн. Çапла хăш ђухне вăл, пĕрпĕр çĕрте пуçа усса ларса, хăйĕн нађар пурнăçĕ... çемйи пирки шухăша кайат̆. Ывăл ађи ăна пит лайăх вĕренсе çитнĕ. Ларсан-ларсан, ашшĕ акă тăрук ура çине сиксе тăрат̆. Йĕри тавралла темле, сивĕ куççемпе пăхса çаврăнат̆.

— Ĕçес килет! тесе йарат̆ тинех.

Тимуш пĕр йапалана çеç лайăххăн пĕлсе çитереймен.

— Атте нађар пурнăç пирки ĕçме вĕреннĕ... Анђах аннене мĕншĕн хĕнет-ха вăл апла-тăк? тесе ыйтаť ак хăйĕнђен хăй.

Ăна хирĕç тĕрĕс тавăрса калама пултараймасť.

## XXXVI.

Вĕрентекене вулăсран канвуйпала тытса кайнă. «Канвуй» тесен, малтанах, Тимуш вăл сăмаха тăнăшаймасăр, пĕлеймесĕр тăђĕ.

— Мĕнле илсе кайнине калаççĕ-ши апла? тесе ыйтрĕ çамрăкскер хăйĕнђен хăй.

Вара ăна сасартăк, темскер, пуçри вăрттăн çĕрте пытанса тăракан шухăш-тăн вырăнĕсем каласа систернĕ пекех, шашкăсем çакнă, хулпуççисемпе умĕсене темле сарă кантрасем кăкара-кăкара йанă, кăвак йĕмĕсен çĕввисене хĕрлĕ йышши йĕрпеле тыттарнă, картусĕсем çине пысăк кокартăсем çыпăçтарнă усал страшниксем аса килђĕç.

— Путех çавсене калаççĕ пулĕ «канвуй» тесе. Ой, мĕнле илсе карĕç-ши вĕсем вĕрентекене хуланă?.. Лав çине лартса-ши, йе çурранах-ши? Ахăр, шкултан илсе тухнă пекех, хулана кайнă ђух та çул тăрăх хĕççисене тăратсах пыђĕç пулĕ. Çавнашкалах мăшкăлама йураťи-ха çынна? Ну, мĕн тунă вара вĕрентекен? Нимех те туман. Ђăнах та, йулашки вăхăтра, çак кăçалхи çĕнĕ çулранпа, ђас та ђасах ĕнтĕ, йалти пӳртсенђе çынсем хăйçутисем çутаткаласа йарсан, хĕрӳ-пăраç тата кăнђала хушшине лара-лара тухсаççăн, Йекор Павăлђ

шкулта хăй кăмăллана сынсене пухса саккунсем-мĕнсем çинђен, хура халăх пурнăçĕ йепле йăвăрланса килни çинђен, пурнăça лайăхлатас тесе Раççейре хăш-пĕр сынсем йепле хăйсене хĕрхенмесĕр тăрăшса ĕçлени çинђен кала-кала кăтартнă. Çавăншăнах-и? Çавăншăнах, çавăншăнах, тесе пĕђĕк сын пит татăклăн татса пађĕ вара хăйĕн ăшри шухăшĕсем ыйтнине хирĕç.

Унтан, карташ варринђе тăрса унталла-кунталла пăхкаларĕ те, пĕр тĕлте пусмалли патакĕ хуçăлса кайнă кивĕ пусма тăрăх, аслăк çинђи улăм ури çине вăш-ваш хăпарса карĕ. Урам хушшисенђе шывсем тин çеç шарласа йухма ђаръннă вăхăт. Уйра-хирте çурхи шывсем хаљ те шарласах йухаççĕ-ха. Вăрмансенђе тата ђылайа пыраççĕ вĕсем... Хĕвел кăнтăрлахи тӳпене çите пуçланă. Масар çинђи лĕпсĕркке хырсем тĕлĕнђе, тата йал хушшинђи çырмара та темле кăвак пĕлĕт тĕслĕ тĕтре йăсăрланса тăнă пек. Ах, лайăх-çке кун пек ђух, çак çӳлĕ çеç аслăк тăрринђе хĕрĕнсе выртса, пĕтĕм ху тавраринe тĕлĕкри пекех тĕлĕрсе пăхмашкăн. Куçа çапла кантарса выртатăн, выртатăн та, хĕвел ăшши пусса çитернĕрен, çавăнтах акă питĕ тутлă... тутлă ăйăхпа çывăрса кайатăн. Хăш ђухне тата, ху çывăрмастăн та-ха, куççем те пĕтĕмпех хупăнмаççĕ санăн, анђах темле çавăн пек пулса тăрать вăл — вĕçĕ-хĕррисĕр, тем анлăш та тем тарăнăш, çăл куçĕ пекех тăп-тăрă кăвак пĕлĕтелле пăхса выртнă хушăрах, тĕлĕксем курма тапрататăн. Çавăнпа, çав куççем хупăнмасăр тĕлленнĕ вăхăтра, тĕлĕксем те тĕлĕксем пек мар, куçа курăнакан ђăн йапаласем,

ҫӑн калаҫакан, хӑлхисемпе ҫӑнах итлекен, аллисемпе ӗҫлекен, урисемпе ҫӳрекен йе вӗҫекен ҫӗрӗ ҫунсем пекех туйӑнса кайаҫҫӗ. Уй, хӑраса йамаллаҫке ҫавӑн пек ҫух! Улӑм ури ҫинҫе тӗлӗрсе выртасси таҫта иртсе кайаӗ. Куҫ-пуҫсем пӑр шывӗпе пит ҫунӑ хыҫҫӑнхи пек пулаҫҫӗ. Темле ҫӳҫенкелесе илетӗн. Ах, ҫапах та, аван вӑл унашкал ҫурри тӗлӗрсе, ҫурри тӗлӗрмесӗр выртнӑ вӑхӑтра!..

## XXXVII.

Тимуш акӑ иртнӗ ҫулта ҫимӗк ернинҫе курнине астуса илет. Ҫав кун аслӑк ҫине хӑпариҫҫен малтан ӑҫта пулнӑҫҫӗ-ха вӑл? Ах, пӗлет ӑҫта пулнине.—Пит лайӑх астӑваӗ. Ку сыпӑкра акӑ, ҫав хӑй темскер курас умӗн, урамра мӗн курни-илтнисем ҫинҫен ҫырӑпӑр.

Труйски кунӗ,—хӑвӑрах пӗлетӗр,—урамӑн икӗ йенне те, йӑвӑҫ пӑтапала шӑтӑксем шӑтарса та савӑлпала ҫапса тӗреклетсе, тӑршшипех ҫӗр йӑвӑҫсем ларта-ларта тухаҫҫӗ. Вӗренесем, ӑвӑссем, тата тӑррисем шап шурӑ ҫурӑлнӑ ҫӗмӗртсем, пилешсем вӑрмантан ир ирлесех лавӗ-лавӗпе касса килеҫҫӗ.

— Ӗфу, ку халӑхпала! Ара, вӑрмана пӗтӗмпех пӗтерес тет пулӗ ку? тесе, упӑшкине йатлас вырӑнне, Крахйан аппа таҫта урӑх ҫӗрелле пӑхса йатлаҫан пек тӑваӗ вара труйски ирӗ.

— Епӗр мӗн, вӗттисене кӑна касрӑмӑр. Миӗук ывӑлне Кришшана пӑхӑр-ха есӗр: пуслӑха йураллисенех ишӗлтерсе килнӗ. Пуйан тавраш̆ӗ пуйан таврашех: шеллесси мӗнӗ ҫук, пур ҫӗрте те пысӑка та нумайа хапсӑнаӗ, тесе калаӗ Кӗркури пиҫҫи

хăй арăмне хирĕç. Кунлĕ çын. Салтакран таврăннăранпа пĕрмай уссипе çӳрет. Шăм-шакки пит çăмăлскер. Кăмăлĕ çаврăннă ђух, хӳмме урлă кашта тăрăх пуç хĕрлĕ çӳресе кăтартать çынсене. Тимуш унтан пит тĕлĕнет.

— Ах, лаши... лаши ытарма çук-çке вĕсен, тет каллех Крахйан аппа. Хăй, куçран пăртак йăвашрахскер, сылтăм алтупанĕ айĕнђен пăхса, анаталла, пуйан Миťук çурђĕ умнелле тĕллесе кăтартнă пек тăвать.

— Мĕн калас вĕсемпе! тесе сăмах хушать акă Тимуш амăшĕ. Вăл, ыттисем сисмен хушăрах, кил пахђи хыçĕпеле Крахйан аппасен ђăвашла хапхи умне тухать тăрать.

Пурте лаç пусĕнђе выртакан çăка каска çине лараççĕ. Кĕркури пиђђи хăй касса килнĕ йăвăçĕсене лартма пăрахать: пуртти, йăвăç пăти, савăлĕсем, вăрман шăрши саракан çулçăсем кил умĕнђи çерем çинђе пĕр вăхăта хуçисĕрех тăрса йулаççĕ.

— Вĕсемпе хăтланасси пулĕ-ха, тет Кĕркури пиђђи.

Куçсем ак пурин те анаталлах, Тимушсен пӳртĕнђен иртсе, аслă урамран та каçса кайса, çырма хĕрринђе ларакан хăма витнĕ, ђӳређисене кăвакпа сăрланă, карнисĕсене пит капăр ерешлесе пĕтернĕ пĕр пысăк кил патнеллех пăха-пăха илеççĕ.

— Миťук пайан йепле «лаккăвăй» атăсем тăхăннă, тесе пуçланать çăка каска çинђи халап-йумах.

— Пире çăпатапах та йурĕ. Ăçтан пурте пĕр тан пулас-ха... Праçникĕ те пуриншĕн пĕр тан килмест çав, тесе хăйне хăй йăпанать Тимуш амăшĕ.

— Ара, ывăлĕ лашине ма килĕ кӳртмест-ха? Урамра тăвармасăрах тăратать. Ахаль апла çулçăсем лартма авани мĕн?

— Мухтанмашкăн мари! Йепле йалта çук лаша пур пирĕн, темешкĕн. Пуçĕпе шăмарса анҫах тăрать ав, урипе çĕр ҫавса сирпĕтет.

— Çунатсем кăна çыпăçтармалла: таçта урапи мĕнĕпех вĕçсе кайĕҫҫĕ...

Лаç пуçĕнҫи çăка каска çинҫе çаплалла халапласа ларнă иртнĕ çулти труйскире. Халапне тапратса йаракан çав виçĕ çын çумне ытти кӳршĕсем те хутшăннă унта. Ҫи йулашкинҫен Макçăм Уçăпĕ те итлеме пырса тăнă. Килти пиртен çĕленĕ хĕрлĕ кĕпепе. Кăвакартнă йĕмпе. Пилĕкне йавса тунă пиçиххи çыхнă, кĕпи çухине тӳмелемен. Çăварĕнҫе ҫĕлĕм. Уй, сыпмалли çук ҫух, ҫĕлĕмне пушă тăратмасть Тимуш ашшĕ. Çынсем калаçҫăр, тем туҫҫăр хăть— вăл çаплах мăкăрлантарать... мăкăрлантарать... пĕрмай мăкăрлантарать. Катаран пăхса тăрсан пит илемлĕ те темелле.

Анҫах çав çăка каска çинҫи халап йумах çамрăк аҫа ăшне пит йăвăр суран палли туса хăварать. Ҫăнах та, мĕне кирлĕ-ха çын темле «лаккăвăй» атăсемпе çӳрени çинҫен калаçмашкăн? Çыннăн çил çунатлă лашасем пурри? Тимуш ак çăпатапах хăйне хăй пит лайăх шутлать. Атă парсан та тăхăнас çук вăл: вĕренмен, таçта çынтан намăс пулса кайĕ... Ах, вĕсен лаша пĕҫĕккĕ-çке, ҫуманскер, ашшĕ патакпа ватман кун иртмест ăна. Лайăххине туйанма укçа çук вĕсен. Акă çакăнта вара аҫа ăсĕ пуйан Митукпа ыттисем хушшинҫе йепле пысăк

уйрӑм пуррине пурӗ иккӗмӗш, виççӗмӗш хут та ҫухласа, сиссе илет. Ҫӑка каска çинҫе итлесе тӑмашкӑн темле, пушшех асаплӑ пек пулса кайаҫ ӑна. Тарас! Тарас вӑл вырӑнтан.

## XXXVIII.

Тимуш, ҫӑнах та, хӑйсен килӗ патӗнҫен айӑкка ниçта та кайман. Тепӗр кунне, çветтуй сывлӑшӗ çӗре вӗçсе анаҫ тенӗ кун, хаљхин пекех акӑ, аслӑк тӑрринҫи улӑм çине хӑпарса выртнӑ. Ҫапла, хаљхин пекех, куççене кӑн кӑвак тӳпери хӗвел çинелле пӑхтарса алҫӑркаса илтернӗ. Ҫан сасси, пӗрре ывӑнса ҫарӑнсан, аслӑк çине каллех тӗнкӗл-тӗнкӗл тӗнкӗлтеттерсе пырса, хӑлха параппанне йанраттарса кайнӑ. Тимуша çавӑнтах ӑйӑх пусса илнӗ: куç хупанкисем ак хаљ хупӑнаççӗ, ак хаљ уçӑлаççӗ, хаљ хупӑнаççӗ, хаљ çӗнӗрен уçӑлаççӗ... Тӑр çутӑ кунах йепле ӑйӑха парӑнан-ха? Аслӑк тӑрринҫи пӗҫӗк çын ӑйхине çӗнме хӑтланнӑ. Пӗр вӑхӑтра вӑл çӗнсех илнӗ пек пулнӑ. Тӑр кӑвак тӳпенелле куççене пӗр сиктермесӗр пӑхса выртнӑ. Вара, çурри хупӑннӑ, çурри хупӑнман куç хӗррисем айӗпе, акӑ мӗн курӑнса кайнӑ ӑна. Хӗвел патнерех çӳхе-çӳхе, кӑтра çилхеллӗ шур пӗлӗт татӑкӗсем выҫаса çӳреççӗ. Вӗсем хушшинҫен ылтӑн çунатлӑ пӗр илемлӗ кӑвакарҫӑн вӗçсе тухса айалаллах анаҫ. Анаҫ, анаҫ... Улшуç Ентрисен лупасси тӗлне анса çитерехпе, кӑвакарҫӑнран пупсен сарӑ-хӗрлӗ йышши рисне тӑхӑнса йанӑ, хӗрарӑм çӳçлӗ çын кӗлетки пулаҫ тӑраҫ.

Лашт! туса анаҫ вӑл Улшуç Ентрисен аслӑкӗ

çине. Хăйĕнђен вутлă кăвар сирпĕнсе тăнă пек. Темле хуçкаланаť, туллашаť. Такама усал сунса, тем сăмахсем кала-кала, вĕрўç майлах вĕрет пек. Улăм çине выртаť, тăраť... выртаť те тăраť. Тимушăн куççем ђар-р! уçăлса кайаççĕ. Ађа хăраса илет.—Мĕнле-ха? Ђăн-ђăн çын пекех вĕт! Ăçта вăл курăнми пулђĕ? Тăрса пăхас... Аннене ђупса кайса калас... Ах, куçран çухалђĕ мар-и? Çухалђĕ. Çук, курăнмасť урăх...

Ку—хăйне майлă «каљђутсинатси» [1]) пулнă мĕн.

— Çветтуй сывлăшĕ кăвакарђăн пек пулса аннине куртăм епĕ, тесе каласа кăтартнă амăшне.

— Кай, мĕн лĕпĕртетен. Çветтуй сывлăшĕ етеме курнаť-и вăл? тенĕ пĕђĕк ывăлне хирĕç амăшĕ.

Хаљ, çавна астуса илсе, аслăк çинђе выртаканскер тек хăй майлă шухăшлама тытăнаť. Ну, мĕнле вара çавăн ђухах, çав курăннă кунах, лайăхрах шухăшламан-ха ун пирки? Тĕлĕнмелле, тĕлĕнмелле кунтан. Йапаласем хăш ђухне хăйсене хăйсем малтанах пит йар уçă кăтартмаççĕ. Кайран тин вĕсем, темскер аса килтернипе, куç умне пит сасартăк сиксе тăраççĕ те, пуç тăнне хытă çĕмĕрме тапратаççĕ.

— Çветтуй сывлăшĕ пуп пек пулнă! тесе выртаť акă аслăк çинђи Тимуш.

— Хамăр йал пупĕ пекех! тесе калаттараť ăна çавăнтах темле вăрттăн сасă.—Ой, мĕнле йураттăр-ха вăл хамăр йал пупне? Çав ађасем «кађака сухалĕ» текен усал çынна? Вĕрентекен те «тăшман»

1) Каљђутсинатси—хăшпĕр ђирлĕ çынна ахаљ ђухнех тем те пĕр курăнни.

тет вĕт ун çинҫен. Пирĕн пуп вĕрентекене страшниксен аллине тытса панă. Ой-й, мĕнле йураттăр çветтуй сывлăшĕ ăна? Мĕнле йураттăр?..

Çав таса йапала хăйсен йалĕн пупĕ йевĕрлĕ пулса курăннине Тимуш нийепле те ăнланса илеймест.

— Усал сывлăш пулман-ши вăл? тесе çавăнтах хытă иккĕленме пуçлаť. Вара, усал сывлăш тата тепĕр хут пуп пулса курăнассинҫен хăраса, Улшуç Ентрисен аслăкĕ çинелле, вĕсен тĕлĕнҫи кăвак пĕлĕтелле шăтарас пек пăхса илҫĕ.—Çук, халҍ курăнмасť... халҍ ним те çук, тесе хăйне хăй лăплантарҫĕ те, çемçе улăм ури çинҫен тарса кайнă пекех, лупас тӳпи тăрăх шалалла, кил пахҫине тухнă çĕрелле хăвăрттăн утса карĕ.

Пахҫа лапĕн ту вĕçĕнҫе, хăйсен хăмла вырăнĕ патĕнҫе, Санккапа пĕҫĕк шăлнĕ тыр пурки ăшне паранкă ани çинҫен темскер вĕт ҫулсем пуçтарса çӳреççĕ. Санкка хăй шурă тутăрпах, анҫах кĕпи урăх, шкула тăхăнса пыраканни мар. Çу пуçланнă йатпа йăлкăшакан çутă кĕрен кĕпе тăхăннă. Умне шурă саппун çакнă. Санкка çурхи капăр ҫеҫек пекех тумланнă çав! Ай, мĕн тĕрлĕ аван хĕраҫа пулаť кам!.. Тимуша хăйпе пĕрле вĕренекен хĕр тантăшĕ патне ҫупса кайас шухăш пырса кĕҫĕ. Анҫах мĕн тума? Мĕн тума унта çитех ҫупса каймалла-ха?

— Тимуш!... Ăçта есĕ? Картиш шăлмалла.

— Кунта. Анатăп халех! тесе васкаса çухăраť ывăлĕ хăйĕн йуратнă амăшĕн сассине хирĕç.

— Ара, мĕн ĕçлеме хăпарса кайнă ес унта?

— Ахалех...

## XXXIX.

Вĕрентекене йалтан тытса кайнăранпа лăп икĕ уйăх иртрĕ. Икĕ уйăх!.. Аҫасем сисмен те ăна. Хăшне пĕрне акă Йекор Павăлҫа курманни икĕ ерне ҫухлĕ çеç туйăнать.

— Ну, кăшт ытларах тухтăр еппин, тет:—анҫах пур пĕр икĕ уйăх таранах пулас çук.

— Пулать çав, шутла есĕ! теççĕ çавăнтах хирĕçле ушкăнрисем.

— Шутламаççим вара? Халех шутлатпăр... Хăш ҫислара пăрахтарнăҫҫĕ-ха пире вĕрентмешкĕн?

— Вуннăмĕшĕнҫе. Март уйăхĕ...

— Пайан вуниккĕмĕш май.

— Çиҫҫас шутласа кăларатпăр... Апрелре 10-мĕшĕнҫе пĕр уйăх пулать.

— Малалла?

— Ан аташтарăр есĕр. Пайан вуниккĕмĕшĕ...

— А-ха, пирĕнех тĕрĕс пулмари?.. Тимуш тĕрĕс вĕт?

— Тĕрĕс.

Аҫасем хайхи тинех лăпланаççĕ. Çĕнĕ вĕрентекен вĕсен йалне халĕ те килмен-ха. Пысăккисем калакаланă тăрăх, ку çул урăх тăнҫах та вĕрентмеççĕ курăнать.

— Ан вĕрентҫĕрех. Камăн кайас килĕ халҫ шкула? тесе хавасланать хăшĕ пĕри.

Çĕнĕ вĕрентекен килменшĕн Тимуш та хĕпĕртенĕ пек çӳрет. Хайĕн йуратнă çынĕ вырăнне урăх никама та килтересшĕн мар вăл. Ун шухăшĕпе, Йекор

Павăлђ вĕсенђен пур пĕр нумайлăха уйăрăлса кайман. Çак ернере-и, йе тепĕр ернере пур пĕрех вĕсен йалне таврăнассăн туйăннă. Шкул ађисене пусçтарса ђип ђиперех акă, хĕллехи пекех вĕрентме пуçлассине Тимуш пĕр вăхăтра хытах ĕненсе тăнă. Пĕр çак йулашки кунсенђе çеç вара, вĕрентекен çинђен сас-хурасем илтĕнме пĕтĕмпех ђарăнса ларнă майĕпе, хытă ĕненесси те çамрăк пуçра темле ирĕксĕрех кайалла ђакмашкăн тапратнă. Йекор Павăлђ сăнĕ, хуллен-хулленех, таçта пит инçетелле, ађапăђа тени нихçан çитсе курас çук çĕрелле тарса кайнă пек... çĕтнĕ пекех пулса кайаť.

— Кай, шухăшлас мар апла. Вĕрентекене епĕ нихçан та манас çук! тесе, Тимуш акă ђасрах хăйне хăй лăплантарма тăрăшаť. Ытти ађасем çăмхалла выљанă çĕре пырса тăраť.

Пăхăр-ха есĕр ăна хаљ! Хĕлле тантăшĕсемпе хутшăнма питех йуратман, йалан салху çӳрекен, ашшĕ çав тери лайăх Санкка умĕнђе пăртак вăтанкалама та пăхакан ађана çурхи кунсем хаљ пĕтĕмпех улшăнтарса йанă. Тимуш урамран кĕре те пĕлмест. Малтанах вăл, йур тапрансассăнах, алла тимĕр кĕреçе тытса, хăйсен килĕ таврашĕнђе: урамра, пӳрт çумĕнђе, лупас хыçĕнђе, тата карташĕнђе те унтакунтах шыв çулĕсем уçа-уçа пађĕ.

— Уй! Йур айне тем ђухлĕ килсе тулнă çав!.. Пăх-хаљ, анне! Мĕнле йухма пуçларĕ: йухаť... йухаť. Капланса тăраť те, каллех çĕмĕрсе-шăтарса кайаť... Уй! Кĕрлесех йухма тапратрĕ ĕнтĕ, туран пит вăйлă йавăнса анаť,—тесе калама çук хытă хĕпĕртесе ӳкнĕ Тимуш.

Ăна кура амăшĕ те савăнса çеç тăнă.

Ывăлĕ вара, кӳршĕ ađисемпе ăмăртса йамашкăн, хăйне ваđđи хăвăртрах ыđамалли арман туса хатĕрленĕ. Унпала çурхи шыв шарланă ырăна đупса тухнă. Çул çинđи тислĕк, çӳп-çап, турпас татăкĕ, патаксем, тĕрлĕрен вĕтĕ çеç çăмăл йапаласем йепле çырманалла йуха-йуха кайнисене çапла кашни кунах пăха-пăха киленнĕ вăл. Вăхăđĕ-вăхăđĕпе çамрăк пуçа çакăн йевĕрлĕ шухăшсем пыра-пыра кĕнĕ:

— Çурхи шывсем пурте Атăла йухса тухаççĕ, тет,—унтан тинĕселле кĕрлеттереççĕ. Пĕр-пĕр ким çине ларас та çав, ăçта-ăçта çитме пулмасŤ апла!.. Мĕн đухлĕ хула, пристăђ курма пулаŤ... Ман пек вунвиç çула çитнисене çак арманпа аппаланни килĕшмест. Атте калаŤ ăна çапла. Тен, đăнах та килĕшмест пулĕ. Анđах епĕ кăçал йулашки çул капла ыđатăп вĕт. Килес çул пысăкланатăп вара... тепĕр класра вĕренетĕп... Тавай улăм кĕлĕ йухтарма тытăнас, е? Пит аван йухаканđđĕ, тесе хунă йулашкинđен Тимуш.

Пысăк йăвăç кĕреçе илсе тухнă та, улăм кĕлне йухтарма хăтланса, мăкăрлантарнă кăна. Шарласа ыртакан шыв хуп-хура тĕслĕ пулса тăнă. Ытла нумай купана çĕнтерейместĕр, пĕр-пĕр тĕлте đарăна-đарăна йухнă, пĕвеленсе ларма пăхнă, айаккисенелле тапа-тапа сарăлнă. Анđах Тимуш çавăнтах шыва хăй çулне кăтарта-кăтарта йанă. Улăм кĕлĕ—пахđа çĕрне çемçетмелли усăллă йапала. Ăна çурхи шывпа йухтарса пĕтерни пит пысăк çылăх туни пулаŤ. Анđах çамрăк ađа ун çинđен них-

çан та илтмен. Кĕнеке çинђе те вуламан. Илтнĕ йе вуланă пулсан—тӳрех хут пĕлмен амăшне каланă пулĕђђĕ, ăнлантарнă пулĕђђĕ ăна. Шкул ађисем çапла хăш ђух пысăккисене вĕрентме пит йуратаççĕ. Хăйсем тин çеç пĕлнине вĕсене пĕлтересшĕн васкаççĕ. Тимуш улăм кĕлĕ çинђен пĕлеймен çав. Çавăнпа та, хĕл хушшинђе урама нумай çын кăлара-кăлара тăкнăскере, ку çуркунне пĕр пĕђђен пекех йухтарса йани уншăн—ђи пысăк савăнăç пулнă, ђи усăллă вăй выраннех шутланнă.

Вĕрентекен çук ĕнтĕ. Вăл çукки акă ађа ӳсессинђе хытах палăра пуçланă. Халиђђен Тимуш Йекор Павăлђ сăмаххисене итлемешкĕн хăнăхса çитнĕђђĕ, ун хушнисене тем пек хĕпĕртесе тăвађђĕ, ун шухăшĕсене те пĕлсе çитме ĕмĕтленетђĕ. Халђ ĕнтĕ Тимуша вĕрентекен, ăна йертсе пыракан йуратнă çынĕ таçта, пит инçете кайса çухалнă.

Ĕлĕк йалан шухăшлăрах, тăп-тăпрах çӳрекен ађа халђ хăйне валђђи сасартăк урăх çул суйласа илет: тантăшсемпе хытă выљама тапрататĭ; аслăк тăррине пĕђђен мар, иккĕн-виççĕн хăпаратĭ; хăйĕнђе темĕн ђухлĕ вăй пуррине сисекен пулатĭ; çăмхана пуринђен айакка та пуринђен çӳле çапса йаратĭ; кĕрешнĕ ђух хăш-пĕр тантăшне макăртсах та пăрахатĭ; хăй тата пит ђас çиленме пăхатĭ... Амăшĕ сисет ăна. Çапах та, малтанлăха нимех те каламасtĭ-ха.

Ытти ађасем те çавах. Вĕсем те, шкула хупнăранпа, темле ирĕке сиссе йађĕç. Урасана пĕри те йĕркеллĕ тытман. Праçник кунĕсем кĕлле çӳремеççĕ. Пĕрмай урамра çĕмĕрлеççĕ çав. Ывăнни-тунине ку-

расҫӗ хӑй пӗрре. Турра пит ӗненекен ҫынсем, хӗрарӑмсем вӗсем ҫинҫен тӳрех каланӑ:

— Самани урмӑшнине пулӗ ку. Аҫасем ытла ирӗке вӗренсе карӗҫ, тенӗ.

Вӗт халӑх вӑл сӑмахсене илтмӗш пулса иртерсе йарай. Ҫу ҫитсе килнӗшӗн хӗпӗртесе, ҫерем ҫинҫе сике-сике илет. Тата лайӑхрах ҫухӑрашма пуҫлай.

XL.

Вӗрентекен ҫук ӗнтӗ.

Анҫах аҫа сасартӑк улшӑнса кайасси пӗр унтан кӑна килнӗ-ши вара? Тен хӑй ӳссе, пысӑкланса пынӑ майӗпе палӑра пуҫланӑ-тӑр вӑл? Тен ҫак ҫул ӑраснах аван пек туйӑннӑ ытарайми ҫурхи кунсем, ҫырмасенҫе хаҫ те ҫав ҫавах вӑйлӑн йухса выртакан шывсен сассисем, халиҫҫенхинҫен те ытларах асланса кайнӑ пек пулнӑ улӑх-хирсем выҫантарса йаман-ши аҫа кӑмӑлне? Пӗр сӑмахран, Тимуш улшӑннине пӗр амӑшӗ ҫеҫ те мар, ывӑлӗ хыҫҫӑн сайра хутра кӑна пӑхкалакан ашшӗ те сиснӗ ҫав.

— Ҫитӗ урамра ҫупса ҫӳремешкӗн. Кайас пулай сурӑх ҫитерме! тесе каланӑ пӗрре ҫиллӗ сасӑпа. Апла каласа вӑл ывӑлне хытарма шутланӑ мӗн. Анҫах Тимушӗ ҫав сӑмахсене кӑна кӗтнӗ.

— Каймаҫҫим вара, кайатӑп! тенӗ.

Мӗншӗн вӑл тери хӑйулланса ҫитнине ашшӗ ҫапла ним пӗлмесӗрех йулнӑ.

Тимушсен икӗ сурӑх ҫеҫ, иккӗшӗнҫен пӗрин ҫулленех путекки пулай. Ҫавсене вӗсем, ҫитерме вӑхӑтӗнҫе, ҫас-ҫасах кӳршӗ аҫисенҫен пара-пара йанӑ. Ҫавсемшӗнех пӗрмай Тимуша йама пысӑк-

кисем пит хыпаланса ӳкмен. Икĕ сурăхпа пĕр путек вара, хуçи çукскерсем пек, ирĕкре кунĕ-кунĕпе тăлăххăн çӳренĕ. Никам аҫи ырă куçпа пăхакан пулман, никам çăкăр татки ывăтса пăрахман, никам хисеплемен вĕсене. Тимушĕ хăй пынă кунсенҫе те çитерме халăхĕ çав усал йăлана таçтан турта-турта кăларнă-çке: икĕ сурăхпа тăрăхлама тăнă,—пĕрин çине утланса лар та, тепĕрне хыçалтан хăваласа пыр, Тимуш! тесе шӳтсем тăва-тăва илнĕ. Ой, вăл шӳтсем!.. Пĕрисене хĕпĕртеттернĕ пулсассăн та, кама тивеккеннине нимĕн те савăнтарман çав! Ăна пушшех çиллентернĕ.

— Манран... ҫухăн аҫинҫен кулаççĕ, тесе шухăшлаттарнă ирĕксĕрех.

Çавăнпа та аҫа пĕр вăхăтра сурăх çитермине кайасшăн та пулман. Ку хĕл мар, иртнинҫе акă вырăсран икĕ çулхи тына туйаннă. Пысăк хĕрлĕ пуçлăскер. Хĕветлĕ аппа миçе кун хăйне хăй çĕкленсе çӳремерĕши уншăн! Миçе çынпа калаçса хăй савăннине пĕлтермен! Хаљ те пулсан ăна тынапăруран пит лайăх, сĕтлĕ ĕне пулассăн туйăнаť. Хаљ те ара çав-çавах хытă шанса тăраť, хĕрлĕ пуçа пĕтĕм вăй çитнĕ таран пăхаť, çитерет.... Пĕр ывăл аҫи çех выљăх çемйи хутшăннăшăн ытлашши хĕпĕртесе ӳкмен пулас. Сурăхĕсен хисепĕ ĕлĕкхийех йулнă. Çуркунне çитерме кайма пуçласассăн, тин сутăн илнĕ тынана кĕтӳҫҫен уйа йама шутламан пирки, Тимуш карташĕнҫен каллех хăйĕн паллаканĕсене анҫах хулăпа çаптаркаласа кăларнă. Ик сурăха çынсем те илсе кайĕç-ха тесе, хăйне каллех килтисем çитермене пит йарасшăн васкаман.

— Сахал пулсан каймалла мари вара? Мĕншĕнха апла? тесе каланă çамрăкскер.

Ытти килсенђен нумай выљăх сике-сике тухнине асăрханă та, ик сурăхпа кăна çитерме кайни пăртак ђăнах темлерех, ни кулăшла, ни макăрмалла майлăрах туйăнма тапратнă. Пуçри шухăшсем те пăтранма пуçланă.

Анђах çак çул Тимуш ăна-кăна ним те сисмен. Ашшĕ сăмахĕсене илтсен вăл хĕпĕртенĕ кăна. Тепĕр кунне вăрман çумĕнђи çырмари улăха сике-сикех кайнă çав. Икĕ сурăх та пĕр путек ытти ађасенни çумĕнђе ытла сахалли халђ ăна шухăша та килмен. Никам умĕнђе те хĕрелме, хăйне нађар çын ађи вырăнне хума шутламан вăл. Темле, пит сасартăк паттăрланса, ђăрсăрланса çитнĕ пек пулнă.

Уй хапхинђен тухађђенех Санккасемпе пĕрле пĕрлешнĕ. Тĕлĕнмелле! Тимуш халиђђен Санккана питĕ хисепленĕђђĕ, ăна хăйпе тан вĕренекен вырăнне хурађђĕ, ун çумĕнђе сăмахсене йĕркесĕр пере-пере йама хăракалађђĕ... темле, вăтаннă пек тытађђĕ хăйне хăй. Халђ акă пĕре те апла мар. Санккапа, тата ытти хĕр ађапăђасемпе те тӳрех ашкăнма хăтланса пыраť: мĕнле те пулин ураран такăнтарма пăхаť, аллинђи авăнса тăракан çирĕп хулли вĕçне унталла-кунталлах йараť, пылђăк çине çатлаттарса лапра сирпĕтет, тек йĕкĕлтет, тарăхтараť.

— Кай, Тимуш!.. Аван ађађђĕ-çке есĕ. Мĕнле пăсăлса карăн тата?

— Е-хе!

— Мӗн е-хе? Сана калаççӗ вӗт.

— Е-хе! тет каллех Санккана хирӗç.

Хӗрађа унтан çавӑнтах айӑккалла пӑранаҭ. Тимуш лӑпланаҭ вара: тӑна кӗнӗ пек пулаҭ. Анђах ку нумайа пымасҭ. Ашкӑнаканскер каллех тытӑнаҭ хӑйӗнне: ытти хӗрађасене çыпӑçаҭ, вӗсене те хӑйӗнђен тартаҭ, пистерет.

— Ђӑнах, ухмаха йернӗ пулӗ ку пайан. Пӗртте кун пек усал ађа пуласса шухӑшламанђђӗ-çке, тесе калаççӗ лешсем.

Ку вара пушшех савӑнса кайаҭ.

Çырма улӑхне çитсен те çаплах пулнӑ: Тимуш ашкӑнма ђарӑнман. Аптӑранӑ йенне хӗр ађасем ӑна, пурӗ пӗрле тытӑнса, пӗђӗк ђышкисемпе тӑрӑшмаллах кӳпкесе илнӗ çав. Анђах вӑл та пулӑшман: Тимуш çавах иртӗхнӗ, çӗнӗрен çӗнӗ мыскарасем, вӑйсем турта-турта кӑларнӑ, пӗртте ывӑнман. Арçын тантӑшӗсем те, çак кунтан вара, ӑна хӑйсен пуçлӑхӗ туса хунӑ.

## XLI.

Амӑшӗ ђӗри урӑх ђӑтса тӑма пултарайман. Пӗрређђен пӳртре:

— Уçӑп! сисетни есӗ: пирӗн Тимуш усаллана пуçларӗ. Халиђђен хама итлетђӗ хӑҭ. Хаљ итлесшӗн те мар, тесе ӳпкелешекен çемçе сасӑ илтӗннӗ.

Хулӑмрах арçын сасси ӑна хирӗç:

— Ха-ха. Сан йӳратнӑ ывӑлу вӗт! тесе тӑрӑхласа кӑтартнӑ.

— Сан та мар-им?.. Мӗн шӑлна йерсе тӑратӑн. Йе, ађупђу та ху пекех усал пулђӑр тесе хӗпӗр-

тетĕн, тенĕ татах Хĕветле аппи. Каланă та, хăйĕнҫен хăй тĕлĕнсе кайнă. Халиҫҫен вăл хăй аҫи ҫинҫен упăшкине нихăҫан апла-капла ӳпкелешсе кăтартманҫҫĕ. Халҫ темскер калаттарса йанă ҫав ăна. Ҫавăнтах тата вăтантарса та илтернĕ. Шалăпă пама тăнăскер урăх шарламан вара.

Алăк патĕнҫе сӳсмен пăйавĕсем-мĕнсем йусаса тăракан ашшĕ, Хĕветле аппи ҫас лăпланнине курсан, сăмахсене ҫиллĕн пекле сирпĕтсе кăларать:

— Ҫитĕ ку таранҫҫен аҫашланипе. Ыран сӳрс хыççăн ҫуптарас ак, пĕр ывăнса тавăрăнтăр киле, тет.

Ҫынсем пурте ака тума тухнă. Уйра-хирте ĕççынписен сасси çеç çĕмрĕлсе йантрани илтĕнет. Ҫанталăк ни ăшă мар, ни сивĕ те мар. Кăшт ҫил вăркăшать. Хĕвел ирхине лайăххăнах хĕрелсе йалкăшкаласа кăтартать те, кайран кунĕпе те курăнмасть. Вĕçен кайăксем: хура курак, шăнкăрҫ, ҫĕкеççи, ҫанисем ушкăн-ушкăнăн, пĕр ана ҫинҫен теприн ҫине ӳке-ӳке лараççĕ. Вĕсем те, ака тăвакансем пекех, сассисемпе хăшĕ хулăмăн, хăшĕ ҫинҫереххĕн йантратаççĕ. Етемсемпе кайăк таврашĕ пурĕ пĕрле ĕнĕрлешни, йурлани, ҫухăрашни тĕлĕнмелле аванҫке вăл!.. Анатарах ав, Н. шывĕ ҫырми хĕрринҫе, кĕтӳ аҫи Кирук шăхлиҫă калать. Кĕтӳне акана тухнă кунах хăвалана. Ҫуркуннехи ҫитерме вăхăҫĕ пĕтрĕ ĕнтĕ.

— Вон, вон!.. Атте сухалани кунтанах курăнать, тесе утать Тимуш хирти ҫулпала. Сулахай аллинҫе—пĕр кăкшăм шыв, сылтăмминҫе—ҫур ҫĕрес пăри пăтти, ҫурăмĕ хыҫне ҫакса йанă шкул хутаççи ăшне—ҫăкăрпала пысăк ҫĕҫĕ ҫикнĕ.

— Аçуна тăрантарма кайатним, Тимуш?

— Çавăнта.

Ку—Санкка ашшĕ пулђĕ. Урапи çине михсемпе çуртри вăрлăхĕ хунă, çийеле—сӳре, хыçалта тата—сухапуç тыткисем ђĕрĕлтетсе пыраççĕ. Лаши урисене çăмăллăн кăна йара-йара пусаŤ. Тимушсен те çавнашкал харсăр лаша пуласђĕ çав! Хаљ пур вĕсен—шутсăр ђуманскер. Ашшĕ ав хăваланăçем хăвалаŤ ăна: пушăпа çапаŤ те çапаŤ, аллисемпе хăлаçланкаласа хăмсараŤ... Ах, çапах та, пит аван мĕн ака çинђе. Çынсемпе, кайăксемпе пĕрле, çĕр хăй те хăпартланса тăнă пек... хăй те кăшкăрашнă-çухăрашнă пекех туйăнаŤ. Тимуш çавăнпа та хăйсен ђуман лаши çинђен пит ђас манса кайаŤ.

Темшĕн, тем пирки ара, вăл хăйĕн апат-хатĕрĕсемпе ђипер утса пынă çĕртех, пĕр йурă астуса илет:—ака йурри. Анђах ăçта илтнĕ-ха ăна? Хăçан илтнĕ тата? Пĕлтĕр-и, виçĕм çул-и? Ах, пĕлтĕрех пулас çав. Пĕлтĕр Кĕркури пиђђĕшсемпе пĕрле ака тунă. Ака ĕçкинђе йурланă вăл йурра. Акă унăн сăмаххисем те:

Аслă ката варринђе
Ахăрса ака тăваççĕ.
Кĕçĕн ката хĕрĕнђе
Шăхăрса сӳре сӳреççĕ.
Тимĕр к(ă)ваксем акара,
Çӳрен утсем сӳрере.
Ака твакан аттесем—
Пирĕн телей хуçисем.

Çапла, пĕтĕм йĕри таврари пит илемлĕн курăнса выртса, Тимуш пуçне сăвăллă шухăшсем пыртара-

пыртара кĕртнĕ. Анҫах нумайа мар. Хыҫалтан такамсем ҫамрăка ним хисеплемесĕр, усаллăн кăшкăрса пăрахнă.

— Ей, Уҫăп аҫи, пăрăн!.. Мĕн аран-аран утатăн. Пĕҫĕкренех йăлхава вĕренетĕр мурсем. Кай ҫасрах ҫул ҫинҫен, тенĕ.

Пĕр айăпсăр аҫанах вĕсем калама ҫук хытă кӳрентерсе йанă. Тимуш вара сӳремен ана ăшнелле ҫупса кĕрсе пăраннă та, кусене пит лайăх палласа илнĕ: Миҭукпа ывăлĕ, тата вĕсен ертелĕ иртсе кайаҭ иккен,—пур лашисем те пит патмарскерсем, икĕ касăллă пысăк тимĕр ака пуҫĕпе, тимĕр шăллă сӳресемпе.

— Ҫынна мăшкăлакансем!..

Тимуш вĕсене ҫав вăхăтра кашнинех, тăпра мăклашки илсе, ҫамкасенҫен латлаттарма хатĕр пулнă. Ҫав тери мăшкăласа хăварнă лешсем... Йĕри таврари илем ҫавăнтах таҫта кайса кĕнĕ.

## XLII.

Хăйсен ҫул урлă каҫакан ани пуҫне ҫитсе тăраҭ. Ашшĕ тепĕр пуҫнелле ҫĕнĕ ҫеҫ касă йĕрри туса кайнă. Суха тимри тивеймен ҫĕрĕ ăмансем ҫийелте авкаланкаласа выртаҫҫĕ... Хăш тĕле лартмалла-ши пăтă ҫĕрессипе шыв кăкшăмне? Кунтах кĕтмеллеши, йе сухаласа килнине хирĕҫ уттармалла? Ҫапла шухăшласа тăнă хушăрах, апат аҫи акă мĕн курса йараҭ: вĕсен ҫуман лаши каллех ҫăкăмлама тапратнă мĕн, пĕр вырăнта ҫараннă та, малалла пĕр утăм та йарса пусасшăн мар. Кайалла ҫакма хăтланаҭ. Ăна икĕ йенҫен те ҫунтара-ҫунтара ашшĕ пушă

аврине хуçса пăрахнă. Урапа патне ђупса кайса, пĕкĕ илсе пырать. Унпала пуçлать хĕнемешкĕн. Ђуман кĕçре, кайри урисем çине тĕрекленсе, сухапуç туртисем мĕнĕпех çўлелле сиксе ўкме тăрать. Пĕрре малаллах та туртăнса пăхать. Ђип-ђиперех акă утса кайать. Анђах,—ой, тарăхтармĕш те çав! мĕн хушать-ши ăна апла тери кутăнланма!—каллех ўркенсе лартать: утмасть те утмасть урăх.

Ну, мĕнле пырас хаљ атте патне? Тарăхтаракан кĕсри пирки урмаллах урса кайать вăл: ывăлне миçе хут та лекмен-ши ун пек ђухне!.. Тимуш амăшне те сахал мар тивертнĕ. Пĕрре тапраннă çиллине Уçăп вăл вăхăтра ниçта хурса шăнараймасть: ирĕк парсассăн, ђуман кĕсрине анђах та мар, пурне те хĕнесе тăкĕтђĕ çав. Хăйне хăй туллашса тăракан пулать. Пĕтĕм тĕнђе çине тарăхать темелле. Пĕтĕм пурнăçа ылханать... Ђăнах, йепле пырасха унашкал атте патне? Йепле ђас çаврăнса кайĕ унăн кăмăлĕ? Йепле çемçелĕ хытса çитнĕ ђĕри?

Ађа телейне пула, хаљ çинђе ашшĕ ăна нимех те усал тумарĕ.

— Уткала хăвăртрах, ђорт ађи! тесе, хыттăн кăна хăтăрса илђĕ.

Анђах Тимуш вăл сăмахсемшĕн, ыттисене çиленсессĕн те, ашшĕне нихçан çиленме шутламасть. Мĕншĕн тесен, Уçăп хăй ывăлне ађашлама пĕлесси те—çав сăмахсем çеç пулнă... Çамрăк ывăлĕ, хĕр ађа пекех, вăр-вар хыпаланса пăтă ђĕрессине уçса лартрĕ, кашăкпа çĕçĕ, çăкăр кăларса пађĕ. Ашшĕ тăпра çине ђăркуçланса тăрать. Хĕвелтухăç йен-

нелле пăхса, умне шăп пĕр хут хĕрес хурса илет те, çиме тытăнать. Çинĕ хушăра хăй пĕр сăмах та чĕнмест. Ывăлĕ те шарламасть вара. Ашшĕ ăсра мĕн тытнисене куçпа вăрттăн пăха-пăха пĕлесшĕн вăл. Анчах нимех те çĕнĕрен сăнаса пĕлеймест апла: Максăм Уçăпĕ çав-çавах... тем çитмен пирки, темпеле кăмăлсăр çын; такама ытлашши çиленсе пуřăннă пек; такама йунасшăн, тахăшне тавăрасшăнах туйăнать; çав шутпа вăл хăйне вачачи йалан вăрттăн вăй-хăват пухать темелле... Тимуш ашшĕ пек çынсем пурте çапла вăрттăн вăй-хăват илсе пыраççĕ пулмалла. Хăçан та пулсан çав вăй пысăклансах çитмелле. Темшĕн, тем пирки ара, çамрăк ачана çав вăй хăйне хăй хачтерехрех систерсе, кăшт пăртак хăраткаласа та тăнă. Тепре тата çавăнтах хăйуллантарса, хĕпĕртеттерсе йанă ăна. Мĕнле вăй-ку капла? Тимуш ун çинчен лайăххăн пĕлсе илме пултарайман. Ун çинчен сиснĕ çеç вăл...

— Киле каймастăн пайан: сӳре сӳретĕн, тесе хыттăн085 каларĕ çисе тăраннă ашшĕ.

— Йурать, терĕ ывăл ачи.

— Мĕн йурать?.. Йурать парам акă сана пĕрре, тесе хушрĕ каллех Уçăп.

Сӳре сӳремелле пулассине Тимуш малтанах пĕлнĕ. Анчах вăл, унтан та мар, чуман кĕсре лайăх пырас çуккинчен хăраса килтен тухиччен-ех шухăшлама пуçланă. Ку кун тата кĕсре сӳрере калама çук аван пычĕ. Сӳре ачи тем пек хĕпĕртенĕ: хăй ĕçе çыпăçа пуçланăшăн, кăнтăрла иртеспе акă ашшĕ те ăшшăнтарах чĕнкеленĕшĕн пĕтĕм кăмăл тулли савăннă çав. Ку çул Тимуш кил пахчине те

хӑйех сӳренӗ. Урамра ҫупса ҫӳрессине, вӑйӑсене пӗр вӑхӑтра пӗтӗмпех те хӑвармалла пулса ларнӑ.

— Капла луҫҫӑ йӗркене вӗренет, ӗҫлеттерес пулаӗ ҫапла,—тесе, кӑмӑлне тултаранҫи туса, каланӑ тинех йуратнӑ амӑшӗ.

Ҫамрӑк ывӑлӗ те, итлекен аҫа пек пулса, амӑшне савӑнтармалла кулса кӑтартнӑ вара.

## XLIII.

Пӗрре пӳртре нумайӑн халапласа ларҫӗҫ. Крахйан аппапа Кӗркури пиҫҫи иккӗшӗ те пынӑ ҫав. Уҫӑп та ыттисемпе пӗрле хӗпӗртесе, шӳтсем тӑватӑвах пуплерӗ.

— Есир илтни ҫак,—тесе йаҫӗ халапласан-халапласан Крахйан аппи:—Пирӗн йал уҫитли тӗрмерен тарнӑ та, ҫак таврарах ҫӳрет пулаӗ. Ҫӑнах-ши вӑл?

— Ҫӑнах теҫҫӗ ара. Куракансем те пулнӑ. Пӗҫҫен кӑна ҫӳремест, тет. Тепӗр йулташӗпе, тет.

— Ну-у! тесе тӗлӗнсе илҫӗ, Тимуш амӑшӗ.

Кӗркури пиҫҫи татах та пит тӗлӗнмеллисем калакала паҫӗ. Ун сӑмаххипе ҫаплалла тухаӗ: Йекор Павӑлҫ йалта пурӑннӑ ҫухнехинҫен ҫылай улшӑннӑ мӗн, сухалланса кайнӑ, ҫӳҫ-пуҫӗ ахаљ мушикӗнни манерлех, ҫӑваш сӑкманӗпе, ҫӑпатапах... Тимуш ун ҫинҫен шутсӑр та пит тинкерсе итлерӗ. Йуратнӑ вӗрентекен сӑнӗ аҫа умне, манма пуҫланӑ ҫӗртенех, сасартӑк тепӗр хут, ҫӗнӗрен ҫӗрӗлсе тухрӗ. Тепре тата, апла та мар, урӑхла пек туйӑнса карӗ ӑна: вӗрентекене вӑл нихҫан та манас ҫук, манма та шутламан. Ҫак иртнӗ кунсенҫе ахаљ апла манма

пуçланă пек туйăннă пуљ, ахăр... Тĕрĕссипе, Тимуш пĕтĕмпех астăват: Йекор Павăлђ ăна йепле шаннине, хăй ађи вырăнне хурса йуратнине, мĕншĕн страшниксем аллине çакланнине те пĕђĕк пусĕ пĕлнĕ таран тĕсмĕртсе илет.

— Ђăнах, пит те тĕлĕнмелле ĕçсем пула пуçларĕç. Мĕн кирлĕ-ши çав халăха пăтраштарса çӳрекен çынсене?.. Ђортсем майлах пулмалла вĕсем, тесе кулмалларах каласа хуђĕ ак ашшĕ. Йулашки вăхăтра вăл та политтĕккă çинђен шухăшлама тытăнђĕ... Халђ те çав, кăмака çумĕнђе ђĕлĕм тĕтĕмне илемлĕн мăкăрлантарса тăрса, хĕрсех калаçат мĕн.

Тимуш пурин сăмаххи-халапне те сĕтел хушшинђе ларса итлет.

— Пурнăç ытла йăвăр. Самани те çавнашкалахтăр, тесе каларĕ амăшĕ.

— Стутентсем вĕсем мĕн ĕлĕкренпех çапла хăтланаççĕ. Салтакра ђухнех нумай илтсеђђĕ, терĕ çавăнтах Кĕркури пиђђи.

— Ара, пурте стутентсем мар пуљ-çке унта. Пирĕн уђитли ак... терĕ Крахйан аппи.

— Халăх хăй иртĕнсе кайнă. Пурне те патак кирлĕ. Патак!.. Вара тăна кĕрĕç тин,—терĕ Макçăм Уçăпĕ. Анђах, темшĕн, хăй каланине хăй ĕненмен пек, сăмахсене пăртак йăвашраххăн сирпĕнтерсе кăларђĕ. Çавăнпа пурте пĕр харăс тытăнса, ахăлтатса кăна илђĕç унтан.

— Пĕтĕм халăха хĕнемелле тăвас-тăк, хĕнекенĕ кам пулĕ тата?

— Сана, Уçăп, хăвна хĕнес пулат-тăр, ун ђух?

— Хĕнемелле çав, терĕ те, Тимуш ашшĕ ирĕксĕрех ыттисемпе пĕрле кулкалама тапратрĕ.

— Тарса çӳрекенскер апла пирĕн йала та кĕрсе кайнă пуль-ха?

— Ее, учитлĕ-и...

— Ара, çавăн çинчен тапратрăмăр-çке.

— Кам пĕлет ăна. Кĕнĕ те пуль.

— Курасчĕ пĕрре хамăрăн вĕрентекене. Йепле çӳрет-ши вăл.

— Чĕнмесĕр лар çак есĕ, Тимуш!.. Мĕн пĕлен пысăккисем калаçнине, тесе чарса лартрĕ амăшĕ.

— Тух унтан, сĕтел хушшинчен! тесе çавăнтах тата хыттăн кăшкăрса пăрахрĕ ашшĕ.—Тулта сире вальли пит ирĕк ав, терĕ.

— Ан тивĕр ывăлăра. Лартăрах-çке, итлесси килет-тĕк,—тесе Тимуш хутне кĕчĕ Крахйан аппи.

Ача вара ашшĕпе амăшне иккĕшне те çиленнĕ пек пулчĕ. Çиленнипех çав картиш варрине тухса тăчĕ. «Тарăхтармăшсем!» терĕ хăйне сăмах хушма чаракансем çинчен. Чăнах, çамрăксене апла пӳлепӳле лартмашкăн пысăккисен мĕнле ăрасна права пултăр-ха вăл? Тĕрĕс-и тата вĕсем апла хăтланни? Тимуш хăйĕн вĕрентекенĕ пирки мĕнле те пулсан ăшă сăмах... вĕрентекенне тӳрре кăларакан, ăна ирĕксĕрех хисеплеттерекен пĕр-ик сăмах та пулсан хушса хума хатĕрленнĕччĕ. Мĕнех калаччĕ-ши апла вăл? Е?.. Мĕн тупса калама пултартăр çамрăк ача? Ой, çынтанах ыйтмĕччĕ ăна! Хăйĕннех пурччĕ унăн: «Пирĕн вĕрентекен хура халăхшăн тăрăшакан çын». Çапла каласа йарасах тенĕччĕ ĕнтĕ. Çапла каламах та пултарнă вăл. Мĕншĕн тесен,

«хура халăхшăн тăрăшмалла» тенĕ сăмахсене Тимуш вĕрентекенрен хăйĕнђен, хăй ытти çывăх çынĕсемпе калаçнă вăхăтра пĕрре çеç мар, иккĕ те мар, нумай хăлхана ђикнĕ. Анђах пысăккисем ăна-кăна ним те сисмен çав.

Вĕрентекене курасђĕ халђ. Йепле курас-ши ăна? тесе çаплах шухăшлама тытăнђĕ çамрăк ађа.

Çакăн хыççăн вара вăл шухăш ун пуçне кунĕнçĕрĕн çĕмĕрсе тăнă.

## XLIV.

Пасар кунĕ халăх хушшине лайăхрах пăхманни, асăрхаманни, кашнинех куçран тĕлле-тĕлле лартса иртерсе йаманни ниçта та хăварман. Пуçтарса çӳрекенсем тĕл пулсассăн, вĕсене те пит хытă сăнанă. Ђас-ђасах тата йĕтем хыçне туха-туха ларнă. Уй çулĕсемпе таçта çити, пĕр ĕçсĕрех ута-ута кайнă. Кайсан-кайсан, пĕр-пĕр çеремлĕ вырăнта, куçсене пĕлĕт çинелле пăхтарса выртнă. Сывлăшра та çапла Антемскере курма, теме палласа илме хăтланнă. Анђах хăйне кирлине, хăй шыранă çынна Тимуш пур пĕр ниçта та тупайман. Ниçта та курма пулман ăна. Ађа вара килелле пит ывăнса таврăннă.

Пысăккисем халаплани пирки те—хăйне кура мар çав!—ђип-ђиперех иккĕленме тапратнă.

— Ахалђ пĕлмесĕр калаçаççĕ пулђ вĕсем? Вĕрентекен апла вăрттăн çӳремест те-и тен,—тесе шухăшланă хăй шуђĕпе.

Анђах, тем тусассăн та, ик-виç уйăх иртнĕ хыççăн çĕнĕрен илтĕннĕ йата... йуратнă йата... пит хисепре тăраканскере тепĕр хут манăçа хăварма пит йăвăр

мĕн. Пĕртте хамăр асăмăртан айаккалла вĕçертсе йарас килмест ăна.

Тимуш вара çаплалла ыйтнă хăйĕнђен хăй:

— Ђăнах çӳрет пулсассăн, мĕн ĕçпе апла çӳретха тата? тенĕ.—Йекор Павăлђ мĕн пирки хăйне паллаттарасшăн мар? Кам-ши унăн тепĕр йулташĕ?.. И-и, пĕлтĕм хайхи: страшниксем тытасран урăхла тумланнă пулмалла. Çавăнпах. Урăх нимшĕн те мар... Ах, ниушлĕ пĕре те пулмасť ăна курма? Курсассăн пĕр сăмах та уçмĕ-ши мана? Хăйĕн йуратнă вĕренекенне? Е?..—тесе шухăшланă çамрăк ађа.

Вăрçăран аманса таврăннă Хĕветĕр салтака сасартăк астуса илнĕ. Унпа пĕрле вара йалти тата тепĕр пилĕк-улт çын сăнĕсем умма сике-сике тухнă. Çавсем—Йекор Павăлђпа пĕр каварлăскерсем, тет. Тимуш вĕсене хăй те пит лайăх пĕлет. Хĕллехи каçсем—вĕрентекен ђĕнме йарсассăн—ђĕнме кайман-им çавсем патне? Хаљ курас та ыйтас ак пĕринђен те пулсан,—çук, каламĕç ăна.—Пĕђиккĕ хаљ ес, тейĕç. Çавăнпа ку шухăша ирĕксĕрех пăрахмалла пулнă.

Ађа çапла, хăйĕн вĕрентекенĕ çинђен çĕнĕ хыпар илтнĕренпе, пĕртте лăпкă тытайман хăйне хăй: çынсем ăçта калаçма пуçтарăнса тăраççĕ, Тимуш та унта ђупса пыраť. Пĕрмай темскер шыранă вăл, теме-çке ара... пысăккисем те нумайăн пухăна-пухăна çеç ăнланса илме хăтланнине ку пĕр пĕђђенех пĕлсе çитересшĕн пек тухнă. Пĕр пĕђђенех шăршласа çӳренĕ çав...

— Тимуш! Аҭа ыран пулла кайăпăр,—тесе ђĕнĕ кăна пĕрре хăйпе пĕр çулхи арçын ађасем.

— Кайатпăр! тенĕ хĕпĕртесех тантăшĕсене хирĕç.

Тинех хайхи пăртак пусăраннă пек пулнă.

Ађасем вара кунĕ-кунĕпе пулăра иртгернĕ.

## XLV.

«Акитаттăр!»

Халăх хушшинђе акă çакăн пек çĕнĕ сăмах сарăлнă. Мĕне пĕлтерет-ши вăл? Вĕрентекенех каламаççĕ-ши апла? Е?.. Ара, Йекор Павăлђ çинђенех асăнаççĕ вĕт çынсем: акитаттăр пулса çўрет, теççĕ. Ку çĕнĕ сăмах çамрăк ађана пуçран тытса силленĕ пекех силлесе илет: темле, пит хăрушла йапалан туйăнса кайаҭ çав!..Тепре тата, хăрушă та мар, пите ăшшăн-ађашшăн çеç тиверткелесе хăвараҭ. Йуратнă вĕрентекене каллех шутсăр хытă курас килекен пулса тăраҭ. Пулă тытакан ађа унтакунталлах пăхкалаҭ вара:—Ав, сăртсем хушшинђе пытанса лармаççĕ-ши? тет.—Акă çак утар çырминђен сиксе тухмаççĕ-ши?.. Леререх тата вăрмана пĕр паллакан çул кĕрсе кайаҭ. Вĕрентекенсем вăрманта вăл çул çинђе мар-ши хаљ?—Ах, пĕлеймест çав Тимуш: хăй шыранă çынĕсем ăçтине нийепле те пĕлме пултараймасҭ.

Çапах та, темшĕн-çке, вĕсем кунтах-çывăхрах пулассăн туйăннă. Вĕсем инçетре çўреме кирлĕ мар. Йекóр Павăлђ хăйĕн шкулне килсе пăхмасăр йепле тўстĕр-ха!..

## XLVI.

Тимуш кётни, ђăнах та, ахалех пулман мĕн: Йекор Павăлђа курнă-курнах вăл. Анђах мĕнле пулнăха ку? Вăрмана ашшĕпе мĕн тума кайнăђђĕ-ха çавăн ђух? Çăка каснă çĕре-и, йе урăх ĕçпеле? Е-е, тинех астуса илет хайхи: касна вăрманне мар, халăх вăрманне ăвăс касма кайнă пулнă вăл кун. Йăвăç çулçисем пит лайăх сарăлса çитнĕ вăхăт çав. Курăк та калама çук вăйлă ашкăрса ларнă. Ђеђексене тем тĕрлисене те тата-тата шăршланă... Канђ-канђ! канђлаттарса тăнă пуртă сасси. Шатăр-шатăр-ша-а-а-тăр! кайа-кайа ӳкнĕ йаштака ăвăссем. Халăх хĕрсе ĕçленĕ.

Унтан та пулмин:

— Акитаттăрсем килнĕ. Пăрахăр ĕçлеме... Акитаттăрсем сăмах каласшăн. Ей, халăх! Йĕркеллĕ пулăр: ђасрах пуçтарăнăр! тесе пит уççăн кăшкăрса йанă пĕри. Кам пулнă-ши ку кăшкăраканĕ,—йалтисенђенех-ши, йе çав «акитаттăр» текеннисенђен? Кайран пĕлнĕ тăрăх, вăл Н. йалĕнђи хресђен крушокĕнђенех пулнă мĕн.

Халăх хăвăртах пуçтарăнаҭ. Анђах,—ой, тарăхмалла-çке те!—пĕђĕккисене пысăккисем хăйсем патне йахăн та пыртарасшăн мар. Тимуш ыттисене лайăхах астăваймасассăн та, ăна пит аван астăваҭ.

— Вĕт халăх, хĕрарăмсем! Урапасем патĕнђен ан кайăр есĕр.

— Лашасене куçран ан йарăр.

— Ей, сире калаççĕ!.. Ăçта ђупаттăр пирĕн хыçран? тесе кăшкăра-кăшкăра пăрахнă пысăккисем.

— Ак тата... мĕн пуххи апла? текелесе, ашшĕ те çырма хĕрнелле уттара панă.

Тимуш ăна пит аван астăват.

— Вĕрентекене мĕнле курасҫĕ, мĕнле курасҫĕ ăна! тесе çухăрса йанă вăл хăй тĕллĕнех

Туратлă çамрăк ăвăс çине йăпăр-йапăр хăпарса кайнă та, унтан тек халăх ăшнелле пăхма тапратнă. Хура виҫкĕн куçĕсем вара ҫасах палласа илнĕ: вĕрентекенех ку, вĕрентекенех!.. Çырма тайлăмĕнҫе ӳсекен хурама çумĕнҫе тĕршĕнсе тăрат. Ой, мĕнле улшăнса кайнă мĕн Йекор Павăлҫ! Тумĕнҫен пăхсан палламалла та мар çав. Çăпатапах. Тăла пиншакпала. Пуçĕнҫе кивĕ картус. Ҫăнах, мĕнле-ха вăл апла çӳрет?! Ăçта-ши тепĕр йулташĕ тата? Иккĕн теççĕ вĕт вĕсене... Ав, сылтăмарах тăраканĕ пулас... Вĕрентекен халăха темскер çинҫен калат: сасси пĕртте улшăнман, ĕлĕкхийех, уçă та кăмăллăскер, пăртак хытăрах та хĕрӳллĕрех илтĕнсе килет. Анҫах мĕн калат-ха вăл? Пурнăç çинҫен... И-и, нумай та тăмасть, халăх шавлама пуçлат. Сăмахсем çиллĕн туха-туха кайса сирпĕнеççĕ. Ăвăс çинҫе ларакан аҫа çавăнтах хăрана йерет. Ҫĕтреме тытăнат. Ҫасах сиксе анат çĕр çине.

— Кантуртисене сирпĕтмелле, тесе кăшкăрат тахăш пĕри.

— Стăршинана тытса ĕнселес пулат, тесе йарса илет çавăнтах тепри.

— Пуçлăхсем çын вырăнне хуми пулҫĕç пире.

— Тĕрĕс!..

— Куланайсем тӳсмелле мар хураççĕ.

— А, çав... хосутарствĕннăй тумăра мĕн турĕçха унта, е?

— Хура халăх ыйтнисене ним те туман, тесе ăнлантарать хайхи вĕрентекенĕн йулташĕ.

Çиллĕ те хайар сăмахсем çапла ђылайђђен йантратса тăнă. Вăрмантан шăнкăртатса анакан пĕђĕк шыв тăрăх таçта çитех пит уççăн илтĕне-илтĕне кайнă. Пĕр-пĕр усал шухăшлă çын, пĕр-пĕр вăрттăн итлесе çӳрекенĕ айăкранах пит лайăх итлеме пултарнă. Анђах халăх ăна-кăна шутламан. Вăл çав çавах такамсене хайар суннă, такамсене вăрçнă... Акитаттăрсем тата пушшех çунатлантарса йанă пек пулнă...

Тимуш хăрама пăрахнă.

Халăх хушшинђе ӳссе пысăкланакан вăй çамрăк ађана та хăй майлă çавăрса илнĕ. Çамрăк ађа сасартăк темскере, çĕнĕ йапалана кĕтме тытăннă. Мĕн пулать-ха вăл çĕнĕскер? Ах, тем пулсассăн та, вăл — пит лайăх йапала пулĕ. Ăна ав пĕтĕм хура халăх кĕтет...

## XLVII.

Ăвăс каснă çĕртен улăха çил пек тарса тухнă. Лаша пăхасси мĕнĕ таçта кайса кĕнĕ унта. Ой, лаша çинђен шутланă-и вара!.. Тимуш хăй теплерĕн тăрса йулнă çав. Йурать — урисем пĕре те такăнман, ахаљ тен çакланнă та пулĕђђĕ.

— Мĕн пулнă апла, Тимуш?.. Мĕн пăшал сассисем илтĕнђĕç? тесе ыйтнă улăх хĕрринђе пăру çитерекен Санкка.

— Халăха страшниксем хупăрласа илнĕ. Пит ну-

майăн çав, тесе хашка-хашка каласа кăтартнă Тимуш. Хăй, хăранипе, пит хытă сиксе ҫĕтренĕ. Ун майăн вара Санккапала тепĕр хĕр аҫа та вилес пек хăраса йанă.

— Вĕрентекене куртăм, тесе пĕлтернĕ хашкама ҫарăнмасăрах.

— Ҫăнах-и? тесе ыйтнă хĕр аҫасем иккĕш те харăс.

— Ҫăнах çав!..

— Ах, Тимуш, пăх-хаҫ: çулпала ав темле ушкăн пырать, тесе çухăрса йанă çавăнтах Санкка.

— Страшниксем!.. Çынсене тытса кайаççĕ. Каллех вĕрентекене тытман-ши? Епĕ çырма пуçĕпе тухса пăхам-ха.

— Вилмешкĕн-и? Кай, ан ухмахлан.

— Вĕсем патнех пымастăп епĕ, тенĕ те, Тимуш каллех тем шухăшпа малаллах ҫуптарнă. Ҫупсан, ҫупсан, пĕҫĕк вар хушшинҫе тата тепĕр икĕ аҫана хăваласа çитнĕ. Вĕсемпе вара хăйуллăрах ҫупса кайнă. Страшниксенҫен ытлах хăрама пăрахнă.

Страшниксем патне тухасси çур çухрăм ҫухлĕ йулсассăн, аҫасем тăп ҫарăнса тăнă: тытса кайаканĕсем хушшинҫе акитаттăрсене иккĕшне те курса йанă вĕсем.

— Палласа илтĕр-и вĕрентекене? Варринҫерех пырать ав, тесе куçпа тĕлле-тĕлле кăтартнă Тимуш.

— Куртăмăр. Çавах пулмалла, тесе каланă ытти икĕ аҫа.

— Санккасене кайса пĕлтерес, тенĕ ку хăй ăшĕнҫе.

Çавăнтах тата ăвăслăха, ашшĕ патне кайалла каймалли çинҫен астуса илнĕ.

— Ей, аттесемĕр, манăн ăвăслăха таварăнмалла! тенĕ те, кайалла такăна-такăнах вĕçтернĕ.

Вар пуçнелле пĕр виç-тăват çын кĕреççĕ. Иккĕшĕ—пуртăсем хĕстернĕ, пĕри—хулпуççи çине пăҫкă хунă, тепри—уксак салтак... шутник Хĕветĕр. Кусем Тимуша курман пекех иртсе кайаççĕ. Хĕветĕрĕ аллисене ҫăмăртасах пырать. Страшниксене тем те пĕр каласа вăрçать çав.

Ăна кура, Тимуша акă страшниксем пĕрре хăрушă пек, тепре тата хăрушă та мар пек туйăнаççĕ... Санккасем урăх вырăна куçса ларнă. Вĕсем патне çитмесĕрех, Тимуш ҫеҫексем нумай çĕре ҫăсăлса выртать те, кăвак пĕлĕтелле пăхма тапратать.

— Килте пĕр аннене каласа парап ĕнтĕ, тесе малтанах шутласа хурать.—Ҫăнах хăрамалла-и çав страшниксенҫен йе хăрама та кирлĕ мар? тесе тек пĕҫĕк пуçне çĕмĕрет.

Шутсăр ывăнса çитнипе, хăй те сисмест, ăйăхлать-кайать. Тĕлĕк курать. Салтакран аманса килнĕ Хĕветĕр страшниксемпе пĕҫҫенех пит хытă çапăçать пек... Халăх Хĕветĕр майлă çав...

## ÇАМРĂК ВУЛАКАНСЕМ!

Сире çак кĕнекере мĕн килĕшет, мĕн килĕшмест? Мĕн ытлашши пек, мĕн çинҫен хушмалла пек? Кĕнеке ҫĕлхи йепле тата? Хăвăр шухăшăрсене Ҫăваш Кĕнеки Уйрăмне йе авттăра çырса пĕлтерĕр.

Ҫăваш Кĕнеки Уйрăмĕн атрĕсĕ: Чебоксары, Чувашгиз.

Авттăрăн: ул. Герцена, д. № 27/а, С. Ф. Фомину.

Хакĕ 30 пус
Цена 30 коп.

С. Фомин. ДЕТСТВО.

Чувашское государственное издательство
Чебоксары ★ 1931